81.0
С32
Ч-41330

В.И. Сергеев

# ПĔТĔМĔШЛЕ ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔ



*Вĕренӳ пособийĕ*

Шупашкар 2007

Национальная библиотека ЧР

4-041330

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т 3 3835 Т 5000 1989г

Обязат' экз.
К 81 0
32

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ВĔРЕНТӲ
ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ

**В.И. СЕРГЕЕВ**

# ПĔТĔМĔШЛЕ ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔ

Вĕренӳ пособийĕ

Шупашкар
2007

Обязательный

ББК 81
С 322

*Рецензенты:*
д-р филол. наук, профессор Г.Е. Корнилов
канд. филол. наук, доцент А.Е. Горшков

Сергеев В.И.
С 322 Общее языкознание : учеб. пособие. – Чебоксары: Изд-во Чуваш ун-та, 2007. – 150 с.

ISBN 5-7677-1013-9

Написано в соответствии с программой курса общее языкознание.

Рассмотрены возникновение и развитие языка, внутренняя структура, уровни и подуровни языка.

Для студентов факультета чувашской филологии и культуры.

Отв. редактор: д-р филол. наук, профессор
Л.П.Сергеев

Утверждено Редакционно-издательским советом университета в качестве учебного пособия

ПРОВЕРЕНО
20/02 0 МАР 2017

Ч.-41330
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ISBN 5-7677-1013-9
ББК 81
© Сергеев В.И., 2007

# КӲРТЕМ

Лингвистикăра чĕлхе аталанăвне виçĕ тапхăра пайласа тĕпчеççĕ: 1) авалхи тапхăр; 2) вăта тапхăр; 3) çĕнĕ (е хальхи тапхăр).

Ку вĕренӳ пособийĕн пĕрремĕш пайĕнче, «Чĕлхе аталанăвĕн тапхăрĕсем тата пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ» ятлăскерĕнче, «Чĕлхе пулса кайнă пирки» каланă гипотезăсене пăхса тухнă. Апла пулсан ку чĕлхе аталанăвĕн авалхи тапхăрĕ. Нацисем пулса кайичченхи чĕлхесем е авалхи община стройĕ вăхăтĕнчи чĕлхесен аталанăвĕ те ку тапхăра кĕрет. Вăта тапхăра вара нацисем йĕркеленнĕ вăхăтри чĕлхесен аталанăвне кĕртме лекет. Çĕнĕ тапхăра ренессанс (çĕнетӳ) тапхăрĕпе çыхăнтаратпăр, вăл тапхăр паянччченех тăсăлать темелле.

Кĕнекен иккĕмĕш пайĕнче чĕлхе системине тата структурине пăхса тухнă. Система тени элементсен (е пайсен) пĕрлĕхĕ пулнине çутатса çырса кăтартнă, чĕлхе структурин теорийĕсем пирки сăмах хускатнă.

Ку ĕçĕн виççĕмĕш пайĕнче чĕлхен тĕп шайĕсене (ярусĕсене) тĕплĕн çутатса кăтартнă. Чĕлхе наукинче паян кунччен те чĕлхе шайĕсене пĕр виçеллĕ пăхни çук: сăмах пулăвĕ (дериватологи) тата фразеологии ку таранччченех çум е хушма шайсем шутланаççĕ. Пирĕн шутпа, вĕсене тĕп шайсем тесе пăхма пур май та пур.

«Чĕлхе тата чĕлхе пĕлĕвĕн аталанăвĕ» тени питĕ анлă тема. Ку ыйтăва тĕрлĕ енлĕн тишкерме пулать Ку таранччен «Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ» текен дисциплинăпа чăвашла çырнă ĕçсем пулманнине шута илсен, хальлĕхе ăна 5-6 курссенчи студентсем валли çырнă вĕренӳ кĕнеки тесе шутламалла.

# I пай. ЧӖЛХЕ АТАЛАНĂВӖН ТАПХĂРӖСЕМ ТАТА ПӖТӖМӖШЛЕ ЧӖЛХЕ ПӖЛӖВӖ

## 1§. Чӗлхе пулса кайни

***Чӗлхе пулса кайни çинчен калакан гипотезăсем.*** Чӗлхе пулса кайни философи проблеми пулин те, вăл конкретлă филологи наукипе тачă çыхăннă ыйтусем шутне те кӗрет. Çак ыйтăва тӗпченин историйӗнче ăна шăп та лăп конкретлă наукăсем татса пама пултарасса ӗненнӗ тапхăрсем те пулнă. Ку вăл ытларах XIX-XX ӗмӗрсемшӗн характерлă. Çак вăхăтра чӗлхе пӗлӗвӗнче малтанах танлаштаруллă-историллӗ тӗпчевсем вăй илсе пынă. Анчах та вăхăт иртнӗçемӗн ку ыйтăва философи никӗсӗсӗр тӗпчеме май çукки палăрнă. Çакăн пек чухне тӗпчев орбитине «этем пулса кайни», «чӗлхепе шухăшлав хушшинчи çыхăну», «чӗлхен социаллă пӗлтерӗшӗ» проблемăсем кӗреççӗ. Вӗсене вара философилле шухăшлава тӗпе хумасăр татса пама май çук.

Литературăра чӗлхе пулса кайни пирки темиçе тӗрлӗ гипотеза пуррине палăртмалла. Ытларах чухне евӗрлев е междомети теорине, пӗрлехи килӗшӳ е чӗлхене Турă йӗркелеме пултарнă текен теорисене асăнаççӗ. Англипе Америка ăслăхçисем bow-wow, ding-dong (евӗрлев), pooh-pooh, yo-he-ho (междомети), хăлаçлану теорийӗсене мала хураççӗ.

Чӗлхе мӗнле пулса кайни тӗрлӗ вăхăтри нумай шухăшлавçа кăсăклантарнă. Çак ыйтăва тӗрлӗ майлă лартнă, тӗрлӗ майлă тишкернӗ, хăшӗ-пӗрисем чӗлхе пулса кайнине мифсемпе çыхăнтарнă. Нумай теори тата гипотеза палăрса вăй илнӗ: сасă евӗрлевӗн теорийӗ (стоиксем, Лейбниц), эмоциллӗ кăшкăру теорийӗ (Ж-Ж.Руссо, Д.Н. Кудрявский), философиллӗ шыравсен авалхи идейисем тата çӗнӗ вăхăтри философсен шухăшӗсем (Т.Гоббс, Д.Локк т.ыт.те), ӗçленӗ вăхăтри кăшкăрусен теорийӗ (Л.Нуаре), Э.Кондильяк теорийӗ, чӗлхе çын ӗçленӗ май пулса кайнă текен теори (Л.Гейгер).

***Мифсенчен илнĕ шухăшсем.*** Чĕлхе пулса кайнине мифологи шайĕнче пăхасси мифри сăнарсемпе мифла шухăшлав çинче никĕсленет. Апла пулсан авалхи философсем чĕлхе пулса кайнине тишкерес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тунине ăнкарас тесен, унччен палăртнă пулăмсене вĕсем мĕнлерех куçпа пăхнине шута илмелле.

Антропогониллĕ мифсенче чылай чухне чĕлхе мĕнле пулса кайнине ятарласа палăртман, мĕншĕн тесен çын утма тата сывлама пултарнă пекех калаçма та авалтанпах пĕлет тесе шутланă. Мифсенче палăрнă шухăшсем тăрăх калаçма пултарассине çыннăн физиологийĕпе çыхăнтарнă: унăн ури пур – вăл утать, чĕлхи пур – вăл калаçать. Çапла вара, пуплев этемĕн çутçанталăк палли пулса тăнине палăртнă.

***Чĕлхе пулса кайни çинчен авалхи философсем калани.*** Сĕм авалтан пуçласа паянхи кунччен чĕлхе пулăвĕ пирки икĕ çирĕп шухăш палăрать: чĕлхене Турă тунă текен идея тата чĕлхен шалти формине этимологизацилемелле тени (Демокрит, Гераклит).

Библие ĕненес пулсан, Турă мĕн авалтанах калаçма пултарнă. Çут тĕнчене йĕркеленĕ чух та калаçни ĕçе пурнăçланипе пĕрле пулса пынă. Вара Вăл çынсене те чĕлхе парнеленĕ. Турра ĕненнĕ авалхи философсен шучĕпе, çĕр çинчи мĕнпур чĕлхе Турă парнеленĕ еврей чĕлхинчен пулса кайнă (Этьен Гишар).

Этимологизацилени – сăмахăн шалти формине шырани – хăш-пĕр авалхи философсене кăсăклантарнă. Тĕслĕхрен, Демокрит каланă тăрăх, хĕрарăм – вăрлăх çуратакан, «çурални», «çуратни» тенипе çыхăннă.

Кун пек тĕслĕхсенче объектпа сăмах хушшинче пĕлтерĕшлĕ çыхăну пур тесе палăртма йышăннă. Çакăн пек ăнланни тишкерӳçĕсене сăмах мĕнле пулса кайнине шырама хистет. Платон каланă тăрăх, сăмахăн гулаш форми те, шалаш форми те ăнлантаракан япалан (объектăн, пулăмăн) пĕлтерĕшне уçса пама пултарать. Нумай ят сăмах хăй пĕлтерекен япалин пĕлтерĕшĕпе тĕл килменнине кăтартса вăл пуçламăш сăмахпа унран пулнă сăмах хушшинче уйрăмлăх пуррине палăртать. Пĕрремĕшле сăмахсемпе япалисем хушшинче тӳрĕ

çыхăну пур, иккĕмĕшлисем вара хăйсем пĕлтерекен япалипе килĕшсе тăмаççĕ. Платон пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсем пуррине палăртни тухăçлă шухăш пулнă. Иккĕмĕшле сăмахсен пулăвне тата пĕлтерĕшне ытти философсем те тишкернĕ (Зенон, Хрисипп, Клеанф, Августин т.ыт.те). Çапла майпа пĕтĕмĕшле ыйту сиксе тухать: авалхи философсен шухăшĕпе чĕлхе мĕнле пулса кайнă-ха? Кашни япала е хăйне хăй пулса кайнă-ши, е ăна кам та пулин тунă? Чĕлхе те çавăн пекех: е вăл хăйне май йĕркеленнĕ, е ăна тăнлă вăй искусствăлла майпа йĕркеленĕ? Пĕлтерĕше тата шухăша тĕпе хуракан нихăш философ та чĕлхе хăйне хăй пулса кайнă тенипе килĕшмест, мĕншĕн тесен калаçма пултарни – тĕлĕнмелле кăткăс пулăм иккенне авалхи кашни шухăшлавçă ăнланнă. Апла пулин те сĕм авал чĕлхе мĕнле пулса кайнине икĕ тĕрлĕ ăнлантарнă:

1) «палăртса хунипе» («по-установлению»);
2) «çутçанталăк еккипе» («по-природе»).

Авалхи философсем, пĕтĕмĕшле илсен, ку ыйтăва тĕрлĕрен хуравланă. Енчен те философ чĕлхе «палăртса хунипе» пулса кайнă тенĕ пулсан, унăн «кам палăртса хунă» текен ыйтăва хуравламалла пулнă. Кунта вара çакăн пек хуравсем пулма пултарнă:

1) Турă (е Турăсем);
2) ăслă çын (чĕлхе – кăткăс «пурлăх» иккенне асра тытатпăр);
3) çынсен коллективĕ (общество).

Çак хуравсене пĕтĕçтерни те тĕл пулать: чĕлхене уйрăм çынпа коллектив тата Турă вăй панă ăслă çын йĕркелесе янă. Енчен те философ чĕлхе «çутçанталăк еккипе» пулса кайнă тенĕ пулсан, унăн гипотези кашни сăмахпа е уйрăм япалан палли, е уйрăм çыннăн палли, е вăл та, ку та пĕрле килĕшсе тăнине çирĕплетмелле пулнă.

Чĕлхе Турă панипе е асамлă майпа пулса кайнă текен шухăшсем XIX ĕмĕрччен вăйра шутланнă.

Чĕлхе пулса кайнине тишкернĕ Платонпа И.Гердер пек паллă шухăшлавçăсем те юлашкинчен ăна Турă туса янă тенипе килĕшнĕ. Çак шухăшах нимĕç фило-

софе Г.Э. Лессинг, Франци философе тата публицисчĕ Г.Бональд, Эдинбург университечĕн профессорĕ Блер, нимĕç философĕ Дитрих Тидеманн малалла тăсаççĕ.

Чĕлхе епле пулса кайни – хальхи чĕлхе пĕлĕвĕшĕн те тавлашуллă ыйту, çавăнпа та ăна пур енлĕн тишкермелле, нихăш гипотезăна та, идейăна та шута илмесĕр хăвармалла мар.

Халĕ вара Кондильяк философ шухăшĕсемпе паллашар-ха.

***Кондильяк теорийĕ.*** Этьен Бонно де Кондильяк – XVIII ĕмĕрти франци философĕ. Çак тĕпчевçĕ калана тăрăх, малтан пит-куçпа ал-ура хусканăвĕсен чĕлхи пулнă: вăл малалла аталаннă май майĕпен кăшкăру чĕлхи çуралса вăй илнĕ. Ку вара пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех аталанса, çирĕпленсе пынăçемĕн пит-куçпа ал-ура хусканăвĕсен чĕлхине пăрахăçа кăларнă.

Кондильяк паллăсем виçĕ тĕслĕ пулаççĕ тесе çирĕплетет:

1. Ăнсăртран пулнă паллăсем (е япаласем). Вĕсем уйрăм пулăмсене вăл е ку шухăшсемпе ăнсăртран çыхăнтараççĕ.

2. Çутçанталăкри паллăсем (е кăшкăрусем). Çынсем вĕсемпе савăнăça, ыратăва, хăранине палăртма усă курнă.

3. Инстинкт паллисем (йышăннă паллăсем). Вĕсене çынсем хăйсен шухăшĕсене палăртма суйласа илнĕ.

Каярахпа Кондильяк пĕрремĕшпе иккĕмĕш паллăсем чĕлхе никĕсне йĕркелеме пултарайманнине палăртнă. Анчах та инстинкт паллисем те ним çук çĕртен пулма пултарайман-çке. Çак чăрмава çĕнтерес тесе Кондильяк пит-куçпа ал-ура хусканăвĕсен чĕлхери вырăнĕ пирки сăмах хускатать те ĕнтĕ.

Чи малтанах çакна асăрхамалла: чĕлхе пулса кайни пирки калакан теорин сасăсен малтанхи уйрăмлăхне е вĕсен çăлкуçне çеç палăртмалла мар, ытти ыйтусене те татса памалла. Тĕслĕхрен, сасăпа хăлаçлану хушшинчи çыхăну, ансат пуплевĕн пĕлтерĕшĕ, чĕлхе пулса кайнин тапхăрĕсем т.ыт.те. Иккĕмĕшĕнчен, ку теорисем этем

каласма пултарнине пачах та шута илмессĕ. Чĕр-чунсем те шыв шăмпăртатнине, ӳкекен чулсен сассине, кайăксен юррине илтессĕ, вĕсем те кăмăл-туйăмĕсене сасăпа палăртассĕ, çапах та хăйсем çын пек калаçаймассĕ. Чĕлхе тем тесен те ăнпа çыхăннă. К.Лоренц шăпах çакна палăртать: «... сирĕн йытă хăвăр енне пăха-пăха илнĕ май, пĕр вăхăтрах сире сăмсипе тĕрĕнни, нăйкăшни, алăк патĕнче кускалани е шыв кранĕ патĕнче ура лаппипе кăтăртаттарни, чанасемпе кайăк хурсен «калаçăвĕпе» танлаштарсан, этем калаçăвне тем тери çывăхрах». Тата этем сĕм авалах калаçма пултарнине XVIII ĕмĕртех тĕпчесе пĕлнĕ вĕт!

Виççĕмĕшĕнчен, bow-wow е pooh-poh теорисем – пĕрремĕш сăмахсем пуçланса кайнин тупсăмĕсем кăна. Yo-he-ho теори вара тĕрлĕ фактсене пĕрле çыхăнтарать, философи ăнлавĕ çинче никĕсленет.

Тăваттăмĕшĕнчен, кашни гипотеза хăш-пĕр самантсене çеç палăртать пулин те наукăра паха гипотеза пек курăнма тăрăшать. XX ĕмĕрти Г.Шухардт, Дж.Холдейн, Н.А. Морозов, Н.Я. Марр, Б.Н. Головин çырнă тăрăх, чĕлхе кайăксенни пек юрăгу йыхравĕнчен пулса кайнă, этем ĕç хатĕрĕсемпе усă курнă чухне тухакан сасăсене евĕрленипе тата ытти сăлтавсене пула калаçма пуçланă. Çак шухăшсенчен кашниех тĕрĕс пулма пултарать, анчах та теори тĕлĕшĕнчен ăшăх пулнăран вĕсене ĕненме йывăр. Пĕр-икĕ сăмах чĕлхе хăлаçлануран пулса кайнă текен теори пирки. Пĕр енчен, чĕлхе, чăн та, ал-ура хусканăвĕнчен пуçланса кайнă, анчах та, тепĕр енчен, калаçасси алла вылятнинчен тухса кайнă пулсан тĕпчевçĕн глоттогенез ыйтăвĕсене ал хусканăвĕсен ыйтăвĕсемпе çыхăнтармалла. Эппин кунта алла вылятасси ăçтан пуçланса кайнине, мĕнле майпа вăл хăйĕн пĕлтерĕшне туяннине, ал хусканăвĕсен чĕлхин синтаксисне ăнлантарса памалла. Çакна тусассăн сасăллă чĕлхе пуçланса кайни пирки калакан ыйтусем сасă ал хусканăвĕн вырăнне йышăннă текен теори проблемисем пулса каяççĕ. Кĕскен каласан, хăлаçлану чĕлхен никĕсĕ пулать тени чĕлхе мĕнле пуçланса кайнине ăнлантараймасть. Вăл чĕлхе аталанăвĕ икĕ тапхăртан тăма пул-

тарнине çеç кăтартать, çапах та сасăллă чĕлхе теорийĕн нихăш ыйтăвне те сирсе ывăтмасть.

Глоттогенез ыйтăвĕсене хуравламашкăн тĕрлĕ тĕпчевсем мĕнле майпа пулăшма пултарассине пĕлес тесен «пирĕн чĕлхе епле пуçланса кайнă?» текен ыйтăва лайăх ăнланса илмелле. Чĕлхе мĕнле пуçланса кайнине тĕпчекен тишкерӳллĕ истори çак ыйтăва виçĕ енчен тĕпчеме хистет:

1) чĕлхе мĕнле пуçланса каять, урăхла каласан, мĕнле майпа вăл çынсене пĕр-пĕринпе ăнланса хутшăнма май паракан хăш-пĕр паллăсен системи пулса тăрать;

2) мĕнле майпа этем калаçма пуçлать, урăхла каласан, мĕнле майпа «Homo sapiens» текен этемĕн калаçма вĕренме май тупăнать;

3) мĕнле майпа авалхи çынсен ушкăнĕнче хутшăну мелĕсемпе меслечĕсене аталантарма хистекен çыхăнуллă ĕçсем йĕркеленеççĕ.

Ыйтусене уйрăммăн илсе хуравлама çук. Анчах та кашни тишкерĕвĕ хăйне валли уйрăм мел ыйтать. Чĕлхе системăллă аталаннине чĕлхеçĕсен тĕпчемелле, чĕлхен пултарулăхне психологсем, психолингвистсем, антропологсем тĕпчеççĕ, çынсен хутшăнăвĕсене тĕпчессине вара этнологсемпе археологсем хăйсем çине илеççĕ. Çапла майпа тишкермелли виçĕ япала тупăнать, вĕсенчен пĕрне кăна шута илнипе чĕлхе мĕнле пуçланса кайнине ниепле те татса пама май çук. Апла пулсассăн çак виçĕ ыйтăвăн çыхăнăвне сăнасси те хăйне май философилле тишкерӳ пулать.

Маларах пăхса тухнă виçĕ ыйтăва пĕрле çыхăнтаракан теори çеç чĕлхе мĕнле пулса кайни пирки калакан чăн-чăн теори пулма пултарать. Çак çыхăнăва вара ĕç теорийĕ кăна кăтартма пултарать тесенсем те пур.

***Ĕç теорийĕ – чĕлхе çын ĕçленипе пулса кайнă тесе вĕрентекен теори.*** Чĕлхе пуçланса кайни этем ĕçленипе çыхăннă текен теори патне наука икĕ çулпа çитнĕ. Унăн пĕрремĕш çулĕ танлаштаруллă истори юхăмĕнчи филологсен ĕçĕсенче палăрнă. Иккĕмĕшĕ – философи

çулĕ, вăл XX ĕмĕр пуçламăшĕнче малалла аталанайман. Пĕрремĕш юхăмĕн чи вăйлă палăрăмĕ – Л.Нуаре теорийĕ, иккĕмĕш юхăмĕн – чĕлхе пуçланса кайни çинчен вĕрентекен марксизм теорийĕ. Теорисен никĕсĕсене хунă тĕп ыйтусем Нуарепе марксизм теорийĕсем пĕрпĕринчен уйрăлса тăнине кăтартаççĕ. Çакăнта икĕ пысăк уйрăмлăх палăрать:

1) Нуаре каланă тăрăх, ĕç хатĕрĕсемпе усă курасси ăс-тăнпа чĕлхерен каярах пуçланса кайнă;

2) Нуаре этемĕн харпăр хăй ăнланулăхĕ (ăнĕ) вăл ĕç хатĕрĕпе усă курма тытăнсассăн пуçланать тесе калать пулсан, К.Маркс çав ăнланулăх сынпа çын хутшăнма тытăнсассăн çеç пуçланать тет.

Малалла чĕлхе пулса кайнине марксизм концепцийĕ епле ăнлантарса панине пăхса тухăпăр.

***Марксизм концепцийĕ.*** К.Маркспа Ф.Энгельс чĕлхе пулу вĕрентĕвне никĕсленĕ, наука тĕлĕшĕнчен пăхсан пĕрремĕш хут чĕлхе мĕнне тĕрĕс палăртма пултарнă шухăш XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче Совет Союзĕнче çирĕпленнĕ.

I. Чĕлхе шухăшлавпа уйрăлми çыхăннă. Чĕлхепе шухăшлав пĕрлĕхĕ çинчен К.Маркспа Ф.Энгельс акă еплерех каланă: «Чĕлхе ăс-тăн пекех сĕм авалах пулса кайнă, ытти çынсене кирлĕрен вăл мана та кирлĕ». Çак тĕп шухăш чĕлхе ним пĕлтерĕшсĕр сасăсенчен, туйăмлă кăшкăрашусенчен, междометисенчен пулса кайнă тесе каланине хирĕçленĕ.

II. Чĕлхе вăл – çыннăн ăс-хакăлне (сознание) палăртмалли пĕртен-пĕр пурлăхлă мел. Эпир хамăр ăс-тăна калаçса е çырса палăртатпăр.

III. Чĕлхепе шухăшлав çын ĕçленине пула аталаннă. Упăте пуç мимийĕнчен майĕпен этем пуç мимийĕ пулса каясси малтан ĕçрен, унтан уçăмлă калаçу витĕмлĕхĕнчен килнĕ. Этем пуç мимийĕ, упăтеннипе пĕр евĕрлех, анчах унăннинчен чылай пысăкрах тата çыннăн шухăшлавĕ çӳллĕрех шайра тăрать».

IV. Чĕлхе пĕрле ĕçлекен çынсене хутшăнма питех те кирлĕ пулнăран пуçланса кайнă. Чĕлхе те, ăс-тăн евĕрлех, çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнма кирлине кура

çeç йĕркеленнĕ. Áсланса, аталанса пыракан çынсен пĕр-пĕринпе калаçас туртăмĕ палăрма пуçланă. Çак туртăма пулах упăтен аталанса çитеймен типĕ пырĕ майĕпен улшăнса пынă пулĕ, çавна май пуплев органĕсем ерипен пĕр уçăмлă сасă хыççăн теприне калама хăнăхса çитнĕ.

Хăйĕн «Çутçанталăк диалектики» кĕнекинче Ф.Энгельс Ч.Дарвинпа ытти ăсчахсен ĕçĕсем çине таянса диалектикăлла – материалистла теорие малалла аталантарать, ĕç-хĕл пĕлтерĕшне тĕпе хурса çынсен ушкăнĕ, чĕлхи тата шухăшлавĕ мĕнле майпа пулса кайнине каласа кăтартать. «Темиçе çĕр пин çул каялла... этем евĕрлĕ вăйлă аталаннă упăтесен ăрачĕ пурăннă... Çĕр çинче утнă май вĕсем майĕпен кĕлеткисене тӳрĕ тытма пуçланă. Ку вăл упăтерен çын пулса пынă тапхăрги чи кирлĕ утăм», – тесе палăртать Энгельс. Малтан алăсем апат пуçтарма. пурăнмалли вырăн тума, тăшмансенчен хӳтĕленме кăна кирлĕ пулнă пулсан халь вĕсем чи ансат ĕçсене тума пуçланă. Ĕç хатĕрĕсем тума вĕренни этемĕн пĕрремĕш çитĕнĕвĕ пулнă (кусем шутне пулă тытмалли тата сунара çӳремелли хатĕрсем кĕнĕ). Çакă этеме чĕрчунсенчен уйăрнă, мĕншĕн тесен вĕсемпе усă курса çын çутçанталăка улăштарнă, унăн вăйĕсемпе хăйне кирлĕ пек усă курнă, анчах та ĕçĕн тухăçлăхне ӳстермешкĕн çынсене калаçма пĕлни кирлĕ пулнă. Вĕсене пĕр-пĕринпе хутшăнма шăпах ĕнтĕ чĕлхе май панă. Ĕç тата уçăмлă калаçу шухăшлава аталантарнă. Шухăшлав аталанăвĕ вара ĕçпе калаçу аталанăвне лайăхлатнă. Ĕç малалла аталанни, çынсем аш-какай çини. вут-кăварпа усă курни, чĕрчунсене алла вĕрентни, тĕрлĕ климат условийĕсенче пурăнни – çакă пĕтĕмпех чĕлхене, шухăшлава, этемĕн организмне аталантарнă, çын хăйĕн ăрăвне пуçарса янă чĕрчунсенчен ылтарах та ытларах уйрăлса пынă.

«Упăтерен этем пулса пынă процессра ĕç мĕнле вырăн йышăнни çинчен» ятлă статйине Энгельс 1876-мĕш çулта çырнă. Ун чухне авалхи питекантроппа синантроп шăммисене тупайман-ха. Наукăн малаллахи аталанăвĕ, ăсчахсен тишкерӳ ĕçĕсемпе тĕпчевĕсем «йы-

вăçсем тăрăх чупакан упăтесен» кĕтĕвĕнчен ĕç пулăшнипе этем ушкăнĕ пулса кăйса аталаннă текен шухăш тĕрĕс пулнине пуçĕпех çирĕплетнĕ.

1848-мĕш çулта Гибралтарта, ун хыççăн 1856-мĕш çулта Дюссельдорф хули çумĕнчи Неандр юхан шыв айлăмĕнче пуç купташкисем тупнă. Вĕсен тытăмĕ (пуç купташкин аялти пайĕ, тайлăк çамка, лайăх аталаннă куç харшисем) çав пуç купташкисем авалхи примитивлă этемĕн пулнине кăтартнă.

1857-мĕш çулта Фульрот тухтăр Бонн хулинче пулса иртнĕ натуралистсен съездĕнче авалхи шăмăсем çинчен доклад тунă. Фульрот палăртнă тăрăх, вĕсем Европăра тахçан пурăннă пĕрремĕш этемĕн пулма пултарнă. Анчах та реакцилле шухăшлă ăсчахсем хирĕç пулнăран неандерталец шăммисене манăçа хăварнă. Вĕсене 30 çул иртсен тин аса илнĕ.

1887-мĕш çулта Бельгири Спа ятлă хула çывăхĕнчи ту хăвăлĕнче этемĕнни евĕрлĕ икĕ пуç купташки тата шăм-шак пайĕсене тупнă. Çакăн хыççăн 1856-мĕш çулта тупнă шăмăсене шута илсе наукăра «неандерталь этемĕ» (вырăсла: неандерталец) термин çирĕпленсе юлать.

***Çутçанталăк çинчен вĕрентекен ăслăлăхсем панă кăтартусем.*** Чи малтанах этем организмĕн калаçмашкăн çеç кирлĕ «хăйĕн чăн-чăн органĕ» çуккине палăртмалла. Калаçу органĕ темиçе пайран тăрать: 1) пуç мими, 2) ӳпке, 3) карланкăпа типĕ пыр, 4) сăмса хăвăлĕнчи тата çăварти артикуляци органĕсем. Çак системăра кашни пайĕ хăйĕн ĕçне тăвать: çăвар хăвăлĕн органĕсем апата чăмласа вĕтетме, сăмсапа ӳпке сывлама кирлĕ т. ыт. те. Ку системăра калаçу тĕп вырăн йышăнмасть. Апла пулсассăн ку функци енчен нимĕнпе те çыхăнса тăман органсен калаçу функцине тума пĕрлешмеллине кăтартать. Çакă вăл чĕлхе пулса кайнине тĕпчекен теорие ĕнентермелли тĕп самант пулса тăрать. Вăл чĕлхе тăруккăн пулса кайнă тесе шутланине тӳрех сирсе ярать, чĕлхе майĕпен улшăнса сикчевсĕр аталанса пынине тĕпчеме хистет. Чĕлхе аталанăвне малтан биологи енчен, унтан тин социаллăх тĕлĕшĕнчен тишкермелле иккен. Калаçу е пуплев ĕçне темиçе орган

хутшăнать, çавăнпа та улшăну тапхăрĕнче вĕсем специализациленесси темиçе çулпа аталанса пымалла пулнă: «ўпке-карланкă», тĕслĕхрен, кĕлеткене тўрĕ тытма ыйтать. Этемĕн тăватă уран çўремелле мар, аллисем ăна ĕçлемешкĕн кирлĕ; «пуç мими – çăвар тата сăмса хăвăлĕнчи артикуляци органĕсем» шухăша сасăпа палăртма кирлĕ. Хальхи тĕпчев ĕçĕсем кăтартнă тăрăх, ку вара япалана тунă чухне тата унпа ĕçленĕ чухне ăна лайăх пĕлсе çитсе алла илсессĕн кăна пулма пултарать. Апла пулсассăн чĕлхе пулса кайни çав вăхăтрах ĕç пулăшнипе объективлă тĕнчене пĕлсе пыни, ăс-тăн ўссе çирĕпленни пулать. Кĕскен каласан, чĕлхе пулса кайни этем тата общество пуçланса кайнипе уйрăлми тачă çыхăннă.

Çак теорин тĕп шухăшĕсем (положенисем) чĕлхе тата хальхи «homo sapiens» этем палеолит пуçламăшĕнче е чул ĕмĕрĕн чи авалхи тапхăрĕн пуçламăшĕнче пулса кайнă тесе калама май параççĕ. Хальхи вăхăтра сыхланса юлнă «пирвайхи» пĕр чĕлхе те çук, мĕншĕн тесен малтанхи палеолит вăхăтĕнчи этемĕн пĕр «тĕсĕ» те сыхланса юлман.

***Чĕлхе пулса кайнине психологи тĕлĕшĕнчен пăхни. Чĕлхе тата ăс-тăн.*** К.Маркс каланă тăрăх, чĕлхе вăл çынсен «кулленхи ăс-тăнĕ». Çавăнпа та ăс-тăн чĕлхепе уйрăлми тачă çыхăннă. Чĕлхе, этем ăс-тăнĕ евĕр, çын ĕçленĕ вăхăтра, ĕçпе пĕрле çуралать.

Епле пуçланса кайнă-ха пуплевпе чĕлхе? Ĕçленĕ вăхăтра çынсен ирĕксĕрех пĕр-пĕринпе хутшăнма тивет. Малтанлăха вĕсен ĕçĕ тата хутшăнăвĕ пĕр япала пекех питĕ тачă çыхăнса пыраççĕ. Çын ĕçлет-и, çутçанталăка улăштарать-и – ку вăл ытти çынсене те пырса тивет. Тепĕр майлă каласан, çын ĕçĕ икĕ пĕлтерĕшлĕ пулма пултарать: мĕн те пулин ĕç туни тата ыттисемпе хутшăнни. Малалла аталаннă май ку функцисем пайланаççĕ. Ĕçленĕ май çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнма кирлине майĕпен ăнланса илеççĕ. Çапла вара ку ĕç тата ун тавра çуралнă сасăсем чăн-чăн ĕçрен (тухăçлă ĕçрен) уйрăлса тăраççĕ, хăйсем хыççăн хутшăну функцине çеç хăвараççĕ. Майĕпен хутшăнура алă хусканăвĕсем сасăсе-

не куçаççĕ, вара уçăмлă калаçу пуçланса каять. Чĕлхе аталанăвĕ, ăс-тăнпа шухăшлав аталанăвĕ евĕрех, мĕн пуçланнăранпах этемĕн ĕçĕ-хĕлĕпе тачă çыхăннă.

*Пĕтĕмлетни.* Чĕлхе мĕнле пулса кайни халĕ те нумайăшне шухăшлаттарать. Ку ыйтăва вĕçне çитиех тĕпчемен-ха. Ун пирки ăсчахсем антика вăхăтĕнче, тен, вăтам ĕмĕрсенче те, Чĕрĕлӳ тапхăрĕнче те пуçа ватнă. Ку ыйтăва хăйне уйрăм проблема пек пăхма Кондильяк тăрăшнипе XVIII ĕмĕр варринче çеç пуçланă. XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче вара чĕлхе ыйтăвĕн хăш-пĕр аспекчĕсене питĕ лайăххăн уçса панине кура вĕсене конкретлă ăслăлăхсем тишкерме пуçлаççĕ. Уйрăмах лингвистика, ун хыççăн – биологи.

Маларах асăннă юхăмсемпе пĕрлех XIX ĕмĕр варринче малтан филологире, ун хыççăн философире чĕлхе пуçланса кайни этем ĕçленипе çыхăннă тесе вĕрентекен теори çуралса ытларан та ытларах вăй илсе пынă. К.Маркс ку теорие аталантарса тата лайăхлатса виçĕ пайран тăракан пĕрлĕх патне илсе çитерет. Ку вăл чĕлхене паллăсен системи вырăнне хурса тĕпчени, этемĕн пуплев пултарулăхĕ, çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнса ĕçлени.

Çапла вара, глоттогенез теорийĕ çурални пĕр пин çул ытла тăсăлать. Çапах та ку ыйтăва паянхи кунччен те уçăмлăн, татăклăн татса паман. Тĕрлĕ тапхăрсенче нумай теори, гипотеза пăхса тухнă. Вĕсенчен кашни хăй евĕр кăткăс та интереслĕ. Кирек епле пулсан та, чĕлхе – кашни халăхăн пурлăхĕ, уйрăлми пайĕ, пуянлăхĕ. Ĕмĕртен ĕмĕре аталанса, çирĕпленсе пырать çак хаклă пахалăх.

Юлашки çулсенче тата тепĕр гипотеза вăй илсе пырать: этем те, ун чĕлхи те Çĕр планета çинче çуралнă пулăмсем мар, этем чĕлхиллĕ чĕрчуна ытти планетăсем çинчен илсе килсе янă, вăл мĕнле пурăннине паян кун та «аякран» (уçлăхран – космосран) сăнаççĕ имĕш. НЛО (непознанный летающий объект) текен япаласем Çĕр çине килсе çӳрени çак гипотезăна çирĕплетет пек.

Литература

1. *Донских О.А.* Происхождение языка как философская проблема. Новосибирск: Наука, 1984.

2. *Леонтьев А.А.* Язык и разум человека. М., 1965.

3. *Назаретский В.В.* Происхождение языка: Лекции по общему языкознанию. Красноярск, 1963.

4. *Николаева Т.М.* От звука к тексту. М., 1997. М.. 2000.

5. *Якушин Б.В.* Гипотезы о происхождении языка. М.: Наука, 1985.

6. *Рождественский Ю.В.* Проблема происхождения языка // Лекции по общему языкознанию. М.: ИКЦ «Академкнига». Добросвет, 2002.

## 2§. Нацисем пулса кайичченхи чӗлхесем

***Авалхи община стройӗн чӗлхисем.*** «Авалхи община стройӗ» терминпа эпир классем пуҫланичченхи тапхӑра палӑртатпӑр. Этнографи классификацийӗнче ӑна ӑру-йӑх стройӗ теме пулать. Икӗ терминӗ те пӗр тан пӗлтерӗшлӗ, мӗншӗн тесен авалхи община стройӗнче антогонизмлӑ классем пулман. Унӑн тӗп ушкӑнӗ ӑру шутланать. Этноса та, ӑрӑва та ҫакӑн пек паллӑсемпе уйӑрса илме пулать: вӗсем пӗр вырӑнта, пӗр общинӑра пурӑнаҫҫӗ, пӗр ӗҫ-хӗлпе ҫыхӑнаҫҫӗ, пӗр чӗлхепе калаҫаҫҫӗ, анчах каярахпа пурӑнакан халӑхсен йӑхӗсемпе танлаштарсан вӗсен пӗр уйрӑмлӑх пур: унти пӗтӗм ҫынсем пӗр тӑхӑмлӑ, пурте вӗсем чӑн пулнӑ е шутласа кӑларнӑ ӑру пуҫараканӗсенчен пулса кайнӑ. Йӑх ытларах чухне икӗ пая (фратрисене) пайланнӑ. Фратрисене ӑрусем кӗнӗ, ӑрусем пысӑк ҫемьесене чӑмӑртаннӑ: чи малтан – амӑшӗ (матриархат) енчен, каярах – ашшӗ (патриархат) енчен пайланнӑ. Этнографсем шухӑшланӑ тӑрӑх, пӗрремӗш йӑхсем пулса кайичченех «чи авалхи ордара» ҫынсем биологиллӗ-социаллӑ аталану процесӗнче икӗ пая пайланса кайнӑ, кашни йӑхра хӗрарӑмсемпе арҫынсен ҫемье ҫавӑрма, ар ҫыхӑнӑвне кӗме юраман: тепӗр йӑхран качча илме е тепӗр йӑха качча кайма юранӑ. Ҫакӑн пек ҫыхӑнусене экзогамлӑ, пӗтӗм общество тытӑмне вара дуаллӑ ҫыхӑнусем тенӗ.

Каярах сём авалхи фратрисем те, экзогамлисем те ăрусене пайланнă. Ăру-йăх организацийĕсен хутшăнăвĕсем класс обществине куçнă тапхăрта тата та кăткăсрах пулнă. Авалхи община стройĕ вăхăтĕнче йăхсем ытларах вакланса кайнипе, пĕрлешнипе, куçса çӳренипе тата тачă çыхăннипе йăхсен союзĕсене пĕрлешсе кайнă. Ăру-йăх тытăмĕн пĕтĕм йĕркелешӳлĕхĕ чĕлхепе тӳрремĕн çыхăннă.

Экзогамлă ушкăнсенчи кашни чĕлхе (уйрăмах лексика) уйрăлса тăнине палăртмалла. Ăрусемпе йăхсенчи арçынсемпе хĕрарăмсен пайланăвĕ ĕçлев пайланăвĕ патне илсе çитерет: хĕрарăмсем улма-çырла тата тымарçимĕç пуçтараççĕ, арçынсем сунара çӳреççĕ, пулă тытаççĕ. Çакăн пек ĕçлев пайланăвне хăш-пĕр лингвистика факчĕсем çирĕплетсе параççĕ. Инди-Европа тăванлăх терминĕсен йышĕ пĕр евĕрлĕ мар, тĕслĕхрен, пилĕк сăмахран тăракан ушкăн: *pater «атте», *mater «анне», bhratr «пичче», dhudhter «хĕр», uneter «кĕрӳ» сăмахсенче -ter аффикс пур, çапла вара, чи малтан вĕсем тăванлăха мар, çынсен социаллă функцине пĕлтернĕ.

Социаллă пайлану вăхăтĕнче пĕр йăхри арçын тата хĕрарăм калаçăвĕнче уйрăмлăх палăрма пуçлать. Çак уйрăмлăхсем çитĕнекен ăрусен чĕлхинче те пулнă. Çапла майпа кашни истори тапхăрĕнче тĕрлĕ сăлтава пула йăхра яланах чĕлхе ушкăнĕн уйрăмлăхĕ палăрмалла пулнă. Çакăн пек пулăмсем пирĕн вăхăтра та тĕл пулаççĕ. Куçса çӳрекен сунарçăсен тата пулăçăсен юкагир е одул чĕлхинче вырăс чĕлхинчи пек çемçе *ть, дь* сасăсем арçынсен калаçăвĕнче кăна пулаççĕ, хĕрарăмсем çак сасăсене *ц, дз,* ватă çынсем – *чь, джь* тесе калаççĕ. Арçынпа хĕрарăм хушшинчи социаллă уйрăмлăх нумай вăхăт хушши сыхланса юлнăран кăтартнă уйрăмлăх – хĕрарăм калаçăвĕн уйрăмлăхĕ – хальхи пур чĕлхесенче те, çав шутрах вăйлă аталаннă вырăс, француз, китай, нимĕç тата ытти чĕлхесенче сыхланса юлать, анчах пуринчен ытла вăл литература чĕлхинче мар, диалектра палăрать. Монгол çемйинче кĕçĕннисен хăйсенчен аслă çынсене ятпа чĕнме юраман, пуринчен ытла хĕрарăмсен хуняшшĕне тата хунямăшне,

пиччĕшне, инкĕшне ятпа чĕнме юраман. Енчен те ытах каламалла пулсан, кирлĕ сăмаха калама ылмаштару мелĕпе усă курнă, е ўкерчĕклесе пĕлтермелле, е синонимпа усă курмалла, енчен те синоним та çук пулсан, сăмахăн пĕрремĕш хупă сассине улăштармалла пулнă. Кунта акă мĕн асăрхаттарса хăвармалла: çакăн йышши чарусем монгол чĕлхинче арçынсене пырса тивеççĕ, анчах çемьере арçынсем пуç пулса тăнă пирки ку «хĕрарăмсен чĕлхи» пулни биологиллĕ сăлтавсемпе мар, социаллисемпе çирĕпленет.

Ăру-йăх чĕлхисен лексика улшăнăвĕн тата тепĕр пысăк сăлтавĕ табу шутланать. *Табу* сăмахпа лингвистикăра пĕр-пĕр ĕç тума, сăмах калама юраманнине палăртаççĕ. Чĕрчун ячĕсене кăна мар, япаласен, пулса иртнĕ ĕçсен, кунсен, талăк вăхăчĕсен ячĕсене те, япала ячĕсене кăна мар, глаголсемпе наречисене те калама юраман*.

Ку пулăм тĕрĕк чĕлхисенче те палăрать. Тĕслĕхрен, чăваш чĕлхинчи *упа* “медведь” сăмах ытти - тĕрĕк чĕлхисенче *аба* “атте”, “пичче” пĕлтерĕшлĕ. Чăваш чĕлхинче *упа мучи, (опа мочи)* тени юмахсенче тĕл пулать. Хальхи чĕлхере упана малтан мĕнле сăмахпа палăртни паллă мар. Чăваш чĕлхинче *упа* тени табу сăмахĕ çирĕпленсе юлнине кăтартать, чылай тĕрĕк чĕлхисенче *аю* «упа».

***Авалхи община стройĕ тапхăрĕнчи чĕлхесен*** уйрăмлăхĕсене сăнарлама хальхи вăхăтра лайăх пĕлекен фактсенчен пуçлар. Чĕлхен пĕтĕмĕшле пĕрлĕхĕ унпа каласакансем пĕр территорире пурăннинчен килет. Çак пĕрлĕх пулмасан чĕлхен пĕрлĕхĕ те пулмасть. XIX ĕмĕр вĕçĕнче Литва тăрăхĕнче чĕрĕ диалектсем питĕ нумай пулнă, тĕпчевçĕ пĕр ялтан инçех мар вырнаçнă тепĕр яла куçнă чухне урăх диалект зонине лекнĕ. Ку уйрăмлăха Литвара наука çулçўревĕнче пулнă Ф.Ф. Фортунатовпа В.Миллер палăртнă. Хальхи вăхăтра литва

---

* См. Зеленин Д.К. Табу слов у народов Восточной Европы и Северной Азии. Ч. 1. Запреты на охоте и иных промыслах. Л., 1929. С. 1-9.



Ч-41330
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

чёлхин диалект уйрăмлăхĕсем тикĕсленеççĕ, анчах аукштайт тата темайт диалекчĕсен хушшинчи уйрăмлăхĕсем çирĕп тытăнса тăраççĕ. Аукштайт-литовецсем хăйсен диалекчĕпе калаçакан темайтсене аран-аран ăнланаççĕ пулсан, латышсене вара пачах та ăнланмаççĕ.

Ку пулăм авалхи община стройĕ вăхăтĕнчи халăхсен чĕлхисенче тата вăйлăрах палăрнă. Вырăс çулçӳревçи тата тĕпчевçи Н.Н. Миклухо-Маклай XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче Çĕнĕ Гвинейăра курни-илтнине çырса кăтартни питĕ интереслĕ. Вăл ĕнентернĕ тăрăх, – кашни ялăн хăйĕн калаçăвĕ пулнă*.

Çакăн евĕрлĕ пĕтĕм пулăмсенче пăхса тухса эпир пĕр иккĕленмесĕрех тăванла диалектсем пирки калаçма пултаратпăр: литва тата латыш чĕлхисем хăйсен диалекчĕсемпе Индоевропа çемйинчи балти чĕлхисен ушкăнне кĕреççĕ. Миклухо-Маклай асăннă чĕлхесем пурте, ахăртнех, папуас çемйине кĕреççĕ. Балти ушкăнĕнчи диалектсемпе танлаштарсан папуассен чĕлхе пĕрлĕхĕ чылай пĕчĕк – 100 чĕлхене е диалекта яхăн. Çакăн пек лару-тăру Австралире пурăнакан халăхĕсен те пулнă, кунта XIX ĕмĕртех 300 пин çынлă халăхăн 500 яхăн чĕлхе пулнине палăртнă.

Çурçĕр Кавказра ту çинче тата ту хушшинче тĕл пулакан «пĕр ауллă» чĕлхесем пĕр-пĕринпе çутçанталăк условийĕсене пула хутшăнма пултарайман пулсан, Çĕнĕ Гвинейăпа Австралири çутçанталăк условийĕсем йăхсене хутшăнма пысăк чăрмав кӳменнине палăртса хăвармалла. Енчен те балти диалекчĕсенче чĕлхесен пĕрлĕхлĕхĕ палăрать пулсан, Çĕнĕ Гвинейăри, çавăн пекех Австралири тата Африкăн хăш-пĕр районĕсенчи чĕлхесем пирки çырса кăтартнă лару-тăрăва диффузиллĕ чĕлхе çемйи тесе калама пулать. Çакăн пек чĕлхе çемйин типĕ авалхи община стройĕн чĕлхе уйрăмлăхĕ шутланма пултарать.

Çавнашкал фактсем «пуçламăш чĕлхесен вĕçĕмсĕрлĕхĕ» ятлă гипотезăн никĕсĕ пулса тăнă. Ку

---

* См. Миклухо-Маклай Н.Н. Путешествия. Т. 1. М.; Л., 1940. С. 243.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА

гипотезăпа килĕшӳллĕн авалхи община стройĕнчи кӳршĕллĕ кашни икĕ чĕлхе пĕр евĕрлĕ пулнă, пĕрре урлă аяккарах тăракан чĕлхесем пĕр пекех мар; иккĕ урлă тăраканнисем хушшинче пĕрпеклĕхсем тата та сахалрах т.ыт.те. Çавăнпа пĕрлех пĕр-пĕр территорире юнашар тăракан пур çывăх чĕлхесем («ăру чĕлхисем») те йăх чĕлхине тумалли никĕс пулса тăраççĕ, кайран та, темиçе йăх чĕлхи чăмăртаннă чухне, çакăн пек пулăмах пулса иртет. Чĕлхесен шучĕ сахалланать пулин те, пур пĕрех вĕсем пĕр-пĕринчен нумай уйрăлса тăраççĕ. Çапла майпа ку тапхăрта чĕлхесем пĕрешкел тата расна пулни – пĕр процесăн икĕ енĕ.

Йăхсем союзсене пĕрлешни кăштах хурăнташлă е пачах та тăван мар чĕлхесене тачă хутшăнма çулсем уçса панă. Йăх пĕрлĕхĕсен хутшăнăвĕн результачĕ пĕр-пĕр истори тапхăрĕнче (тĕслĕхрен, Рим Галлие, Иберие тата Дание çĕнсе илнĕ чухне) те палăрать – пĕр чĕлхе вилет, çĕнтерӳçĕ чĕлхе вара халăхсен пĕрлĕхне чăмăртанакан çынсен пĕтĕмĕшле чĕлхи пулса тăрать. Çĕнтернĕ чĕлхеллĕ халăхпа хутшăннă май çĕнтерӳçĕ чĕлхе хăйĕн сăн-сăпатне кăшт улăштарать. Çакăн пек улшăнусем ытларах çĕнтерӳçĕ чĕлхен фонетикипе лексикинче пулса иртеççĕ, грамматики вара ун пекех улшăнмасть. Тĕслĕхрен, латин чĕлхи парăнтарнă пур территорисенче те вăй илнĕ, анчах унти чĕлхесен витĕмĕпе чылай улшăннă. Çакă ĕнтĕ хурăнташлă роман (француз, испан, румын) чĕлхисен пуçламăшĕ пулнă. Кун пекки ăру-йăх стройĕн тапхăрĕнче те пулса пынă пулмалла. Икĕ чĕлхе пĕрлешнипе паламалла мар расна виççĕмĕш чĕлхе пулса кайнине кăтартакан тĕслĕхсем сахал.

Çакăн пек пулăма чĕлхесен пĕтĕçĕвĕ теççĕ. Анчах пĕр-пĕринпе пĕтĕçнĕ чĕлхесен хуплăхĕнче мĕн пулса иртет-ха? Çĕнĕ «пĕтĕçнĕ чĕлхесем» е «пĕрлешнĕ гибридлă пулăмсем»? Чĕлхесем пĕтĕçнине румын тата акăлчан чĕлхисенче курма пулать. Хутшăну витĕмĕ пуринчен ытларах фонетикăпа синтаксисра палăрать, лексика вĕçĕмсĕр ылмашăнма пултарать, морфологи системи вара самай çирĕп тăрать. Акăлчан чĕлхи германи чĕлхисен ушкăнне кĕнĕ май XI ĕмĕртен пуçласах фран-

цуз чĕлхин витĕмне нумай хутчен тӳссе ирттернĕ. Акăлчан чĕлхинчи сăмахсен 55% француз чĕлхинчен илнĕ, е латин чĕлхинчи сăмахсене француз чĕлхи урлă илнĕ; француз чĕлхин витĕмĕ синтаксиспа морфологире питĕ вăйлă палăрать. Акăлчан чĕлхинче те, румын чĕлхинче те урăх чĕлхерен йышăннă сăмахсен йышĕ çав тери пысăк. Румын чĕлхинчи хисеп ячĕсем пĕтĕçĕвĕн кăтартуллă тĕслĕхĕсем пулса тăраççĕ. Кунта латин чĕлхинчи сăмах тымарĕсем славян чĕлхисен тытăмне вырнаçнă: unsprezece «вун пĕр», сăмахсерен куçарсан – «пĕрре вуннă çийĕнче».

Хăш-пĕр лингвистсем (Н.Я. Марр, В.Пизани) пуçĕпех пĕтĕçнĕ чĕлхесем çине те типлă тĕслĕх пек пăхаççĕ. Теприсем ку пулăма ăрасна йышши тесе шутлаççĕ (И.Котяну, А.Росетти). Виççĕмĕшĕсем шутланă тăрăх, хальхи тĕнчере «пĕр тикĕс хутшăннă» чĕлхесем çук, çавăнпа та хутшăнăва кĕрекен чĕлхесенчен пĕри морфологи системине яланах упраса хăварать. Ку системăра чĕлхен пулăвĕ, тăванлăхĕ тата хутшăнса пулнă чĕлхесен ушкăнĕ палăрать. Юлашкинчен каланине шута илсен, акăлчан чĕлхи германи чĕлхи шутланать (француз чĕлхи пек роман чĕлхисен йышне кĕмест), румын чĕлхи роман чĕлхиех пулать (славян чĕлхи мар).

Чĕлхе хутшăнăвĕсене пула пĕр чĕлхе çĕнтерет те, тепри вилет е виççĕмĕш чĕлхе пулса тăрать, анчах вăл хутшăнăва кĕнĕ пĕр-пĕр чĕлхен морофлоги тытăмне хăйĕн никĕсĕнче хăварать, çавăнпа та урăх чĕлхе пулса тăрсан та пурпĕрех генеалоги классификацийĕнче унăн ушкăнĕнчех юлать*.

Чĕлхесем пĕтĕçнине хирĕçле ностратчĕлхисен гипотези тухса тăрать. Ностраат чĕлхисен çемйи арканса кайнă хыççăн ку çемье икĕ пая пайланса кайнă: пĕрисем – аблаутлисем, теприсем – аблаутсăррисем.

Картвел тата индоевропа чĕлхисенчи морфемăсен материллĕ пĕрпеклĕхĕ çуккине пăхмасăрах картвел чĕлхисенче морфемăсен тытăмĕ, тымар тата аффикс

---

См.* Степанов Ю.С. Основы общего языкознания. М.: Просвещение, 1975. С. 175.

морфемăсем хушшинчи çыхăнусем, ытларах чухне аблаутра, индоевропа чĕлхисенчине çывăх. Çак сăлтава пула картвел тата индоевропа чĕлхисене пĕр типологиллĕ класа пĕрлештерме юрать.

**Чи авалхи тата авалхи патшалăхсен чĕлхисем. Норма тата стиль ăнлавсем пулса кайни.** Халăхсен тата чĕлхесен историйĕнче пурнăçри пĕрлĕхе пула пулса кайнă фактсем уйрăмах паха. Сăмахран, уйгур (пирĕн эрăченхи VIII-XIII ĕмĕрсем) тата латынь, авалхи грек чĕлхисенче те пĕрпеклĕхсем нумай.

Ку тапхăрта патшалăх чĕлхи туса хурас шухăш пулни палăрать. Авалхи патшалăх пĕр йăх е йăхсен союзĕ ертсе пынипе тĕрлĕ чĕлхеллĕ йăхсене ирĕксĕрлесе пĕрлештернипе пулса кайнине кура ку чухнехи чĕлхе системи икĕ сийлĕ пулса тăнă: пĕр сийне – пуç пулса тăракан халăхăн чĕлхи йĕркеленĕ (вăл территори енчен облаçăн тĕп пайĕпе (центрĕпе) çыхăннă, теприне вара – аялтине – халăхăн диалект чĕлхисем (территори енчен – центртан аякра вырнаçнисем) йĕркеленĕ.

Хĕвелтухăçĕнче çакăн пек хутшăнусем VIII ĕмĕрте малтанах Байкал леш енчи Селенга тата Орхон юханшывĕсем тăрăхĕнчи Уйгур патшалăхĕнче пулса кайнă. Ку тапхăрччен хуçаланнă ăру хутшăнăвĕсем феодаллă хутшăнусемпе ылмашăнаççĕ, ăру-йăх пĕрлĕхĕ вара пĕр халăх пулса тăрать. Çак халăхăн ячĕ – уйгурсем. 762-мĕш çулта вĕсем авалхи анимизма улăштарса манихейство тĕнне йышăнаççĕ. Уйгурсем IX ĕмĕр вĕçнелле Тянь-шань çывăхĕнчи районсене куçаççĕ, буддизм тĕнне йышăнаççĕ. IX-X ĕмĕрсенченхи руна çырулăхĕн палăкĕсем сыхланса юлнă, VIII-XIII ĕмĕрсенче вара уйгур чĕлхин хăйĕн çĕнĕ Согда алфавичĕпе çĕнетнĕ çырулăхĕ пулнă. Уйгур чĕлхи Вăтам Азин авалхи тапхăрĕнче Ылтăн Урта (XIII-XIX ĕĕ.), Кивĕ Узбек (XV-XVI ĕĕ.), Кивĕ Туркмен (XVII-XIX ĕĕ.) тата ытти чĕлхесен аталанăвне пысăк витĕм кӳнĕ*. Африкăра пирĕн эрăн X ĕмĕрĕнчех патшалăхсем пулнă. Хальхи тĕпчевçĕсем

* Тенишев Э.Р. «Кутадгу билиг» и «Алтун ярук» // Сов. тюркология, 1970. № 4.

шуглană тăрăх, пĕрремĕш патшалăхĕсем Хĕвеланăç Суданра X ĕмĕртен кая мар, кайран, XIII-XV ĕмĕрсенче, Конго тата Междуозерье кӳлли патĕнче пулса кайнă.

Авалхи Грецире историре пĕрремĕш хут пирĕн эрăчченхи III ĕмĕрте КОЙНЭ, нихăш диалектпа та пĕр килмен, пĕр пĕтĕмĕшле литература чĕлхи йĕркеленет. Каярах вăл Византи цивилизацийĕн чĕлхи пулса тăнă. Авалхи грек чĕлхин пахалăхĕсем авалхи Раççей тата Руç культурине кĕрсе юлнă.

Пирĕн эрăчченхи IV ĕмĕрпе танлаштарсан латин чĕлхин фонетикăпа морфологи стройĕ пирĕн эра пуçламăшĕнче пĕтĕмĕшле сахал улшăннă. Çапах та грек чĕлхипе грек культури пысăк витĕм кӳнипе словарь составĕ, сăмах пулăвĕ тата синтаксис палламалла мар улшăннă. Вĕсем пуянланса кайнă, синонимсен речĕ вăйлă аталаннă. Калаçу тата чĕлхе норми ăнлавсем пулса кайни историшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

### 3§. Нацисем йĕркеленнĕ тапхăрти чĕлхесем

Историллĕ категори пулнă май наци капитализм аталанăвĕн тапхăрĕнче çеç йĕркеленме пултарнă. Наци йĕркеленнĕçемĕн вара халăх чĕлхинчен пĕр наци чĕлхи пулса каять.

Класслă общество тапхăрĕнче халăхлăх йĕркеленет, кашни халăхăн хăйĕн ушкăнĕ валли пĕрлехи ячĕ (йăх ячĕ) пур, вăл – пĕрлехи культура элеменчĕсемпе ĕлĕкхи йăх диалекчĕсен нумай уйрăмлăхĕсене еткере илнĕ территори диалекчĕсене сыхласа хăварнă пĕрлехи чĕлхе. Халăх чĕлхин хăйĕн çырулăхĕ пулсан та, пулмасан та пултарать, çавăнпа халăхсенчен нумайăшĕн класлă общество условийĕсенче хăйсен çырулăхĕпе литератури пулман.

Наци территори, экономика пурнăçĕ, чĕлхе, психика, культура пĕрлĕхĕпе палăрса тăрать. Çак уйрăмлăхсем пĕр çĕре капитализм тапхăрĕнче пĕтĕçеççĕ. Наци чĕлхисем Европăра XV-XVII ĕмĕрсенче, Раççейре XVII-XVIII ĕмĕрсенче йĕркеленсе çитеççĕ: акăлчан, француз, вырăс тата ытти чĕлхесене те наци чĕлхисем теме

пуçлаççĕ. Феодаллă кивĕ харпăрлăх вырăнне çĕнни йышăнать.

Унччен Руçра пурăнакансем хăйсене вырăссем тенипе пĕрлех çĕрсене княжествăсем çине пайланине кура ытти вырăссенчен уйрăлса хăйсене Суздаль княжествинчисем суздаль çыннисем, Тверь княжествинчисем тверь çыннисем, Мускав княжествинчисем мускав çыннисем, Чулхула княжествинчисем чулхула çыннисем тесе шутланă е французсем çĕрсене феодаллă пайланине пула ытти французсенчен уйрăлса хăйсене франциецсем, пикардиецсем, бургундсем, гасконецсем тенĕ пулсан çĕнĕ тапхăрта çынсем хăйсене вырăссем е французсем çеç тесе пăхнă. Вăл е ку уйрăмлăхсене кура çав пулăмсемех капитализм аталаннă тапхăрта ытти халăхсемшĕн те характерлă пулнă.

Анчах та аталанса çитнĕ нумай нациллĕ патшалăхсенче наци шайне çитеймен халăхсем, уйрăм йăхсем пуррине шута илмелле. Час-часах пĕр-пĕр хуçалăх ĕçĕ, тĕслĕхрен, сунар е пулă тытасси, пĕр-пĕр йăхăн тĕп ĕçĕ пулса тăрать. Ку тĕлĕшрен паянхи эскимоссен лару-тăрăвĕ интереслĕ. XVII ĕмĕр тĕлнелле Хĕвеланăç Европăри патшалăхсенче кун пек пулăмсем капитализм аталаннă май çухалса е пĕтсе пыраççĕ. Анчах та, тĕслĕхрен, паянхи Африкăра чĕлхери лару-тăру çаплах питĕ йывăр. Ытăва çапла майпа татса параççĕ: палăртнă патшалăхра анлăрах сарăлнă темиçе вырăнти халăх чĕлхине тата йĕркеленсе пыракан наци чĕлхине уйăрса илсе вĕсене шкулти вĕрентӳ предмечĕ туса хураççĕ. Çак чĕлхесемпе букварьсем, вĕрентӳ кĕнекисем, грамматикăсем кăлараççĕ. Çавăн пек чĕлхесенчен суахили, хауса, фуль, манда, йоруба тата ыттисене те палăртма пулать. Патшалăх чĕлхи вара кунта наци чĕлхи мар, колонизаци вăхăтĕнче сарăлнă тата çирĕпленсе юлнă Европа (акăлчан е француз) чĕлхи шутланать.

Капитализм тата колонизаци тапхăрĕнче наци чĕлхисем йĕркеленнĕ май хăйне евĕр хутăш е креол чĕлхисем çураласçĕ. Вĕсемпе Европа çыннисем вырăнти ĕç çыннисемпе, вак сутуçăсемпе, портри çăкçăсемпе хутшăннă чух усă курнă.

Креол чĕлхисем тесе пиджинсем çинче йĕркеленсе пĕр-пĕр ушкăн çыннисемшĕн тăван пулса тăнă чĕлхесене калаççĕ. Тĕслĕхрен, Кăнтăр Китай порчĕсенчи «пиджин-инглиш» чĕлхи, Полинезири «бич-ла-мар» чĕлхи, Африкăри тахçан французсен пулнă колонисенчи «пти-негр» чĕлхи тата ыт.те. Вĕсене пурне те социаллă диалектсем теме пулать.

Социаллă диалектсем тесе пĕтĕм халăх калаçакан чĕлхерен ĕç (професси) лексикипе çеç уйрăлса тăракан, пĕр-пĕр социаллă ушкăншăн характерлă чĕлхесене – сунарçăсен, пулăçсен, атă-пушмак юсакансен чĕлхисене тата ыттисене те – калаççĕ.

Иртнĕ тапхăрта чĕлхере палăрнă уйрăмлăхсем наци йĕркеленнĕ тапхăрта вĕçленсе, тĕссĕрленсе пыраççĕ: халăх чĕлхи çырулла литература чĕлхин пайрăмĕсемпе пуянланса киввине хĕссе кăларать (тĕслĕхрен, вырăс чĕлхи чиркÿ – славян чĕлхине, француз чĕлхи – латынь чĕлхине). Çав вăхăтрах халăх чĕлхинче хăйĕнче улшăнусем пулса иртеççĕ. Вара унăн е унччен палăртса хунă пĕтĕмĕшле кÿлепи çирĕпленет, е экономикăпа патшалăх тĕлĕшĕнчен тĕп шутланакан диалект çĕнтерет, е диалектсен ку е вăл хутшăнăвĕ пулса иртет.

***Наци чĕлхи.*** Наци чĕлхи тесе пĕр-пĕр наци çыннисем калаçакан чĕлхене калаççĕ, вăл сăмах тата çыру вĕççĕн çÿреме пултарать. Наци йĕркеленнĕ май унăн чĕлхи çуралать. Вара наци пулса кайнин сăлтавĕ пулнипе пĕрлех вăл наци йĕркеленĕвĕн тĕп результачĕ те шутланать. Шалти тытăмне кура наци чĕлхи чĕлхен еткерĕ шутланать. Пĕр-пĕр чĕлхе вăхăт иртнĕçемĕн сăнсăпатне улăштарма пултарать. Çапах та хăйĕн тĕшшине, функцисене çухатмасан вăл çав чĕлхех пулса юлать, халăхăн культурине, историне сыхласа хăварса ăруран ăрăва куçса пырать.

Наци чĕлхи вăхăт иртнĕçемĕн чĕлхен хăш-пĕр шайĕсенче (лексикăра, фонетикăра, морфологире, синтаксисра) хăш-пĕр пайрăмĕсене çухатать, çав вăхăтрах çĕнелсе пырса унччен хи кÿлепин кирлĕ пайрăмĕсене сыхласа хăварса малалла аталанать. «Чĕлхе пурăнать» тени унпа кулленхи калаçура çеç

мар. обществăн пурнăçĕнче те тĕрлĕ енлĕ усă курнине пĕлтерет. Чĕлхе хăйĕн шалти саккунĕсемпе аталанса пынă май общество тытăмĕпе шайлашăнса пырса социаллă пĕлтерĕш йышăнать. Наци чĕлхи пĕлтерĕшлĕ çак пайсенчен йĕркеленсе тăрать: литература чĕлхин пĕрлехи кӳлепи, вăл е ку диалектсем, наречисем е вырăнти калаçу чĕлхисем, куçса çӳрекен калаçу кӳлеписем (çурма диалектсем, койне тата ыттисем те).

Кашни наци чĕлхи хăйне тĕллĕн, уйрăммăн йĕркеленет. Апла пулин те пĕтĕмлетсе пăхсан ак çак йĕркене пăхăнать: пĕр тĕпрен тухнă темиçе диалектран пĕри тĕпре пулать.

***Наци чĕлхи тата литература чĕлхи.*** Уйрăмах «наци чĕлхи», «литература чĕлхи», «илемлĕ литература чĕлхи» ăнлавсен çыхăнăвне палăртса хăвармалла.

Литература чĕлхи тесе диалектран çӳлерех шайра тăракан илемлетсе якатнă чĕлхене калаççĕ. Вăл историн тĕрлĕ тапхăрĕсенче тĕрлĕрен çӳреме пултарать. Кирек хăш литература чĕлхи те илемлетсе якатнă, çирĕп йĕркесене пăхăнса усă курмалли чĕлхе. Вăл халăх калаçакан чĕлхе кăна мар, урăх ушкăн е тата урăх çемье чĕлхи те пулма пултарать. Литература чĕлхисем Уйгур патшалăхĕнче, Авалхи Грецире, Римра, Киев Руçĕнче пулнă. Наци чĕлхи историн пĕр паллă тапхăрĕнче – нацисем йĕркеленнĕ тапхăрта пулса каять. Вăл халăх чĕлхин пĕрлехи кӳлепи, пĕтĕм халăх усă куракан чĕлхе шутланать. Наци чĕлхи пĕр вăхăтрах литература е çыруллă литература чĕлхи те пулать. Çавăнпа та наци йĕркеленсе çитмен тапхăрти литература чĕлхипе пуянланса ăна хĕссе кăларать. Хăйĕн аталанăвĕн чи çӳллĕ шайĕнче шкул предмечĕ, вĕрентӳпе культура чĕлхи пулса тăнă май наци чĕлхи сăмах вĕççĕн çӳрекен тата çыруллă кӳлеписене çирĕплетсе çитерет. Илемлĕ литература чĕлхи тесе илемлĕ хайлавсен чĕлхине калаççĕ. Хăш-пĕр обществăсенче вăл кулленхи калаçу чĕлхинчен самай уйрăлса тăрать.

Ку чĕлхе шутне илемлĕ литература усă куракан наци чĕлхи, диалектсен пайрăмĕсем, професси чĕлхисем тата ыттисем те кĕреççĕ.

Нацисем йӗркеленнӗ тапхӑртах литература чӗлхин нормисем йӗркеленеҫҫӗ. Нормӑсем ҫирӗпленсе ҫитчӗр тесен нацин хутла пӗлекен пайӗн чӗлхере мӗнпе усӑ курма юранипе юраманнине уйӑрма хӑнӑхмалла.

***Наци чӗлхи тата диалектсем.*** Тулаш енчен пӑхсан наци чӗлхи диалектсене хирӗҫ тӑрать, диалект чӗлхин уйрӑм тӗсӗ шутланать. Унпа территори тӗлӗшӗнчен социаллӑ пӗрлӗхпе тачӑ ҫыхӑннӑ ҫынсем усӑ кураҫҫӗ. Диалектсем наци чӗлхисем йӗркеленнӗ хыҫҫӑн сыхланса юлаҫҫӗ. Сыхланса юлнин виҫи тӗрлӗрен пулма пултарать: тӗслӗхрен, Англире вӗсем пачах та сыхланса юлман, Раҫҫейре уйрӑмлӑхӗсем якалса пыраҫҫӗ, Испанипе Италире чылай диалект сыхланса юлнӑ.

Наци чӗлхи яланах литература чӗлхи, ҫыруллӑ чӗлхе пулнӑ, диалектӑн вара ҫырулӑхӗ те, литератури те ҫук. Ҫакӑ – наци чӗлхипе диалект хушшинчи тӗп уйрӑмлӑхсенчен пӗри.

Вырӑнти хресчен диалекчӗсене социаллӑ диалектсем ҫывӑх тӑраҫҫӗ. Урӑхла вӗсене «йышӑннӑ чӗлхесем» теҫҫӗ. Раҫҫейре XIX ӗмӗрте ҫавӑн пек чӗлхесем ҫитмӗле яхӑн пулнӑ. Вӗсем пысӑк территорире сарӑлса суту-илӳ ҫыннисен чӗлхи пулса тӑнӑ. Кун пек «йышӑннӑ чӗлхесем» шутне «чухӑнсен чӗлхи», «вӑрӑсен чӗлхи», «ача-пӑча чӗлхи» тата ытисем те кӗреҫҫӗ.

***Наци чӗлхи тата унти сӑмахсемпе пуплевсен ҫыхӑнӑвӗн уйрӑмлӑхӗсем.*** Ку таранччен эпир нацин пӗрлехи чӗлхине тулаш енчен, территорипе социаллӑ диалектсем тӗлӗшӗнчен пӑхса тухрӑмӑр. Халӗ наци чӗлхин шалти тытӑмне тишкерер. Наци чӗлхи чӗлхен ытти тӗсӗсемпе танлаштарсан шалти тытӑмӗн анлӑшӗпе, хӑйӗнче чӗлхе стилӗсем пуррипе уйрӑлса тӑрать.

Чӗлхе е калаҫу стилӗ – ҫынсем пӗр-пӗр пурнӑҫри лару-тӑрура усӑ куракан калӑҫӑвӑн тӗсӗ. Чӗлхене стильсем тӗлӗшӗнчен хакланӑ чух малтанах чӗлхе стилӗсем ӑҫтан пулса кайнипе тӗпчемелле.

Общество наци чӗлхине территорие шута илсе социаллӑ диалектсемпе танлаштарса тӗрӗс калаҫу, е норма, туса хурать. Ятарлӑ литературӑра ҫакна литература тӗлӗшӗнчен тӗрӗс йӗркеленнӗ пуплев теҫҫӗ. Диалектсемпе

жаргонсем наци чӗлхипе танлаштарсан тӗрӗс мар калаҫу шайне лараҫҫӗ, литература чӗлхин норми шутланмаҫҫӗ. Наци чӗлхисем пулса кайиччене, патшалӑх тата халӑх чӗлхисем йӗркеленнӗ тапхӑртах пуплеве тӗрӗс тата тӗрӗс мар калаҫу тесе уйӑрни паллӑ. Тӗслӗхрен, латынь чӗлхи.

Вырӑс чӗлхинче чӗлхе стилӗсене виҫӗ пая (ушкӑна) уйӑрса тишкереҫҫӗ. Стильсем хушшинче ҫирӗп чикӗсем тума ҫук. Кӗнеке стилӗпе калаҫу стилӗ хушшинчи чикӗ вара тарӑнрах. Кӗнеке стилӗ хӑй икӗ ушкӑна пайланать: ҫирӗп кӗнеке стилӗ, ҫырулла стиль тата нейтраллӑ кӗнеке стилӗ. Калаҫу стилӗ хӑй те икке пайланать: нейтраллӑ калаҫу тата фамильярлӑ калаҫу стилӗсем.

Кӗнеке стилӗн пайӗ (нейтраллӑ кӗнеке стилӗ) тата калаҫу стилӗн тепӗр пайӗ (нейтраллӑ калаҫу стилӗ) пӗрле нейтраллӑ стиль йӗркелеҫҫӗ. Стильсен ҫак ушкӑнне тӗрӗс литература калаҫӑвӗ, е норма, теҫҫӗ. Вырӑс чӗлхинче нормӑна пӑхӑнмасӑр калаҫнине ахаль калаҫу теҫҫӗ. Илемлӗ литературӑра чӗлхе стилӗсем ӳнер хатӗрӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Стильсенчен пӗри – нейтраллӑ стиль – уйрӑм вырӑн йышӑнать. Унпа пурнӑҫри нейтраллӑ лару-тӑрусенче усӑ кураҫҫӗ: лавккара, урамра, килте, шкулта тата ытти ҫӗрте.

Капитализм аталаннӑ тапхӑрта нацисем тата наци чӗлхи пӗтӗмӗшле йӗркеленеҫҫӗ. Литература чӗлхи патшалӑх территорийӗнче сарӑлса пуриншӗн те пӗртен-пӗр чӗлхе пулма ӑнтӑлать. Капитализм обществинче культура тата пӗлӳ тӗлӗшӗнчен ҫынсен танмарлӑхне пула наци чӗлхи идеаллӑ чӗлхе пулса тӑраймасть; наци чӗлхисем шутне хушӑран вырӑнти диалектсене те кӗртеҫҫӗ. Вӗсем пӗр вӑхӑтрах социаллӑ диалектсем те шутланаҫҫӗ. Диалектсене ҫӗнӗлле пайлама пуҫлаҫҫӗ: пӗрпӗринпе тачӑ ҫыхӑннӑ социаллӑ диалектсем тата чӗлхене ҫын ӳсӗмне кура пайлани (кулленхи ача-пӑча калаҫӑвӗ тата ача-пӑча чӗлхи). Наци чӗлхи литература чӗлхин тӗрлӗ тӗсӗсен, уйрӑмлӑхӗсен пӗрлӗхӗ шутланать; ун тулашӗнче территори тата социаллӑ диалектсем тӑраҫҫӗ. Наци чӗлхипе диалектсем пӗр вӑхӑтрах тӗрлӗ

çул-йĕрне аталанаççĕ. Социаллă диалектсенче нацилĕх паллине пăхмасăр уйрăм «универсаллă» йĕрсем палăраççĕ.

Литература

1. *Рождественский Ю.В.* Лекции по общему языкознанию. М.: Высш. шк., 1990; М.: ИКЦ «Академкнига», 2002.

2. *Степанов Ю.С.* Основы общего языкознания: Учеб. пособие. М.: Просвещение, 1975.

3. *Зеленин Д.К.* Табу слов у народав Восточной Европы и Северной Азии. Ч. 1. Запреты на охоте и иных промыслах. Л., 1929.

4. *Миклухо-Маклай Н.Н.* Путешествия. Т. 1. М.; Л., 1940.

5. *Абаев В.И.* О родовых отношениях и терминах родства у осетин Энгельс и языкознание. М.: Наука, 1972.

6. *Тенишев Э.Р.* «Кутадгу билиг», «Алтун ярук» // Советская тюркология, 1970. № 4.

7. *Тронский И.М.* Очерки из истории латинского языка. М.; Л., 1953.

8. *Ярцева В.Н.* Развитие национального литературного английского языка. М.: Наука, 1969.

9. *Vaugelas C.F.* Remarques sur la langue frangoise. Paris, 1934.

## 4§. Чĕлхе аталанăвĕ тата чĕлхе функцийĕ

Хальхи чĕлхе пĕлĕвĕнче «чĕлхе аталанăвĕ» тата «чĕлхе функцийĕ» терминсем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. «Чĕлхе аталанăвĕ» тата «чĕлхе функцийĕ» пĕр пахалăхăн икĕ енĕ пулаççĕ: чĕлхе ĕçлемесĕр (хутшăну хатĕрĕ пулмасăр) аталанаймасть, вăл ĕçленĕ май кăна аталанса пырать.

Пĕр-пĕр чĕлхене идеаллă тата тăнăçлă япала евĕр кăтартни чĕлхере мĕн пуррине, унти лару-тăрупа эволюцие, синхронипе диахроние, статикăпа динамикăна, вĕсенчи диалектика çыхăнăвĕсене тĕрĕс мар палăртни пулать.

Чĕлхе аталанăвĕ вăл – вăхăта пула чĕлхе тытăмĕнче, унăн элеменчĕсенче, çыхăнăвĕсенче, çавăн пекех чĕлхен структуринче, пайĕсемпе элеменчĕсенче улшăнусем пулса иртни.

Маларах каланине кура çаксене уйăрма пĕлмелле:

а) пĕтĕмĕшле чĕлхе аталанăвĕ;

ă) чĕлхе формипе варианчĕсен аталанăвĕ;

б) чĕлхе тытăмĕн пайĕсен аталанăвĕ;

в) уйрăм грамматика, сăмах пулăвĕ, лексика, фонетика категорийĕсен аталанăвĕ;

г) чĕлхен уйрăм элеменчĕсен аталанăвĕ;

д) чĕлхе функцийĕсен пĕтĕмĕшле аталанăвĕ;

е) форма функцийĕсен истоpири аталанăвĕ.

Чĕлхе аталанăвĕпе чĕлхе историйĕ пĕр япалах мар.

Индоевропеистика чĕлхе вĕрентĕвĕнче органикăлла тата историлле аталану ăнлавсене этемлĕх аталанăвĕн икĕ тапхăрĕ пек ăнлантарса панă. Чĕлхе аталанăвĕн икĕ тапхăрне тата чĕлхе пĕлĕвне çутçанталăк организмĕ пек ăнлантаракан гипотезăсене критиклесе И.А. Бодуэн де Куртенэ аталану саккунĕсемпе истори саккунĕсен тĕрлĕ характерĕсене палăртнă.

Ылмашу тесе чĕлхере пур хатĕрсенчен пĕри теприне хĕссе кăларса унпа çыхăну çухатнине калаççĕ. Чĕлхери çĕнĕлĕхсем тесе пачах та çĕнĕ пулăм пек е чĕлхере пур формăсем тепĕр хут йĕркеленсе кайнине калаççĕ.

Трансформаци (улшăну), чĕлхен историллĕ аталанăвĕн процесĕ пулса, уйрăм пулăмсемпе пĕтĕмĕшле чĕлхе структурин пахалăх улшăнăвĕпе çыхăнса тăрать. Çавăнпа та трансформаци процесне вĕренни хронологи меслечĕсене палăртассипе тачă çыхăнса тăрать.

Европа чĕлхисен аталанăвне (историне) яланхи пекех виçĕ тапхăра уйăрса пăхаççĕ:

1) авалхи тапхăр; 2) вăта тапхăр; 3) çĕнĕ тапхăр.

Çавна май уйрăмах акă мĕн палăртмалла: чĕлхе аталанăвĕн тапхăрĕсене пайланă чух ун тытăмĕнче пулса иртекен гĕп улшăнусене шута илмелле.

Чĕлхе аталанăвĕн хăвăртлăхĕ çавăн пекех истори условийĕсенчен те нумай килет. Йĕркеленсе çитнĕ халăхпа наци, çуралса чăмăртаннă çырулла литература чĕлхисем историе пысăк витĕм кӳни çинчен çирĕплетсе калани пур. Çав вăхăтрах чĕлхе историйĕ чĕлхен уйрăм пулăмĕсен, çыхăнăвĕсен, сăлтавĕсен историех пулать.

Тĕслĕх вырăнне авалхи римлянсен чĕлхине (латин чĕлхине) илсе пăхар. Хĕвеланăç Европа территорийĕнче

Рим империйĕ сарăлса пынине кура, çак чĕлхе римлянсем çĕнсе илнĕ çĕрсем çинче пурăнакан халăхсен чĕлхисемпе кăткăс та нумай вăхăт хушши тăсăлакан хутшăнусене кĕрет. Çавна пула чĕлхе тытăмĕ пĕтĕмĕшле улшăнать, майĕпен халĕ хурăнташлă, анчах та ытла пĕр пек тытăмлă мар роман чĕлхисем (испан, португал, француз, румын, молдаван) çуралаççĕ.

XIV-XVIII ĕмĕрсенчи вырăс чĕлхи историйĕнче глагол-лăн грамматика системинче, уйрăмах вăхăт, вид, залог, наклонени, сăпат, причасти категорийĕсенче, палăрмалла улшăнусем пулса иртеççĕ. Çак категорисем вăхăт иртнĕçемĕн улшăнаççĕ терĕмĕр. Пĕр сăмахпа каласан, вĕсенче аталану процесĕ пулса иртет. Улшăну процесĕ уйрăм тулли мар единицăсене те çавăрса илет. Глагол категорийĕсен аталанăвĕ те, хăйĕн тĕп содержанине кура, системăллă пулăм пулса тăрать.

Акă функци аталанăвĕн пĕр тĕслĕхне илсе пăхар. Наци литература чĕлхисем кăна нумай функциллĕ чĕлхесем пулма пултараççĕ, çав хушăрах тĕрлĕ чĕлхе стилĕсем тĕрлĕ социаллă функцисене пурнăçлама пултараççĕ:

калаçу стилĕ – кулленхи пурнăçри функцие;

наука стилĕ – пĕлӳ процесне логика тĕлĕшĕнчен моделлес функцие;

ĕç стилĕ – çынсем хушшинчи ĕçе йĕркелесе пырас функцие.

Литература чĕлхисем нацилĕх никĕсĕ çинче пиçсе çитиччен çынсен калаçу чĕлхисенче те, вырăнти диалектсенче те функци варианчĕсем пулман, пулма та пултарайман. Паллах, чĕлхе функцийĕсен аталанăвĕпе пĕр вăхăтрах литература çураличчченхи чĕлхе ларутăрăвĕ литература чĕлхин системине куçса пынă.

Чĕлхе аталанăвĕ хускатакан ыйту чăн малтан чĕлхен шалти тата тулашри условийĕсене пăхса тухса ăнкарма ыйтать. Чĕлхен вăхăт иртнĕçемĕн пулса иртекен кашни улшăнăвĕ, пысăк-и вăл е пĕчĕк, шалти тата тулашри условисенчен килет. Условисем тесе чĕлхен шалти тата тулашри системăлла çыхăнăвĕсене калаççĕ: пĕрремĕшсем чĕлхерех, иккĕмĕшсем – чĕлхепе ытти урăх

структурăсем (çутçанталăк, общество, çын ăс-тăнĕ) хушшинче йĕркеленсе улшăнаççĕ. Çав «ытти» системăсене кура пулса иртекен улшăнусем чĕлхен системипе хăйсем хушшинчи çыхăнусене те ылмаштараççĕ, çав ылмашусене пула чĕлхе тытăмĕнче тата функцийĕсенче улшăнусем пулса иртеççĕ. Тулашри условисем шутне çаксем кĕреççĕ:

а) обществăн социаллă тытăмĕ. Кунта пулса иртекен улшăнусем чăн малтан чĕлхери сăмахсен йышне витĕм кӳреççĕ;

ă) пĕр çĕр-шывра пурăнакан халăх йышĕ: вăл мĕн чухлĕ пĕр евĕрлĕрех, çавăн чухлĕ унти çынсен чĕлхи ют чĕлхе хутшăнăвĕсенчен, витĕмĕсенчен ирĕклĕрех;

б) халăх пĕрлĕхĕсен историллĕ формисем: йăх, халăх, наци;

в) производство, техника, этемĕн çутçанталăка улăштармалли хатĕрĕсемпе мелĕсем. Вĕсенче пулса иртекен улшăнусем чĕлхен сăмах йышĕнче, пĕлтерĕшĕсенче, терминологире, сăмах пулăвĕнче палăраççĕ;

г) наука аталанса, пуянланса хăйĕн сферине, этеме, этем тĕнчине интенсивлă анлăлатса пынă май чĕлхене вĕçĕмсĕр витĕм кӳрет, терминологипе синтаксис чиккисене анлăлатать, семантикăна витĕм кӳрсе тăрать;

д) илемлĕ литература;

е) патшалăх;

ж) идеологи, уйрăмах тĕн идеологийĕ;

з) ытти халăхсемпе патшалăхсем хушшинчи хутшăнусем, уйрăмах суту-илӳ хутшăнăвĕсем;

и) обществăн, этемĕн ăс-тăнĕпе шухăшлавĕ. Шалти сăлтавсем шутне çаксем кĕреççĕ:

1) чĕлхе механизмĕ этем организмĕн физиологи уйрăмлăхĕсемпе шайлашăнни;

2) чĕлхе механизмне лайăхлатма вăхăт çитни;

3) чĕлхене коммуникаци кирлĕлĕхĕнче сыхласа хăварасси;

4) чĕлхе аталанăвĕн туртăмĕпе çыхăнман шалти улшăнусемпе процессем;

5) шалти условисен хирĕçлĕхĕсем, вĕсен характерĕсем;

6) процессене пĕр-пĕринпе кирлĕ пек çыхăнтармалли самантсем.

Çĕнĕ сăмахсем чĕлхе ыйтнипе мар, пурнăç ыйтнипе çуралаççĕ. Çакă вăл общество, наука, патшалăх чĕлхе аталанăвне витĕм кӳрсе тăраççĕ тенине пĕлтерет. Словарьсем, тăван чĕлхепе хатĕрленĕ вĕрентӳ пособийĕсем, пуплев культурипе çыхăннă популярлă литература – çаксем пурте этемĕн пуплев процесне йĕркелеме пулăшаççĕ, çак процеса пула вĕсем ку е вăл енчен чĕлхе аталанăвне те витĕм кӳрсе тăраççĕ.

«Синхронипе» «диахрони» терминсем паянхи чĕлхе наукинче онтологи тата гносеологи пĕлтерĕшĕсемпе çӳреççĕ. Тĕпчевçĕсем вара çак терминсем вырăнне «чĕлхе аталанăвĕ» тата «чĕлхе ĕçлени» терминсене кăмăлларах йышăнаççĕ.

«Чĕлхе аталанăвĕ» тени чĕлхен тулашри тата шалти условийĕсене (лару-тăрăвĕсене), вĕсен улшăнăвне ăнкарса илме ыйтать. Чĕлхе аталанăвĕн процесĕнче чĕлхесен хутшăнăвĕ тата унпа çыхăннă икчĕлхелĕх ыйтăвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чĕлхе аталанăвĕ процесран чĕлхе ĕçлевĕ ăнлава уйăрса илмелле. Чĕлхе йĕркеленсе пынă май хăйĕн парадигматикипе синтагматикине пурнăça кĕртсе пынине *чĕлхе ĕçлевĕ* теççĕ. Чĕлхе ĕçлевĕ тата чĕлхе аталанăвĕ текен процессем пĕр-пĕринпе çыхăннă.

***Чĕлхен историри аталанăвĕн сăлтавĕсем.*** Лингвистика саккунĕсене чĕлхе пулăмĕсен историллĕ улшăнăвĕн туртăмĕсемпе формулисем пек пăхсан, закон йĕркипе аталанса пыракан чĕлхен хăйне евĕрлĕхĕпе саккунĕсене танлаштарас процесс хăйне ăнлантарса пама ыйтать. Çавăн пекех чĕлхери историллĕ улшăнусен сăлтавĕсене тупса палăртнин лингвистика сăлтавĕсем те, историзм принципĕсене аталану факторĕсем пек пăхса ăнлантарма ыйтаççĕ е чĕлхе аталанăвĕнче сăлтавлăх пуррине ăнкарма хистеççĕ. Çапла майпа, Ф. де Соссюр шухăшĕпе диахрониллĕ пулăмсем яланах ăнсăртран хăйне евĕр пулса иртеççĕ, çавăнпа та кунта чĕлхе аталанăвĕн пĕтĕмĕшле саккунĕсемпе сăлтавĕсем çинчен калаçмалла мар, хăйсем хыççăн йĕр хăварса пыракан иккĕмĕшле улшăнусем пирки сăмах хускатмалла.

Чӗлхен историри аталанӑвне тӗрӗс мар ӑнлантарнин сӑлтавӗ историри событисем умлӑ-хыҫлӑн пулса пынинчен килет, сӑлтав яланах следстви патне илсе пымалла, ҫавӑнпа пӗрлех ӑнлава кирлӗлӗхпе ҫыхӑнтармалла. Чӗлхе малалла аталаннӑ май следстви тепӗр следствин сӑлтавӗ пулать; аталану эволюциллӗ тата сикчевлӗ (революциллӗ) пулма пултарать. Пӗр-пӗринпе ҫыхӑнура тӑракан сӑлтавсем вара пӗр факторлӑ, темиҫе факторлӑ тата статикӑлла пулма пултараҫҫӗ. Вӗсене палӑртма май паракан сӑлтавсемпе формӑсем нумай пулни чӗлхе улшӑнӑвӗн сӑлтавӗсен актуаллӑ проблемине пачах та хирӗҫлемест.

Чӗлхе, унӑн тытӑмӗ, норми тата пуплев ӗҫӗ пулса куп курать пулсан, чӗлхе улшӑнӑвӗн сӑлтавӗсене чӗлхепе норма, нормӑпа пуплев процесӗсем хушшинчи ҫыхӑнулӑхсемпе хирӗҫӳлӗхсенче шырамалла, анчах та чӗлхе норми социаллӑ пулӑм пулсан, ӗҫӗ калаҫакансен пӗлӳ процесӗпе тачӑ ҫыхӑннӑ пулсан, чӗлхе улшӑнӑвӗ сӑлтавӗсене те ҫавӑн пекех чӗлхепе общество, чӗлхепе пӗлӳ процесӗ хутшӑнӑвӗсенче шырамалла.

Калаҫу процесне тӗпчекенсен шучӗпе, чӗлхе улшӑнӑвӗн сӑлтавӗ – чӗлхе шухӑша палӑртмалли мел тата тӗрлӗ ҫыхӑну (хутшӑну) мелӗн хатӗрӗ пулса аталаннинче. Меллӗх еннелле ӑнтӑлнине, перекетлӗх принципне нумай чӗлхеҫӗ (тӗслӗхрен, И.А.Бодуэн де Куртенэ, А.Мартине, Г.Курциус) чӗлхе улшӑнӑвӗсен сӑлтавӗ тесе йышӑннӑ.

Литература


*1. Березин Ф.М., Головин Б.Н.* Общее языкознание. М.: Просвещение, 1979.

*2. Кодухов В.И.* Общее языкознание. М.: Высш. шк, 1974.

*3. Степанов Ю.С.* Основы общего языкознания. М.: Просвещение, 1975.

4. Общее языкознание. Формы существования; функции, история языка. М.: Наука, 1970.

*5. Журавлев В.К.* Внешние и внутренние факторы языковой эволюции. М., 1982.

## 5§. Чӗлхе тата пуплев

***Чӗлхе пӗлӗвӗн тӗпчев объекчӗ – чӗлхе.*** «Чӗлхе» ăнлав темиçе пӗлтерӗшлӗ. Пӗрремӗшенчен, вăл – пӗтӗм этемлӗхӗн пурлăхӗ. Кашни çын ку е вăл чӗлхене вӗренме пултарать. Пӗтӗмӗшле каласан, чӗлхе – çынсене пӗр-пӗринпе хутшăнма май паракан пӗртен-пӗр хатӗр. Иккӗмӗшӗнчен, кашни чӗлхе социалла пӗрлӗхе (пӗр-пӗр этноса) палăртать. Унпа çав пӗрлӗхри çынсем усă курăççӗ. Чӗлхе – халăхăн кун-çулне, пурнăçне тӳремӗн çутатса парать. Виççӗмӗшӗнчен, кашни çын мӗнле те пулин чӗлхепе калаçать, вăл унпа усă курма пултарать. Пӗр-пӗр чӗлхене вӗренсе этем унпа кулленхи пурнăçра усă курать.

Чӗлхе – çынсем пӗр-пӗринпе хутшăннă чух пулса иртекен калаçăвăн паллисен пӗрлӗхӗ. Хутшăну çакăн пек пулса иртет: калаçакан пӗр е темиçе çын тепӗр çынна мӗн те пулин пӗлтерет. Кирек мӗнле сăмахпа калакан пӗлтерӗве те текст теме пултаратпăр. Филологи ăслăлăхӗ тӗрлӗ шухăшсене тӗпе хурса текста классификацилет тата çырса кăтартать. Анчах та кирек хăш текста та хăçан, мӗнле тӗллевпе, кам валли, мӗн евӗрлӗ, мӗнле чӗлхепе усă курса çырнине пӗлмелле.

Пуплев – текст тăвакан процесс. Чӗлхепе пуплев хушшинчи уйрăмлăха палăртасси – хальхи чӗлхе пӗлӗвӗн тӗп принципӗсенчен пӗри. Чӗлхепе пуплеве пӗр-пӗринчен уйăрса пăхни наци чӗлхине тата этем чӗлхине пӗтӗмӗшле теори тӗлӗшӗнчен çырса кăтартнă чух пысăк вырăн йышăнать.

Ф. де Соссюр шучӗпе. чӗлхе тата пуплев – пӗр пӗтӗмӗшле пулăвăн икӗ енӗ. «Пуплев пӗр вăхăтрах физика, физиологи, психика пулăмне кӗрет... унсăр пуçне кашни пуплев индивидуаллă, социаллă уйрăм пулать». Ф. де Соссюр ӗнентернӗ тăрăх, чӗлхе – пуплевӗн социалла енӗпе психика енӗ, пуплев вара – унăн (чӗлхен) пайăрлă енӗпе психофизикăлла енӗ е «пӗтӗм çын калаçăвӗн пӗрлӗхӗ» [Соссюр 1977:46-53].

В. фон Гумбольдт вара çапла каланă: «Чӗлхе вăл ӗç тăвакан япала мар, чӗлхе – вăл ӗç». Соссюр Гум-

больдта хирĕçлесе: «Чĕлхе – ĕç мар, ăна калаçакан пассивлă палăртса пырать, çапла вара чĕлхе вăл пуплеврен тухакан япала», – тенĕ. Л.В. Щерба Ф. де. Соссюр пекех пуплеве уйрăммăн палăртнă. Уншăн пуплев – «калаçупа ăнлану акчĕ». Ăсчах шучĕпе, кулленхи пурнăçра ытларах чух пуплев хуçаланать, пуплеврен «чĕлхе материалĕ» тухать [Щерба 1974:36].

Пуплев юхăмĕ ăнлав чĕлхе пĕлĕвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнă пирки хăш-пĕр тĕпчевçĕсем чĕлхене пуплевĕн пĕр пайĕ пек пăхаççĕ. Чĕлхе абстрактлă пулăм мар, вăл – этем ĕçĕ-хĕлĕн результачĕпе компоненчĕ. Пуплев юхăмĕ çынсен пĕр-пĕринпе хутшăнмалли чĕлхе акчĕ, коммуникативлă акчĕ. Схема тăвас пулсан пуплеве икĕ çын пĕр-пĕринпе хутшăннă пек е сигнал параканпа йышăнакан устройство пек, уççăнрах каласан, çыхăну каналĕ пек ăнланма пулать.

Калаканпа (адресантпа) итлекен (адресат) пĕр-пĕринпе хутшăнни вĕсен хушшинче çыхăну пуррине пĕлтерет. Пĕтĕмлетсе çакна калама пулать: коммуникаци акчĕ – кăткăс пулăм, вăл калаçакансен хутшăнăвĕ кăна мар, кунта пуплев обстановкине, чĕлхине, калакан информацие ăнланни кĕрет.

Коммуникаци акчĕ диалог формиллĕ. Вăл – сăмах вĕççĕн е çыру урлă, анлă е ансăр пулма пултарать.

Пуплев акчĕ – ятарласа тăвакан пуплев ĕçĕ. Унăн уйрăм паллисем: шухăшлăх, çирĕп тĕллевлĕх тата конвенцилĕх.

Пуплев актне калаçаканпа итлекен хутшăнаççĕ. Вĕсем пĕтĕмĕшле пуплев хăнăхăвĕсен фончĕпе, хăйсен тĕнче курăмĕпе усă кураççĕ. Пуплев акчĕн сăнлавне ытларах позицисене танлаштарнипе кăтартаççĕ. Пуплев акчĕн пĕлтерĕшĕ пропозициллĕ содержанипе пĕр килмест.

Чĕлхене потенциллĕ пулăм теме пулать. Вăл çыннăн ăс-тăнĕнче ачаран калаçма пĕлнĕ пек, шухăша, çынсен туйăмне калаçу урлă пĕлтернине ăнланнă пек упранать. Пуплев вара – конкретлă ĕç, потенци пурнăçланни, калаçма пĕлни калаçăва куçни.

Пуплев – хăйне уйрăм пулăм, çавăнпа вăл кашни уйрăм çынна уйрăм çын пек сăнламалли чи тухăçлă мел. Çынсен хутшăнăвĕ пуплев урлă пулса пырать. Пуплевре вĕсен кăмăл-туйăмĕ, шухăшĕ, ĕмĕчĕ тата ыт. те палăраççĕ.

Сăнанă тăрăх, тĕрĕссипе пуплев ĕçĕн тĕрлĕ палăрăмĕсенче пуплевсĕр пуçне урăх нимĕн те палăрмасть. Пуплев хăйне уйрăм пулăм пулсан та эпир пĕр-пĕрне ăнланатпăр. Ăнлану вĕççĕр-хĕрсĕр пуплевре паха та тĕрлĕ енлĕ уйрăмлăхсем пуррипе пулса пырать. Çак уйрăмлăхсем шутне пĕтĕмĕшле чĕлхе единицăсем (фонема, морфема, сăмах, предложени), чĕлхе коллективĕ усă куракан тата çак единицăсемпе çыхăннă правилăсем кĕреççĕ. Пĕтĕмĕшле единицăсемпе правилăсем чĕлхе сферине кĕреççĕ. Вăл уйрăм пуплеве пĕр пĕтĕмĕшле пĕрлĕхе пĕрлештерсе пуплев никĕсĕн тытăмне йĕркелет. Çак никĕс çинче пуплев калаçу пек пулса пырать. Калаçупа ăнлану процесĕ çын хутлăхĕнче пулса иртет. Çак процесс çын шухăш-кăмăлне палăртма, пĕр-пĕринпе хутшăнма кирлĕ япала пулса тăрать. Тепĕр майлă каласан, вăл социаллă никĕс çинче тытăнса тăрать. Пуплевĕн социаллă никĕсне чĕлхе тăвать. Апла пулсан пуплев чĕлхе тытăмне пĕтĕмĕшле е социаллă уйрăм пулăм пек кĕрет.

Пуплев этикечĕ – хутшăнусен çирĕп системи, калаçакансен хутшăнăвне обществăра палăртмалли мел.

Пуплев этикечĕ – тӳрĕ калаçăвăн çыхăнăвне кӳрекен пулăм «эпĕ – эсĕ – кунта – халь», вĕсем чĕлхе единицисен пуплев тĕшшине йĕркелеççĕ. Пуплев этикечĕ функциллĕ семантикăн тĕрлĕ сийне кăтартса парать. Унăн наци уйрăмлăхĕ пур, вăл чĕлхе тытăмлăхĕпе, йăла-йĕркепе, тĕн йăли-йĕркипе çыхăннă [Степанов, 1975:136-143].

Чĕлхепе пуплев – пуплев юхăмĕн икĕ аспекчĕ. Вĕсен шутне калаçу, йышăну тата ăнлану процесĕсем кĕреççĕ. Пуплев юхăмне пула пуплев акчĕсем тата вĕссене ăнланни çуралать. Пуплев юхăмне психолингвистика тĕпчет. Çак ăслăлăх чĕлхе пĕлĕвĕпе психологи пĕрлешнипе пулнă, мĕншĕн тесен пуплев юхăмĕ ăс-

тăнра тата çын организмĕнче пулса иртекен психика процесĕсемпе тачă çыхăнă.

Пуплев юхăмне шухăша пайăрлатса калани кĕрет. Пуплев юхăмĕ çын ĕçĕн пĕр пайĕ пулса тăрать. Çын ĕçĕ этем ятарласа туса ирттерекен ĕçсен пĕрлĕхĕнчен тăрать. Пуплев юхăмĕ ытларах чухне ĕç тĕсĕсемпе çыхăннă. Вĕсем çаксем: тулашри чăнлăха ăнланма пулăшакан процессем, коммуникаци процесĕ.

Çынсен мĕнпур ĕçĕсенче социаллă сĕм пур. Вĕсем обществăшăн тата уйрăм çыншăн пурнăçра кирлĕ ĕçсем. Çав шутрах пуплев юхăмĕ ăнланулăх нормисемпе килĕшӳллĕ пулса иртет, тĕрĕсрех каласан ăнланулăх акчĕсем çынсен пĕрлĕхĕн обществăлла практикинче çуралаççĕ.

Пуплев юхăмĕн шайĕсем унăн нумай енлĕ характерне кăтартаççĕ, пуплев юхăмĕ пĕр-пĕринпе çирĕп йĕркепе çыхăннă стереотипсенчен тăрать. Тĕпчевçĕсем пуплевĕн тăватă тĕп шай пуррине палăртаççĕ: мотиваци семантика, грамматика, фонетика.

Мотиваци шайĕ – хатĕрленӳ шайĕ. Вăл калакана ятарлă калаçăва хатĕрлет. Унта пуплев стилĕн уйрăмлăхĕпе пĕтĕмĕшле каласа панин содержанийĕн хăйне евĕрлĕхĕ кĕрет. Семантика шайĕ пĕтĕмлетӳпе калаçу пĕрлĕхне палăртать. Семантика тени тĕрлĕ япалапа шухăша пĕлтерекен сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсенче çуралать.

Грамматика шайне каланин пĕлтерĕшне грамматика формисемпе тата калаканнин пĕлĕвĕпе шайлаштарса йĕркелесе çитерни кĕрет.

Фонетика шайĕ фонемăсене артикуляциленинчен тăрать. Вăл сăмахри тĕрлĕ сасăсен тытăмĕпе сăмах пулăвĕ пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен тан пулнине йĕркелесе пырать.

Чĕлхепе пуплев симметриллĕ пулăмсем мар. Пуплевре чĕлхери потенци кăна палăрмасть, çавăн пекех калаканăн чĕлхен пĕтĕмĕшле йышăннă виçисемпе килĕшсе тăман хăйне евĕр калавĕ те палăрать. Апла пулсан кашни уйрăм çыннăн пуплевĕ чĕлхе тĕлĕшĕнчен ирĕклĕ. Ку ирĕклĕхе çакăн пек ăнлантарма пулать: пу-

плев процесĕ яланах палăртнă лару-тăрура пулса иртет. Кашни çĕнĕ лару-тăру вара çыннăн шухăшлавне çĕнĕ улшăну кĕртет.

Литература

*1. Кодухов В.И.* Основы общего языкознания. М.: Высш. шк., 1974.

*2. Березин Ф.М., Головин Б.Н.* Общее языкознание. М.: Просвещение, 1979.

3. Общее языкознание / Под ред. А.Е.Супруна. М.: Высш. шк., 1983. 2-е изд. М.: Просвещение, 1975.

*5. Соссюр де Ф.* Труды по языкознанию. М.: Прогресс, 1977.

*6.* Общее языкознание: Формы существования, функции, история языка. М.: Наука, 1970. С. 85-95.

*7. Щерба Л.В.* Языковая система и речевая деятельность. Л., 1974.

## 6§. Чĕлхе системи тата чĕлхе норми

Кирек хăш чĕлхе те системăллă. Ку вăл чĕлхен пĕр евĕрлĕ элеменчĕсем пулма пултаракан мĕн пур чĕлхе пулăмĕсене пĕрлештерсе пĕр-пĕринпе çыхăнура тăнине пĕлтерет.

Чĕлхе системи вăл – унăн мелĕсен системи. Чĕлхе тытăмĕ – чĕлхен хальхи вăхăтри пулăмĕсен системи. Чĕлхе системи чĕлхе нормине тӳрремĕн хирĕçлет. Система хĕсни тата чĕлхе норми пуплеве йĕркелесе пыраççĕ. Халăх чĕлхи – чĕлхе системипе норма пĕр-пĕринпе çыхăннин результачĕ.

Тĕпчевçĕсем чĕлхе нормин ыйтăвĕсене тахçантанпах тĕпчеççĕ. Лингвистикăра чĕлхе системипе унăн норми шайлашăвне уçăмлатни вырăнлă пулмалла.

Чĕлхе – лингвистикăн тĕп объекчĕ. Чĕлхе ăнлав чи малтанах «homo sapiens» – çын пулса кайнипе çуралнă этем чĕлхине палăртать. «Чĕлхе» термин пĕр-пĕринпе çыхăннă икĕ пĕлтерĕшлĕ:

1) пĕтĕмĕшле илсен, чĕлхе – уйрăм паллăсен системи;

2) конкретлă чĕлхе – пĕр-пĕр талккăшра тата вăхăтра пĕр-пĕр социум усă куракан система.

Пĕрремĕш пĕлтерĕшĕнче чĕлхе – конкретлă мĕнпур чĕлхесен тĕрлĕ енлĕ пахалăхĕсен тĕп вырăнĕ (центрĕ), этем чĕлхин абстрактлă ăнлавĕ. Конкретлă чĕлхесем – этем пурнăçĕнче усă куракан чĕлхесем.

Чĕлхе – саккунлă йĕркепе аталанакан семиотика системи, унăн социаллă енĕ малта тăрать. Вăл уйрăм индивид валли мар, паллă социум валли йĕркеленнĕ система.

Чĕлхе шалти пĕрлĕхлĕ тытăмĕпе нумай функциллĕ система пулни паллă. Çав функцисем хушшинче информацие тума, усрама тата ламран лама яма пултаракан тĕп операцисене уйрăмах пĕлтерĕшлисен шутне кĕртмелле. Чĕлхе обществăлла пĕлтерĕшлĕ (шухăшлавпа сăлтавланнă), çынна тата ăна хупăрлакан чăнлăха кăтартакан форма, чăнлăхпа пĕлĕве усрамалли форма (эпистеми функцийĕ), унсăр пуçне çĕнĕ пĕлӳ тупмалли мел пулать. Эпистеми функцийĕ чĕлхене пурнăçпа, пĕлӳ функцийĕ вара – çыннăн шухăшлав ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнтарать, урăхла каласан, чĕлхе единицисем чăнлăх элеменчĕсене ят пама (унтан малалла пĕлĕве упрама), çавăн пекех шухăшлав процесĕн кирлĕлĕхне те тытса пыма кирлĕ.

Çав вăхăтрах чĕлхе пĕр-пĕринпе хутшăнмалли тĕп хатĕр (коммуникаци функцийĕ), информацие калаканран итлекен патне çитермелли мел шутланать. Чĕлхен çак пахалăхне пула çыннăн ĕçĕ-хĕлĕн условийĕсемпе кирлĕлĕхĕ килĕшсе тăраççĕ. Урăхла каласан, çыннăн ĕçĕ-хĕлĕ информацисĕр пулса пыраймасть.

Конкретлă чĕлхесен çакăн пек социаллă тĕп формăсем пур:

*идиолект* – пĕр-пĕр конкретлă чĕлхепе калаçакан çыннăн индивидуаллă чĕлхи;

*калаçу* – уйрăм çынсен калаçу уйрăмлăхĕ;

*диалект* – шалти структура пĕрлĕхне сыхласа хăваракан калаçу чĕлхи;

*чĕлхе* – диалектсен пуххи.

Çĕр чăмăрĕ çинче калаçакан çынсем (миллиардпа шутлаççĕ) сахал мар, социаллă пĕлтерĕшлĕ чĕрĕ чĕлхесен шучĕ виçĕ пинрен пуçласа çичĕ пин таран

шутланать (чĕлхесен шучĕ вылянчăк пулни уйрăм чĕлхесене тулли мар инвентаризациленипе, вĕсене уйăрмалли принципсен уйрăмлăхĕсемпе те çыхăннă).

Чĕлхесем нумай пулни ахальтен мар. Чĕлхе пулса кайнин проблемине татса панисĕр пуçне чĕлхе çирĕп туртăмпа улшăнма пултарнине ăнлантармалла. Чĕлхери лару-тăрăва консервацилеме ятарлă нормăлакан хатĕрсем пулманнипе чĕлхе структурин пур пайĕ те улшăнать, вĕсем пĕр вĕçĕмсĕр аталанма пултараççĕ. Çак пулăмăн конкретлă сăлтавĕсене уçăмлах палăртман-ха, анчах вĕсем чĕлхе тытăмĕн принципĕсенче тата вĕсемпе усă курмалли функциллĕ механизм никĕсĕнчех хывăнса юлни ним иккĕленмесĕрех паллă. Наукăпа техника революцийĕ тапхăрĕнче чĕлхесен нумайлăхĕ пĕр-пĕр чĕлхе кирлине хирĕçлеме май памасть-ха.

Хальхи тапхăрта социаллă сумлăх кирлĕ шайра пулманнипе çырулăхсăр чĕлхесем, пĕтес хăрушлăх патне çитнĕскерсем, тĕрлĕ наци тата патшалăх аталанăвĕн процесĕсене пула çĕнĕрен вăй илсе аталанни куç кĕрет.

Чĕлхесене тăванлăх принципĕсемпе килĕшӳллĕн ушкăнлама пулать. Çывăх тăванлăха пĕр-пĕр чĕлхепе калаçакансем хăйсемех туйма пултараççĕ. Аякри тăванлăха наука тĕпчевĕпе çеç çирĕплетме май пур. Хурăнташ (тăванлăхне çирĕплетнĕ) чĕлхесемпе хурăнташлă мар чĕлхесем (пĕр-пĕрин хушшинчи тăванлăхне ĕнентерме май çуккисем) çинчен калаçма пулать. Ностратгипотези тăрăх, уйрăм чĕлхе çемйисен речĕ чи авалхи тапхăртанах пĕр пĕтĕмĕшле çемьене, ушкăна пĕрлешет.

Чĕлхен шалти тытăмне тӳрех сăнама май килмест. Ун пирки чĕлхе ĕçĕ-хĕлĕн продукчĕсене – текстсене, урăхла каласан, конкретлă чĕлхесен конкретлă пуплев ситуацийĕсене сăнаса тĕпчени тăрăх калаçма пулать. Чĕлхене пуплев урлă тĕпчесе пĕлесси час-часах чĕлхепе пуплеве уйăрайманни е пуплев чĕлхене витĕм кӳме пултарнине шута илменни патне илсе çитерет.

Кирек мĕнле аталаннă чĕлхе те пĕлӳ объекчĕ кăна мар, çав чĕлхе пирки çырса кăтартмалли тата ăна аллă илмелли меслет те пулса тăрать. Кун пек чухне ăна тивĕçлĕ терминологипе усă курса çырса кăтартаççĕ.

Чĕлхе хăйĕн тытăмĕпе тата функцийĕсемпе виçĕ тĕрлĕ паха енпе палăрса тăрать. Чĕлхе вăл : а) структура (е система), унăн единицисен, категорисен системин шалти йĕрки;

ă) нумай вăхăт хушши йĕркеленнĕ, малалла аталанма пултаракан чĕлхе норми;

б) чĕлхене, ун тытăмĕпе нормине пĕлекен, пуплевре хăйĕн шухăшне, туйăмне палăртма пултаракан çыннăн пуплев ĕçĕ-хĕлĕ.

Чĕлхе – структура (система), чĕлхе – норма, чĕлхе – калаçаканăн пуплев ĕçĕ-хĕлĕ – çакнашкал чĕлхе пĕлĕвĕн нумай енлĕ тĕпчев ыйтăвĕ.

***Чĕлхе норми.*** Норма – чĕлхе вĕрентĕвĕн ăнлавĕ. Хальхи лингвистикăра чĕлхе системин шалти тытăмне мала хураççĕ. Çавăнпа пĕрлех чĕлхе функцийĕсене тĕпчесси вăй илсе пырать. Çак пулăм теори ыйтăвĕсен ретне норма ăнлава та кĕртме хистет.

Асăннă ăнлава расна лингвистика шкулĕсенче тата чĕлхе наукин тĕрлĕ юхăмĕсенче ĕçлекен ăсчахсем тĕрлĕрен ăнланаççĕ. Ытларах ку ăнлав литература чĕлхин уйрăмлăхĕсене пăхса тухнă чух тата чĕлхе культурине вĕрентнĕ чух тухса тăрать. Çавăнпа пĕрлех норма категорине чĕлхен пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕнче те курма пулать. Лингвистсем Ф.де Соссюр ку тĕлĕшпе панă шухăшсене малалла аталантараççĕ. Маларах асăннă палăртусем норма ăнлава тата та анлăрах пăхма хистеççĕ.

***Чĕлхе норми ăнлавăн историйĕ.*** Ф. де Соссюр нормăна хăйне тĕллĕн лингвистика ăнлавĕ пек уйăрман. Ун вĕрентĕвĕнче çав вăхăтрах чĕлхене система пек анчах мар, традициллĕ е нормативлă система пек пăхас шухăшсем те пулнă.

Паллă, Ф. де Соссюр теорийĕн тĕп положенийĕсем урăх ыйтусемпе çыхăннă, çавăнпа та унăн концепцийĕнче норма çинчен калани туллин палăрман.

Норма ăнлава кĕскен те уççăн 1926 çулта Э.Альман хăйĕн статйинче уçса панă, ăна вăл Анналти финсен ăслăх академийĕн ĕçĕсенче пичетлесе кăларнă. Ку ĕçри тĕп положени: чĕлхе системи вăл конкретлă «ка-

лаçăвăн» абстракцийĕ те, «нормативлă идеологийĕ те». Альман статйинче чĕлхе нормин кирлĕ характеристикине каласа тухни пур; анлă шайра ун çинчен пĕрремĕш хут Прагăри лингвистсем В.Матезиус, Б.Гавранек, Б.Трнка, Й.Вахек тата ыттисем çырса кăтартнă. Гавранек нормăна тĕрлĕ енчен пăхать: пĕр енчен, норма чĕлхе системипе пĕр тан шутланать, ку вăл чĕлхе системинче норма ăнлав пулмалла тенипе çыхăннă, тепĕр енчен, норма чĕлхен функцийĕпе тата нормăн тĕп паллипе – ăна общество йышăнмалла тенипе – çыхăннă. Нормăна çакăн пек ăнланни Ф. де Соссюр идейисемпе (чĕлхепе пуплеве уйрăм пăхнипе) çыхăннă. Прагăри лингвистсем чĕлхен социаллă функцине тĕпе хунă, урăхла каласан, тӳрремĕнех обществăпа тата чăнлăхпа çыхăннă лингвистика паллисен системи евĕр пăхнă.

Э. Косериу трактовкинче системăпа норма чĕлхен икĕ расна планĕ пек тухса тăраççĕ: система чĕлхен структурăллă потенцине палăртать, норма чĕлхере конкретлă пурнăçланнипе тата общество йышăннипе çыхăннă. Косериу асăрхаттарăвне çак пĕлтерĕшпе ăнланма пулать: «норма – çирĕпленнĕ чĕлхе».

Вырăссен традициллĕ чĕлхе вĕрентĕвĕнче норма ăнлава палăртнă чухне шухăшсем хирĕçле пулни характерлă. Пĕр енчен, норма кунта темле пĕрлĕхлĕ усă куракан (пурте йышăннă) чĕлхе мелĕ пек палăрать. Çак мелсем тĕрĕс, тавлашусăр пулмалла. Тепĕр енчен, нормăна правилăсен пуххи пек пăхас туртăм та пур. Вырăс чĕлхе наукинче ку терминăн синкретизмĕ палăрать. Кунта чĕлхе нормипе литература чĕлхин норми ăнлавсем пĕр-пĕринпе яланах чикĕленмеççĕ, нумай лингвистсен чĕлхе норми литература чĕлхин норми çеç мар, вăл тĕрлĕ чĕлхе идиомисен пĕрлештерекен ăнлав та.

***«Структура – «норма» – «узус» ăнлавсене танлаштарни.*** Э. Косериу чĕлхе нормине еплерех ăнланнине шута илсе ăна çакăн пек палăртмалла: норма – чĕлхе практикинче суйланнă, чĕлхе тытăмĕнче çирĕпленнĕ тата йăлана кĕнĕ элементсен пĕрлĕхĕ.

Чĕлхе нормине кун пек ăнлантарнине тĕрĕслетме тивет. Çак ыйтусенретĕнче чи малтанах норма ăнлав-

па чӗлхе тытӑмӗ тата узус ӑнлавсене мӗнле шайлаштармалла текен ыйту тухса тӑрать. Калас пулать, асӑннӑ триадӑра сӑмах чи малтан нормӑпа узус тата чӗлхен шалти тытӑмӗ ҫинчен пырать. Пирӗн шутпа, чӗлхен шалти йӗркине логика тӗлӗшӗнчен «структура» терминпа палӑртмалла.

Нормӑра хальхи чӗлхе структури палӑрнипе пӗрлех унӑн тата темле уйрӑм, нормӑна вырнаҫман элементсем пур. Вӗсем асӑннӑ чӗлхе структурин иртнӗ тӑрӑмне кӑтартса параҫҫӗ.

Иккӗмӗш ыйту вӑл – нормӑпа узус шайлашӑвӗ. Чӗлхе структурипе узус чӗлхе нормине чикӗлесе тӑраҫҫӗ. Структурӑпа норма шайлашӑвне лингвистсем тӗрлӗрен пӑхаҫҫӗ.

Кирек мӗнле чӗлхе те хӑйӗн формипе конкретлӑ социаллӑ норма пек тухса тӑрать. Чӗлхе норми ӑнлав чӗлхе пӗлӗвӗ аталанӑвӗн пур тапхӑрӗшӗн те характерлӑ пулнӑ. Ӑна тӗрлӗ шухӑшсемпе ҫыхӑнтарнӑ. Ҫавӑнпа та ку термина тӗрлӗрен ӑнланаҫҫӗ тата ӑнлантараҫҫӗ.

XIX ӗмӗрти чӗлхе пӗлӗвӗнче норма ыйтӑвне пӗтӗм этемлӗхпе, нацилӗхпе тата индивидуаллӑхпа ҫыхӑнтарса тишкернӗ. Литературӑллӑ-ҫыруллӑ нормӑпа пуплев акчӗн пайӑрлӑхне танлаштарнине пула младограмматистсем узус текен ӑнлав кӑларса тӑратнӑ.

XX ӗмӗрти лингвистикӑра норма проблеми уйрӑмах актуаллӑ пулса тӑрать. Пӗр енчен, ку чӗлхе системине ӑнланса илнипе, тепӗр енчен, литература чӗлхисемпе пуплев культурине тӗпченипе ҫыхӑннӑ.

Хальхи вӑхӑтри теорисем тӑрӑх, чӗлхе системине пуплевпе танлаштарнинчен чӗлхе норми йӗркеленет. Чӗлхе системине чӗлхен абстрактлӑ схеми тата структурӑллӑ потенцийӗсем пек ӑнланмалла. Ҫакӑнпа килӗшӳллӗн чӗлхе норми ҫак структурӑллӑ схемӑн мелӗсене чӗлхен конкретлӑ истори форминче пурнӑҫа кӗртмелли хатӗр шутланать.

Э.Косериу нормӑна системӑн историлле коллективлӑ пурнӑҫланӑвӗ пек ӑнланнӑ. Вӑл ҫапла ҫырнӑ: «...Норма мӗн калама юранипе мар, общество калама хӑнӑхнипе килӗшсе тӑрать... Норма чӗлхере ҫирӗпленнӗ, унӑн

традицилле формисемпе тӳр килет. Шăпах çак пĕлтерĕш урлă норма системăн пĕр шайĕ пулни палăрать».

Чĕлхе норми конкретлă историлле пулăм пулнă май сахалтан та виçĕ паха енпе палăрса тăрать – суйлавлăх, çирĕплĕх (традицилĕх) тата тавлашусăрлăх (е тĕрĕслĕх). Чĕлхе нормин суйлавлăхĕ кашни чĕлхе норми чĕлхе системин мелĕсене хăйне майлă пурнăçа кĕртнине тата çыннăн пĕлес ĕçĕ-хĕлне тĕрлĕрен палăртнине пĕлтерет. Шăпах çак уйрăмлăха пула чĕлхе норми аталанма тата вариантлă пулма пултарать. Суйлавлăх чĕлхе нормине хирĕçӳллĕ, динамикăллă тата кăткăс пулăмлă тăвать.

Çак вăхăтрах чĕлхе норми çирĕпленсе ларнă пулăм шутланать. Унăн çирĕплĕхĕ чи малтанах нормăна уйрăм чĕлхе коллективĕн кашни членĕ çирĕп уямаллине пĕлтерет. Ăруран ăрăва куçнипе вăл калаçаканăн пуплевне вăхăтпа, вырăнпа, социаллă лару-тăрупа, пĕлӳ шайĕпе тата ăс-хакăл аталанăвĕпе пĕрлештерет. Çирĕплĕх тени чĕлхе хăй традицийĕсене сыхласа хăварнинче, чĕлхе культури майĕпен аталанса пынинче палăрать.

Чĕлхе нормин тавлашусăрлăхĕ чĕлхе системин шалти палăрăмĕсенчен мар, тулашри хистевсенчен (требованисенчен) – вăл е ку чĕлхе факчĕсене халăх йышăннинчен килет. Общество йышăннă сăмах халăха тивĕçлĕ çеç мар, тĕрĕс те шутланать.

Норма конкретлă историлле социаллă пулăм пулнă май чĕлхесем пĕр-пĕринпе хутшăннăçемĕн йĕркеленнĕ системăллă тата системăсăр пулăмсен вариантлăхне йышăннине сыхласа хăварать. Чĕлхе нормин вариантлă пулăмне уйăрса илме иккĕмĕшле паллăсем пур. Вĕсем çаксем: стиль, территори тата социаллă паллăсем.

Норма пĕр-пĕр чĕлхепе усă куракансăн пуплевне йĕркелесе пырать. Чĕлхе норми кирек хăçан та пурнăçа кĕртнĕ система пек, пуплев хатĕрĕ пек палăрать.

Чĕлхе норми вăл – общество чĕлхе практикипе çирĕплетнĕ тата истори тĕлĕшĕнчен суйланнă чĕлхе системин çирĕп, традицилле элеменчĕсен пĕтĕмлĕхĕ.

Общество чĕлхе нормине чĕлхе практикипе çирĕплетет. Вăл вара пĕр евĕрлĕ пулмасть. Чĕлхе нумай функциллĕ, çавăнпа чĕлхе норми те пĕр евĕр пулмасть. Чĕлхе нормăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе типĕсене йĕркелет. Чĕлхе нормин тĕп тĕсĕсем çаксем шутланаççĕ: узус, литература чĕлхи тата пуплев стилĕ.

Узуаллă нормăна диалектсемпе калаçусенче, социаллă диалектсемпе жаргонсенче тĕл пулма пулать. Вăл чĕлхен кулленхи калаçу формисен интердиалектăн тĕрлĕ тĕсĕсенче курăмлă. Узуаллă нормăсен нумай енлĕхĕ тата вĕсем улшăнма пултарни чĕлхен виçĕ енне: историне (хронологи), талккăшне (ареал), социаллăхне кăтартать.

Литература чĕлхи тĕп норма пулнă май çакăн пек паллăсемпе уйрăлса тăрать:

1) нормăланă тата кодификациленĕ çырулла форма пурри; нормализаци тата кодификаци процесĕсем тĕрлĕ истори тапхăрĕнче тата тĕрлĕ халăхăн хăйне майлă пулса иртет, анчах вĕсем кирек мĕнле литература чĕлхине те йĕркеленме пулăшаççĕ;

2) чĕлхепе пурте калаçма пултарни; литература норми пĕтĕмĕшле сăн-сăпатлă: вăл ытти пĕтĕм территориллĕ, социаллă тата нумай функциллĕ чĕлхен вариансене хирĕç тăрать;

3) нумай функциллĕ пулни; литература чĕлхипе халăхăн пур ушкăнĕсенче усă кураççĕ, çавăнпа та вăл стиль енчен пайланнă.Чĕлхе нумай функциллĕ пулни тата стиль енчен пайланни чĕлхе стилĕсене пырса тивекен ыйтăва тӳрремĕн хускатма май парать. Чĕлхе стилĕсем – чĕлхе нормин коммуникациллĕ тата функциллĕ уйрăм тĕсĕсем. Чĕлхен çыруллă форми аталансан кĕнеке тата кулленхи калаçу типĕсен уйрăмлăхĕсене, çыруллă тата çыруллă мар пуплевсене танлаштарнипе чĕлхе стилĕсем йĕркеленеççĕ. Анчах та халăх чĕлхинче литература тата çыруллă чĕлхе уйрăмлăхĕсем пулсан функциллĕ икчĕлхелĕх атлаланса каять, ăна уйăрса илмелли паллă вăл – пĕр чĕлхепе çыруллă, тепринпе калаçу чĕлхи пек усă курни. Çакăн пек чухне чĕлхен кĕнеке тата калаçу типĕсем хушшинче урăхла пулăмсем пулма пултараççĕ.

Çапла майпа норма общество çирĕп тата пĕрпеклентернĕ чĕлхе мелĕсене тата вĕсемпе усă курмалли правилăсене пĕлсе тăрса шута илекен тата аталантаракан пĕрлĕх, литература чĕлхин наци тапхăрĕн хайне евĕр палли шутланать. Чĕлхе нормине тата анлăрах ăнлантарас пулсан вăл чĕлхен аталану çул-йĕрĕн пур тапхăрĕнче те унăн тĕп палли пулнине палăртмалла.

«Чĕлхе» термин икĕ пĕлтерĕшлĕ терĕмĕр. Тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх чĕлхе вăл – система, унăн хăйĕн структури пур. Чĕлхе аталаннă май унăн норми пулса каять.

«Норма» термин чĕлхе пĕлĕвĕнче час-часах икĕ пĕлтерĕшпе çӳрет. Норма тесе, пĕрремĕшĕнчен, чĕлхере çирĕпленнĕ, пĕтĕмĕшле йăлана кĕнĕ сăмахсемпе усă курнине, иккĕмĕшĕнчен, пĕр-пĕр грамматика, словарь е справочник сĕнекен, унсăр пуçне пĕр-пĕр паллă писатель е поэт авторитечĕпе çирĕплетнĕ сăмахсемпе усă курнине калаççĕ.

Пĕр терминах тĕрлĕ пулăмсене палăртни куç кĕрет. Пĕрремĕш палăрту çакна ăнланма пулăшать: норма чĕлхерех пур. Иккĕмĕшĕнчен, нормăна чĕлхене грамматикăсем илсе кĕреççĕ пек пулса тухать. Çапла вара, çӳлерех асăннă ăнлавсене пĕр-пĕринчен уйăрса пăхма тивет.

Литература

1. Большой энциклопедический словарь: Языкознание. М.: Большая рос. энцикл., 1998.

2. *Ицкович В.А.* Языковая норма. М.: Просвещение, 1968.

3. *Кодухов В.И.* Общее языкознание. М.: Высш. шк., 1974.

4. *Реформатский А.А.* Введение в языкознание. М.: Просвещение, 1967.

## 7§. Чĕлхе политики тата чĕлхе союзĕ

***Чĕлхе политики ăнлав.*** Чĕлхе политики – идеологи принципĕсен пĕрлешĕвĕ тата обществăра, патшалăхра чĕлхе ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпеирттерекен практика мероприятийĕсем.

Чĕлхе политики ытларах нумай чĕлхеллĕ патшалăхра йывăрлăхсем кӳрет, мĕншĕн тесен ун пек чух çак тĕлĕшпе тĕрлĕ факторсене шута илмелле: нумайчĕлхелĕх, наци тытăмĕн хăйне евĕрлĕхĕ тата тĕрлĕ нацисен хутшăнăвĕ, уйрăм чĕлхесене тата вĕсене общество пурнăçĕнче аталантарса пырассин пĕлтерĕшĕ.

Чĕлхе политики шайĕнче идеологи принципĕсем тата практика мероприятийĕсем тачă çыхăннă, пĕр-пĕрне пăхăнса тăраççĕ. Чĕлхе политики наци политикин тĕп пайĕ шутланать, анлăн пăхсан, вăл наци политикин пĕрлехи принципĕсене пăхăнать. Чĕлхе политики общество чĕлхене витĕм кӳнипе çыхăннă, вăл чĕлхен методологи тата социаллă никĕсĕ пулса тăрать.

Чĕлхе политики лексика-семантика системине витĕм кӳрет, ытларах политикăпа общество лексики ун витĕмне лекет, литература чĕлхин стилистика дифференциацийĕ, чĕлхери диалект уйрăмлăхĕсем тата патшалăх туса ирттерекен орфографи реформисем пĕтĕмпех чĕлхе политикипе çыхăннă.

Социаллă обществăра татса памалли чи пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусем çаксем: наци чĕлхисен пĕртанлăхĕ, наци политикиллĕ патшалăх йĕркелесси, унта наци чĕлхипе усă курма ирĕк парасси, наци культурине тăван чĕлхепе аталантарса ăна валли кирлĕ условисем тăвасси: авалтан çырулăхсăр пулнă чĕлхесен алфавитне йĕркелесси, тăван чĕлхепе вĕрентесси, ăслăха тата этеплĕхе аталантарасси, массăллă пĕрлехи ĕçсенче (пичет, радио, телевидени, кино) тăван чĕлхепе анлă усă курасси, унсăр пуçне официаллă тата канцеляри ĕçĕсене тăван чĕлхепе йĕркелесе пырасси.

Чĕлхе аталанăвăн социаллă факторĕсенчен пĕри пулнипе чĕлхе политики патшалăхри чĕлхе пулăмĕсен тĕрлĕ енĕсене (чĕлхесене, диалектсене, кĕнеке тата ка-

лаçу чĕлхин формисене), унсăр пуçне чĕлхе системин аталанăвне витĕм кӳрет, çав вăхăтрах усă курас тĕлĕшпе чĕлхе элеменчĕсен кирлĕлĕхпе кирлĕмарлăхне сăнаса тăрать.

Чĕлхе политикин программисене обществăра пулса иртекен чĕлхе ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе çыраççĕ. Çак ыйтусем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ:

а) анлă пĕлтерĕшлисем: чĕлхе пулăмĕсемпе официаллă ĕç, кашни кунхи, шкул, хаçат-журнал, радио, телевидени, илемлĕ литература, поэзи сферисенче пĕлсе усă курасси;

б) ансăр пĕлтерĕшлисем: пĕр чĕлхе шайĕнче пулса иртекен улшăнусем.

***Чĕлхе политикин типологийĕ.*** Чĕлхе политикин программине йĕркеленĕ чух чĕлхе ыйтăвĕсемпе пĕрлех экстралингвистика мотивĕсене те тĕпе хураççĕ:

1) пĕр-пĕр класăн паянхи тата нумай вăхăтлăх интересĕсене;

2) халăхсен пĕрлешĕвĕн интересĕсене;

3) культурăна аталантарас тĕллевсене;

4) тĕн ыйтăвĕсене.

Политика уйрăмлăхсене тата тĕрлĕ мотивсене шута илсен, чĕлхе политикин тĕп параметрĕсене палăртма пулать.

Тĕллевлĕхĕ енчен пăхсан:

а) чĕлхе политикин ретроспективлăхне;

ă) чĕлхе политикин перспективлăхне.

Класс тытăмне тата классен интересĕсене кура чĕлхе политики çакăн пек пайланать:

а) чĕлхе политикин демократилĕхĕ – чĕлхе ыйтăвĕсене халăх интересĕсене шута илсе татса пани;

ă) чĕлхе политикине хирĕçле пыни (тĕслĕхрен, Африкăри çамрăк патшалăхсенчи чĕлхе политики метрополи чĕлхине, наци чĕлхи туса хурса, çак чĕлхепе ытларах çӳлти классем, интеллегенци тата хулара пурăнакансен хăш-пĕр сийĕсем калаçмалла туса хуни).

Халăх хăйне евĕрлĕхне кура:

а) чĕлхе политикин интернационаллă характерĕ, вăл нумай чĕлхеллĕ патшалăхра пур чĕлхесене те пĕр тан

тесе пăхать, ку е вăл чĕлхери ют чĕлхе элеменчĕсене шута илет;

ă) енчен те вăл нумай чĕлхеллĕ патшалăхра пĕр чĕлхене тĕп чĕлхе туса хунă пулсан тата чĕлхене урăх чĕлхе элеменчĕсем кĕресрен сыхласа тăрать пулсан чĕлхе политикин нациллĕ характерĕ палăрать.

***Чĕлхе политикин тапхăрĕсем.*** Пĕрремĕш тапхăр – чĕлхе политикин тĕллевĕсене тата задачисене йĕркелесси. Ку тапхăрта чĕлхе варианчĕсене тĕрĕс уйăрса илесси тĕп вырăн йышăнать. Енчен те чĕлхе политики перспективлă (мал тĕллевлĕ) пулсан, вăл чĕлхе тăрăмĕн улшăнăвĕсене тата пур лингвистика нормисене те шута илет. Çавăнпа та кун пек программăсене палăртнă темăпа шайлаштарса чĕлхе пулăвĕсемпе усă курмалли çĕнĕ правилăсем кĕртеççĕ.

Чĕлхе политикин тепĕр тапхăрĕ лартнă тĕллевсене пурнăçлама хатĕрленесси, тĕрĕсрех каласан, суйласа илнĕ оптималлă лингвистика варианчĕсене саккунласси е кодификацилесси.

Кодификаци вăл, анлăн пăхсан, чĕлхе пулăвĕсене çĕнĕ правилăсемпе усă курас тĕлĕшрен саккунлă çирĕплетни, суйласа илнĕ лингвистика мелĕсене саккунлă йышăнни.

Чĕлхе политикине патшалăх учрежденийĕсем (комитетсем, академисем, институтсем) е патшалăхпа çыхăнман наука тата общество организацийĕсем тытса пыма пултараççĕ.

Чĕлхе политикине пурнăçлассин тепĕр тата юлашки тапхăрĕ: чĕлхе политикине пурнăçа кĕртесси, калаçакансене çĕнĕлĕхсене йышăнтарасси (ăна чĕлхе политикине татса паракан органсем палăртаççĕ).

Калаçакансем çак сĕнӳсене пĕтĕмĕшле йышăнсан та, йышăнмасан та пултараççĕ.

Чĕлхе союзĕ – чĕлхе пĕрлĕхĕсен ареаллă-историллĕ уйрăм типĕ. Чĕлхе союзĕпе çыхăннă шухăшсем И.А. Бодуэн де Куртенэ ĕçĕсенче палăрнă. Чĕлхе союзĕ ăнлава тата термина пĕрремĕш хут Н.С. Трубецкой (1923) «Вавилонская башня и смешение языков» статйинче ăнлантарса панă, унта вăл тĕрлĕ чĕлхесен

çемйисене тата чӗлхе союзне пӗр-пӗринчен уйӑрма вӗрентнӗ. Н.С. Трубецкой каланӑ тӑрӑх, чӗлхе союзӗ чӗлхесен ушкӑнӗнчи синтаксисра тата морфологире палӑракан тӗрлӗ пӗрпеклӗхсене тата фонетикӑри тулашри пӗр евӗрлӗхсене тупса палӑртать. Чӗлхе союзӗн тӗслӗхӗ балкан чӗлхисен союзӗ пулса тӑрать.

Балкан чӗлхисен союзӗсӗр пуçне чӗлхе союзӗ шутне Атӑлçи чӗлхе союзӗ кӗрет, вӑл финн-угор тата тӗрӗк чӗлхисене пӗрлештерсе тӑрать. Кунта мари, удмурт тата тӗрӗк чӗлхисем: пушкӑрт, тутар, чӑваш чӗлхисем кӗреççӗ. Иран, индоари, дравид, тибет-китай чӗлхисем те пӗр чӗлхе союзне кӗреççӗ.

Чӗлхе союзӗн аталанӑвӗ Кӑнтӑр-Хӗвелтухӑç Азире, Африкӑра тата Океанире пысӑк вырӑн йышӑнать.

Чӗлхе союзӗ кӑткӑс лингвистика объекчӗ шутланать, унӑн ыйтӑвӗсене истори, чӗлхе пӗлӗвӗн структурӑпа типологи чӗлхе мелӗсемпе тӗпчеççӗ. Çак ыйтупа И.А. Бодуэн де Куртенэ, Н.С. Трубецкой, Р.Якобсон, Г.Бирнбаум, В.Скаличка, В.Георгиев, А.В. Десницкая, Б.А. Серебренников, В.Н. Топоров, Т.В. Цивьян, Г.В. Церетели ӗçленӗ.

Литература

1. *Дешериев Ю.Д.* Социальная лингвистика: К основам общей теории. М., 1977.

2. Лингвистический энциклопедический словарь. М.: Сов. энцикл. М., 1990.

3. *Никольский Л.Б.* Синхронная социолингвистика. М.: Наука, 1976.

4. *Роджер Белл.* Социолингвистика. М.: Межд. отношения, 1980.

5. *Швейцер А.Д., Никольский Л.Б.* Введение в социолингвистику. М., 1978.

6. *Швейцер А.Д.* Современная социолингвистика. М.: Наука, 1977.

## II пай. ЧĔЛХЕ ТАТА УНĂН СИСТЕМИ

### 1§. Чĕлхе системи тата чĕлхе системăлăхĕ

Чĕлхе системи (çак сăмах грек чĕлхинчи «systema» сăмахран пулса кайнă, вăл «тулли пайсенчен пулнăскер; пĕрлешӳ, пĕлтерĕшлĕ» чĕлхе элеменчĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнаççĕ тата пĕрлĕх тăваççĕ тенине пĕлтерет. Чĕлхе системин компоненчĕ пĕччен çӳремест, системăри ытти компонентсемпе хирĕçтăрулăхра пулать. Çавăнпа та ăна чĕлхе системинчи кирлĕлĕхе пăхса уйăраççĕ. Хальхи чĕлхе системи тени пĕр-пĕринпе çыхăнакан ăнлавсене кĕртет – чĕлхе шайĕсем, чĕлхе единицисем, парадигматика хутшăнăвĕ, чĕлхен паллăлăхĕ, функцийĕ тата форми, синхронипе диахрони, анализпа синтез т.ыт.те «Чĕлхе системи» ăнлавпа ансăр пĕлтерĕшпе те усă кураççĕ.

Система – элементсен е пайсен пĕрлĕхĕ. Чĕлхе пĕрлĕхĕ тесе аллофонсене, морфсене, сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене, предложенисене е, урăхла каласан, фонемăсене, морфемăсене, сăмахсене, сăмах майлашăвĕсен структурăллă ĕлкисене калаççĕ. Чĕлхе пĕрлĕхĕн хутшăнăвĕсем тесе парадигматика тата синтагматика хутшăнăвĕсен пĕтĕм типĕсене калама йышăннă.

Чĕлхе системин никĕсне пĕр шайра тăман чĕлхе единицисем тата вĕсен хутшăнăвĕсене çыхăнтаракан фонемăсен ушкăнĕсем, квазиморфсем, сăмахсен аналитикăллă формисем, анлă предложенисем хывăнаççĕ.

Чĕлхе системин никĕсĕ чĕлхе системин варрине (центрне) тăвать. Чĕлхе системин периферине сахал усă куракан сăмахсем, сăмах пулăвĕн вилĕ сийĕсем тата чĕлхерен тухса ӳкме пултаракан грамматика категорийĕсем тăваççĕ.

Чĕлхерен тухса ӳкекен грамматика категорийĕсем сăмах тăваслăх тапхăрĕ витĕр тухаççĕ, вара юлашкинчен лексикăна куçаççĕ, словарь факчĕ пулса çирĕпленеççĕ.

Чĕлхе – ахаль единицăсен номенклатури, сăмахсен купи тата морфемăсен, фонемăсен тата сăмахсен хисепĕ

кăна мар. Чĕлхе – пĕрлĕхлĕ система. Чĕлхе системи – чĕлхе единицисен тата вĕсен пайĕсен пĕрлĕхĕ. Кашни чĕлхе единици системăна уйрăм пай пек кĕрет, ытти единицăсемпе тата чĕлхе системин пайĕсемпе тӳрремĕн тата куçăммăн çыхăннă. Чĕлхе системи кăткăс тата нумай планлă. Чĕлхе – уçă, динамикăллă система.

Чĕлхе системи – чĕлхере мĕн пурри кăна мар, çав вăхăтрах чĕлхен пултараслăхĕ унăн норминче тата калаçура палăрни. Хăйĕн пĕтĕм ресурсĕсене пĕтерме пултаракан чĕлхе çук тата пулма пултараймасть. Енчен те çавăн пек пулас пулсан, чĕлхе малалла аталанаймастчĕ, чи кирлĕ калаçу хатĕрĕ пулма пăрахатчĕ.

Система – çирĕп тытăмлă структура, вăл чĕлхене аталану тата хутшăну условийĕнче тĕреклĕ тăвать. Чĕлхе системи унăн аталану çул-йĕрне палăртать; кашни чĕлхере, унăн норминче системăллă (структурăллă) тата ассистемăллă (деструктурăллă) фактсене курма пулать.

Акă чĕлхе системи хăйĕн пултараслăхне пурнăçлайманнине кăтартакан темиçе тĕслĕх. Вырăс чĕлхинчи хупă сасăсен системи янăравлă тата янăравсăр хупă сасăсен хирĕçлĕхне тăвать. Анчах та ку система тĕппипех уçăмлă мар. Тĕслĕхрен [ц] тата [ч] аффрикатăсен янăравлă мăшăрĕ çук, анчах та вĕсем хытă тата çемçе пулма пултараççĕ; [м], [м´], [н], [н´], [р], [р´], [л], [л´] сонорлă хупă сасăсен янăравсăр мăшăрĕ çук, пулма та пултараймасть, анчах та вĕсем çемçе тата хупă пулма пултараççĕ; [в] тата [ф] хупă сасăсем янăравлă тата янăравсăр пулма пултараççĕ, ку хирĕçтăру парадигматика шайĕнче кăна курăнать.

Чĕлхене система пек пăхма чи малтан Фердинанд де Соссюр пуçланă.

**Чĕлхен системăлăхĕ.** Чĕлхен тĕрлĕ палăртăмĕсенче унăн системăллă характерне кăтартаççĕ. Чĕлхене паллăсен пĕрлĕхĕ тесе шутлакансем те, чĕлхери паллăсен характерне хирĕçлекенсем те чĕлхене системăллă пĕрлешӳ тесе шутлаççĕ. Системăлăх – чĕлхен чи паллă характеристики. Чĕлхе – системăллă пĕрлешӳсен шутне кĕрет тесе те шутлама пулать. Анчах та система тата систе-

мăлăх терминсене тĕрлĕ ĕçсенче тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. Система ăнлав наукăна кăна мар, кулленхи пурнăçа та кĕнĕ. Эпир шыв парса тăнин системи пирки, занятисене тăтăшах юлса килни çинчен калаçатпăр. Наукăра «система» терминпа анлă усă кураççĕ, анчах та ученăйсем хушшинче пĕр пĕтĕмĕшле шухăш çук. Чĕлхе системи ăнлав хăш чух чĕлхе структури ăнлавпа, çавăн пекех система ăнлав структура ăнлавпа танлашать.

Чылай лингвистсем система тата структура ăнлавсене чикĕлеççĕ. Акă, тĕслĕхрен, А.А. Реформатский çапла çырать: «Система – пĕр евĕрлĕ, пĕр шайри элементсен пĕрлĕхĕ». Енчен те системăна пĕр шайри, пĕр тĕрлĕ элементсен пĕрлĕхĕ пек ăнлансан, калаçу чĕлхе системин пĕтĕмĕшлĕхĕ пирки мар, системăсен йĕрки пирки кăна пулма пултарать. Чĕлхене ку чухне системăсен системи е система тесе уçса пани унта «çумсистемăсен» речĕ пулнине те пĕлтерет.

Система ăнлавăн палăртăмĕ пĕр-пĕринпе çыхăннă пĕрлĕхлĕ элементсем пек пулнине тата элементсен горизонтальлĕ тата вертикальлĕ пыракан хутшăнăвĕсене чех ученăйĕ В.Скаличка палăртать. Ку определени пĕрлĕхлĕ единицăсене шырама чĕнет пулсан та, çав вăхăтрах чĕлхен тĕрлĕ характерлă пăтрашăвĕ патне те çитерет.

Ытти ученăйсем, тĕслĕхрен, Н.Н. Коротков, А.А. Реформатский, система чĕлхен пĕр евĕрлĕ элеменчĕсен хутшăнăвне кăна çавăрса илет, структура вара, системăпа танлаштарсан, чĕлхен пĕтĕм ярусĕсене туллин çыхать тесе шутлаççĕ.

*Дискретлăх* – кашни системăн кирлĕ паллăлăхĕ.

Система ăнлава тулаш майлашупа пăтраштарма юрамасть. Тулаш майлашу чухне кашни элементăн пахалăхĕ пĕтĕмĕшле системăран килмест. Эпир пукансене тăватшар е сакăршар рет лартсан та, вĕсем 32 е 64 пулсан та улшăнмаççĕ, кашни пуканĕ пĕччен чухнехи пекех хăйĕн кӳлепипех юлать. Системăн пĕр элементне кăларса пăрахсан, çав система арканать, тĕслĕхрен, енчен те вырăс чĕлхин вĕçлев системинчен пĕр-пĕр падежа кăларса пăрахсан, падеж системи улшăнать.

Енчен те пĕр элемент кăна юлчĕ пулсан система пĕтет. Акă, тĕслĕхрен, вĕçлев системи икĕ падеж пулсанах кĕретĕн тухса тăрать, анчах та вĕçлев системăна тăвакан элементсенчен икĕ тĕп система уйăрма пулать: материллĕ тата идеаллă системăсем.

Материллĕ системăсем материллĕ элементсенчен тăраççĕ, тĕрлĕ хутшăнусенче пулма пултараççĕ. Материллĕ система тесе тĕрлĕ материалтан тунă кирек мĕнле сооружение те калама пулать.

Материллĕ системăсене пĕрремĕшле материллĕ системăсем тесе пăхаççĕ. Материллĕ системăсем ансаттисем тата кăткăссисем пулаççĕ. Кăткăс тата ансат системăсем абстрактлă ăнлавсем мар. Ансат системăсем пĕр тĕрлĕ элементсенчен тăраççĕ, пĕр-пĕринпе çыхăнаççĕ. Кăткăс системăсенче элементсем çумсистемăсене пайланаççĕ.

Пĕрремĕшле материллĕ системăсем темиçе тĕрлĕ пулаççĕ: искусственнăй (çын тунă) тата естественнăй (çын туман), органикăллă тата органикăллă мар (хăйсен тĕллĕн йĕркеленекен тата хăйсен тĕллĕн аталанакан) системăсем.

Идеаллă системăсем яланах çынсен ĕçĕ-хĕлĕпе, тĕрĕсрех каласан, çыннăн шухăшлавĕпе çыхăннă.

Материллĕ системăсенче материллĕ элементсем системăшăн пĕлтерĕшлĕ.


Литература

1. Общее языкознание. Внутренняя структура языка. М.: Наука, 1972.

2. *Щерба Л.В.* Языковая система и речевая деятельность. Л.: Наука, 1974.


## 2§. Чĕлхе структурине ўкерчĕклени (çырса кăтартни)

XX ĕмĕрте лингвистика аталанăвĕ, ытти наукăсем аталаннă пекех, субстанци тăрăмĕнчен структурăпа функци тăрăмне куçнипе палăрса тăрать. Тĕпчев факчĕсем субстанцирен килменнине ăнланса илни çĕнĕ

открытисем тума çулсем уçса пачĕ тата пăтăрмахсем кăларса тăратрĕ.

Чĕлхе пĕлĕвĕн историйĕнче чĕлхене функци тĕлĕшĕпе структура пек пăхнине чи малтан Ф. де Соссюр ячĕпе тата унăн «Пĕтĕмĕшле лингвистика курсĕпе» çыхăнтараççĕ. «Чĕлхе вăл кӳлепе, субстанци мар» тени – Соссюрăн тĕп тезисĕсенчен пĕри. Вăл чĕлхе пĕлĕвĕн тĕрлĕ юхăмĕсене чылай çул хушши аталантарма майсем туса пачĕ. Çак юхăмсен пĕрлĕхлĕ ячĕ «структурализм». Соссюрăн чылай шухăшне И.А. Бодуэн де Куртенэ маларах каланă. Çавăнпа ăна Ф. де Соссюрпа пĕрле хальхи пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвне йĕркелекенĕ теççĕ.

«Структура» ăнлав «объект» ăнлавпа эквивалентлă пулнине Соссюр витĕмлĕ кăтартнă, «объект» ăнлавпа «структура» ăнлав хушшине танлаштару палли лартнă. Соссюр шухăшĕсен вăйĕ структура, функцисемпе çыхăнусен вырăнĕсене уйрăммăн палăртнинче.

Чĕлхене структура пек пăхни Ф. де Соссюра чĕлхене истори тĕлĕшĕнчен кăна мар, синхрони тĕлĕшĕпе те пăхса тухма хистенĕ.

***«Структура» ăнлав.*** Чĕлхене ăнланса илни пире тӳрех ун тытăмне, йĕркелĕхне, «унăн маханизмĕн конструкцине» е, ялан калама йышăннă пек, ун структурипе системине тишкерме хистет. Тĕрĕссипе, чĕлхе пĕлĕвĕнче «структура», «система» ăнлавсемпе терминсен шайĕнче вырăнсăр тата тĕрлĕрен те усă кураççĕ. Нумай ĕçрс вĕсем пĕр-пĕринпе çăмăллăн ылмашаççĕ, эппин, пĕлтерĕшĕпе пĕр-пĕринчен уйрăлса тăмаççĕ пек пулса тухать. Хăш-пĕр ĕçсенче вĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлса каяççĕ, анчах та пĕрисем «структура» тенине те система пек ăнланаççĕ. Ахăртнех, кăна шута илме лекет: ку вăл ăслăхри шухăшлавпа тата чĕлхе пĕлĕвĕн терминологийĕпе çыхăннă.

Çак икĕ термина пĕтĕмĕшле чĕлхе теорийĕнче мар, конкретлă лингвистикăра çырса панине пăхса тухни усăллă. В.В. Виноградов «Вырăс чĕлхи» (М., 1947) кĕнекинче «структура» терминпа час-часах тата уçăмлă усă курнă. Ку терминпа вырăс тата ытти чĕлхесен

тĕпчĕвĕсенче те усă кураççĕ. А.А. Реформатскин «Чĕлхе пĕлĕвĕн кўртĕмĕ» (М., 1967) кĕнекинче çак терминпа чĕлхе элеменчĕсем хушшинче çыхăнусене тата хутшăнусене мар, çав элементсен пĕрлешĕвне тата пĕрлĕхне палăртма усă курнă. Чылай ĕçсен авторĕсем çак термина чĕлхе элеменчĕсен хушшинчи хутшăнусене йĕркелекен кăткăс пĕрлĕхе палăртма усă кураççĕ.

Чĕлхе системăлăхĕ пирки чи малтан Ф. де Соссюр шутлама тытăннă. Французсен паллă лингвисчĕ Э. Бенвенист çапла çырать: «Çак идейăллă юхăма (структурализма) ўкĕрчĕкленĕ чухне ыйтăва çăмăллăн пăхса тухмалла мар тата уйрăмах çакна палăртмалла: Соссюр нихăçан та, нимĕнле пĕлтерĕше те «структура» сăмахпа палăртман. Система текен ăнлав ун ĕçĕсенче çĕнĕлĕх пулнă». Çак шухăшран пысăк пĕлтерĕшлĕ пĕтĕмлетўсем тухса тăраççĕ, вĕсене чĕлхеçĕсем нумай вăхăт хушши майĕпен ăнланса пынă тата малалла аталантарнă. «Курс» (Ф. де Соссюрăн «Пĕтĕмĕшле лингвистика курсĕ») чĕлхене система пек палăртать. Çав пĕтĕмлетўсене аса илтермелле: «Чĕлхе вăл хăйĕн йĕркине кăна пăхăнакан система»... «Чĕлхе – система, ун пĕтĕм пайĕсене синхронире пăхса тухма юрать тата пăхса тухмалла та». Соссюр уйрăмах чĕлхере система хуçа пулса тăнине çирĕплетсе калать: «Сăмаха янăравпа тата ăнлавпа çыхăнтарни пысăк йăнăш патне илсе пырать. Сăмаха çакăн евĕр кăна палăртни ăна системăран уйăрни пулать. Сăмах системăн пĕр пайĕ шутланать. Ăна системăран уйăрни çакна палăртĕччĕ: сăмахсене пĕрлештерсе система тума май килнĕ пек пулса тухĕччĕ. Анчах та, тĕрĕссипе, пачах урăхла. Кăткăс пĕрлĕхрен ун элеменчĕсем тухса тăмалла»... Юлашки фраза «Структура» концепцийĕн пĕтĕм пĕлтерĕшне пĕр тĕвĕре тытса тăрать. Соссюр хăйĕн ĕçĕсенче система ăнлавпа кăна усă курать.

Çапла вара, Ф. де Соссюр «структура» терминпа усă курман-ха. Ку сăмаха лингвистикăна ун вĕренекенĕсем, пуринчен малтан Прага шкулĕн никĕслевçисем, унтан – Копенгаген шкулĕн ăславçисем кĕртнĕ. Енчен те «Прага шкулĕн вĕренекенĕсем» струк-

тура пирки калаçнă чух чĕлхери çыхăнусемпе хутшăнусене кăна мар, ун элеменчĕсене те шута илнĕ пулсан, «Копенгаген шкулĕн вĕренекенĕсем» вара чĕлхери çыхăнусемпе хутшăнусене ун элеменчĕсенчен уйăрнă.

«Структура» тата «система» терминсем пирки чĕлхеçĕсем калана çак палăртусене йышăнмалла.

В.М. Солнцев çапла калать: «Эпир системăна объект пĕрлĕхĕ пек палăртатпăр. Структурăна вара система ăшĕнчи мĕнпур çыхăнусем е шалти йĕркеленĕвĕ, объект йĕркелĕхĕ пек кăтартатпăр. Çавна кура системăпа структура хушшинче уйрăмлăха палăртма май пур. Структура объект пĕрлĕхĕпе тан мар. Объектран е системăран ун элеменчĕсене кăларсан структура пулать. Структурăна çакăн пек ăнланни чĕлхе пĕлĕвĕнчи чылай ĕçре йышăннă терминран уйрăлса тăрать...».

А.С. Мельничук çакна палăртать: «... «система» тата «структура» терминсене вырăнлă уйăрма пĕлмелле. Пĕр-пĕринпе çыхăннă мĕнпур элементсен пĕрлĕхне система тесе ăнланаççĕ. Пĕрлĕхĕн йышне тата шалти йĕркелĕхне унăн шалаш пĕрлĕхĕ тĕлĕшĕнчен пахса тухнине структура тесе пăхаççĕ. Çапла майпа система тата структура ăнлавсене палăртни пĕр чăн-чăн объекта тĕрлĕрен ăнланни пулма пултарать. Чăн-чăн объекта, пĕр енчен, структура элеменчĕ пек те, система компоненчĕ пек те пăхса тухма пулать. Тĕслĕхрен, хупă сасă вырăс чĕлхинчи консонатизмăн структура элементне те, хупă сасăсен системин компонентне те палăртать. Подлежащи предложенири синтаксис структурин элементне те, предложени членĕсен системин компонентне те палăртать».

Хальхи вырăс литература чĕлхин ăнлантаруллă словарĕсене илĕпĕр. Словарьсенче система тата структура сăмахсен пĕлтерĕшĕсене мĕнле уйăрнине пăхăпăр.

Тăвата томран тăракан «Вырăс чĕлхи словарĕ» система сăмахăн çакнашкал пĕлтерĕшĕсене палăртать:

1. Планласа вырнаçтарнă тата мĕнле те пулин пайсем пĕр-пĕрин хушшинче тĕрлĕ çыхăнусем çинче никĕсленнĕ паллă йĕрке.

2. Классификаци, ушкăн.

3. Пĕр-пĕр вĕрентĕвĕн никĕсĕ пулса тăракан принципсен пĕрлĕхĕ.

4. Мĕнле те пулин элементсем, единицăсем пĕрлĕхлĕ паллăпа пĕрлешни.

Çав словарех «структура» сăмахăн пĕр пĕлтерĕшне кăна парать – мĕнĕн те пулин пайĕсен çыхăнăвĕ, тытăмĕ.

Математикăпа ытти наукăсен витĕмĕпе чĕлхе структури ăнлав чĕлхе системи ăнлавран хăйĕн çирĕплĕхĕпе уйрăлса тăрать. Ăна пурте тенĕ пекех пĕр пек палăртаççĕ. Лингвистика структурине тĕпчеекенсем тата вĕсем хыççăн каяканссм ăнлантарнă тăрăх, структура тенине çапла ăнланмалла: структура – объектри çыхăнусен пĕрлĕхĕ.

С.К. Шаумян çапла çырать: «Ф. де Соссюрăн форма евĕр ăнланнă «структура» терминăн палăртăвне Л.Ельмслевăн ĕçĕнче куратпăр: «Эпĕ чĕлхе структури тесе синхрони динамикинче палăракан лингвистика хутшăнăвĕсене калăп». Н.С. Трубецкой та структура ăнлава çакăн пекрех ăнланать.

Дани структуралисчĕсен шухăшĕпе, пĕлтĕрĕшпе сасă витĕмĕ чĕлхе структурин никĕсне йĕркелеççĕ.

Чĕлхе структурине уçăмлă палăртни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă: вăл интуици тĕлĕшĕнчен пăтраштарнă икĕ ăнлава пĕр-пĕринчен уйăрма май панă. Структурăпа система ăнлавсем чĕлхене йĕркелекен пĕрлĕхлĕ паллăсен шутне кĕреççĕ. Çапла вара, чĕлхе структури ăнлав объектăн хăйне майлă компоненчĕ пулнă пек пăхни «чĕлхе системи» терминăн пĕлтерĕшне тĕрĕсрех ӳкерчĕклеме май парать.

***Чĕлхе структурин теорийĕсем.*** Чĕлхе структури чĕлхе единицисен тĕрлĕрен тытăмĕсене пĕрлештерни тахçанах паллă пулнă. Чĕлхеçĕсем фонетикăна тата грамматикăна, сăмаха тата предложение ялан уйăрнă; пуплев пайĕсене лексикăпа грамматика ушкăнĕсем пек пăхса тухнă.

XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче, уйрăмах В.Гумбольдт ĕçĕсенче, чĕлхе единицин икĕ тĕсне: материллĕ тата

идейăллă тĕсĕсене палăртнă пулнă. Материллĕ единицăсем чĕлхен тулаш формине, идейăллă единицăсем чĕлхен шалаш формине йĕркелеççĕ. Тулаш тата шалаш формăсен пĕрлĕхне вăл чĕлхе структури пек ăнланнă. Пĕр вăхăтрах чĕлхе единицисен: сăмахпа предложенин, грамматика категорийĕпе морфема спецификине малалла тĕпченĕ.

Чĕлхе пĕлĕвĕнче субстанциллĕ тата операциллĕ икĕ теори вăй илсе сарăлнă. Субстанциллĕ (онтологиллĕ) теорие хӳтĕлекенсем чĕлхе структурин проблемине чĕлхен коммуникативлă функцине шута илсе тата пĕрремĕш вырăна лексикăпа грамматика ушкăнĕнчи сăмахĕсене тăратса татса парасшăн пулнă. Операциллĕ (методикăлла) теорисем (вĕсене структурăлла теорисем те теççĕ) чĕлхе структурин проблемине пĕрремĕш вырăна чĕлхе структурин функцине тата чĕлхе единицисен изоморфизмĕпе иерархине тĕпе хурса татса пама ăнтăлнă. Чĕлхене структура пек ăнланни структура, система тата чĕлхе форми ăнлавсене пĕрешкеллетнипе пĕр килсе тухать.

***Изоморфизм теорийĕ.*** Изоморфизм теорийĕ (е «интеграци шайĕсем») чĕлхе структурин пĕрлĕхне хальхи фонологи çитĕнĕвĕсене шута илсе тата методикăна тĕпе хурса пăхса тухать.

Изоформизм тени чĕлхе структурин кăткăслăхне ăнлантармасть.

***Иерархи шайĕсен теорийĕ.*** Çак теори чĕлхе структуринче пĕр векторлă иерархиллĕ тытăм хуçаланать текен шухăш çине таянать. Ăна 1962 çулта Э.Бенвенист уçăмлă йĕркеленĕ. Чĕлхе единицисем сасă витĕмĕ тĕлĕшĕнчен аялти шайра, пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен çӳлти шайра тăраççĕ. Чĕлхе структури çапла ӳкерĕнет:




Шай вăл оператор: фонемăсем, морфемăсем; сăмахсем – чĕлхе структурине кĕрекен тĕп шайсен элеменчĕсем. Фонемăна çӳллĕрех шайăн, морфемăн, тытăмне кĕрекен пай пек палăртма пулать. Морфемăпа сăмах хушшинче уйрăмлăх çакăнта кăна: морфема –

çыхăнчăк форма, сăмах вара – ирĕклĕ форма палли. Фонемăсем, морфемăсем тата сăмахсем хушшинче дистрибуциллĕ, тĕрлĕрен шайсем хушшинче – интеграциллĕ хутшăнусем пур.

Чĕлхе структурине çапла ăнланни тишкерĕвĕн пĕр енне, пĕчĕк шайран çӳлли патне, тĕрĕсрех каласан, формăран содержани патне кайнине çеç кăтартать. Шайсем пĕр-пĕринпе çыхăннă ыйту иккĕмĕш вырăна куçать. Морфема чĕлхен тĕп палли шутланать, çавна пула фонема унăн пĕчĕк шайĕ пек, сăмах вара – çӳллĕ шайĕ пек шутланать.

Пуплев пайĕсем – сăмахăн лексикăпа грамматика ушкăнĕсем. Пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулнă май вĕсем лексикăпа морфологи категорийĕсемпе тата синтаксис единицисемпе шайлашăнса чĕлхери сăмахсен йышне йĕркелеççĕ. Пуплев пайĕсене лексикăпа грамматика ушкăнĕсем пек пăхни чĕлхе структурине уçăмлă ăнланма пулăшать.

Кирек хăш сăмах та вăл е ку пуплев пайне кĕрет. Çапла вара, сăмах конкретлă лексемăна чĕлхе структурипе çыхăнтарать.

Сăмахăн лексика, морфологи, сăмах пулăвĕ тата синтаксис пĕлтерĕшĕсем пур. Çав пĕлтерĕшсене кура эпир сăмахсене тĕрлĕ пуплев пайĕсене кĕртетпĕр.

Литература

1. *Мельничук А.С.* Понятия системы и структуры языка в свете диалектического материализма // Вопр. языкозн. 1970. №1.

2. *Щерба Л.В.* Языковая система и речевая деятельность. Л.: Наука, 1974.

## 3§. Изоморфизм теорийĕ

Чĕлхе пĕрлĕхĕн теорине изоморфизм ăнлантарть, урăхла каласан, изоморфизм – структурăллă пĕрешкеллĕх, вăл чĕлхе единицисен параллелĕхĕн теорине çутатса парать.

Е.Курилович изоморфизм çинчен хăйĕн шухăшне каланă чухне сыпăкпа предложенин структурăлла

пеклĕхĕ пирки çырнă, сыпăкри уçă сасăпа предложенири сказуемăй хушшинчи структурăлла пĕрпеклĕхе кăтартса панă.

Изоморфизм теорийĕ чĕлхе структурин пĕрлĕхне хальхи фонологи пулăмĕсем çине таянса кăтартмалли единицăсемпе улăштарнă, идеаллă енсен кăткăслăхне шута хуман. Методика тĕлĕшĕпе пĕрлĕхе шырани чĕлхе сийĕсен тата чĕлхе единицисен тĕрлĕ енĕсен пахалăхлă хăй евĕрлĕхне тĕксĕмлетет, йывăрлатать.

Паллах, хупă сасăпа лексемăн функцине танлаштарма пулать. Анчах ку ăнăçлă япала мар. Пĕрремĕшĕнчен, хуть те мĕнле чĕлхере те хупă сасăсен шучĕ аллăран ытла мар, сăмахсем вара – çĕршер пин; паллах, сăмахсен структури тĕрлĕ енлĕ тата кăткăсрах. Иккĕмĕшĕнчен, сăмахсем номинаци (ят параслăх) функцине те пурнăçлаççĕ, хăш-пĕр чухне вĕсем хутшăну хатĕрĕсем те. Сăмахăн лексика тата грамматика пĕлтерĕшĕсем сыпăкпа мар, морфема тытăмĕпе çыхăнса тăраççĕ.

Изоморфизм чĕлхе структурин кăткăслăхне уçса памасть. Изоморфизм ăнлав математикăра çирĕпленнĕ. Математикăри пĕлтерĕшпех унпа ытти наукăсенче те усă кураççĕ, тĕслĕхрен, химире. Нумай пулмасть Е.Курилович çак ăнлава лингвистикăна кĕртнĕ. Ун ĕçĕсенче математика терминне чĕлхе терминĕсем хушшине кĕртсе яма шутланине ăнланма май çук. Е.Куриловичăн «Изоморфизм ăнлав» ĕçĕнче çак термин пĕлтерĕшне ăнлантармасăрах тӳрех чĕлхе шайĕнчи параллелĕх çинчен калаçма тăрăшнă. Сăмах фонетика тата синтаксис единицисен параллельлĕхĕ çинчен пырать.

Е.Куриловичăн ĕçĕсене пăхса тухнă хыççăн çапах та çак терминпа вăл тĕрлĕ шайри чĕлхе единицисен структури пирки калани паллă.

Чĕлхе пĕлĕвĕнче изоморфизм ăнлава çакăн пек ăнлантарса параççĕ: изоморфизм вăл – тĕрлĕ шайри чĕлхе единицисен пĕртиплăхĕ, кун хыççăн çак тĕрлĕ шайри чĕлхе единицисен пĕр пек хутшăнăвĕсем пирки,

структури пирки каламалла. Çакăнтан акă мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать:

1. Хуть те мĕнле чĕлхе единици те яланах структура элеменчĕ шутланать.

2. Чĕлхере хуть те хăш шайăн та ăна тивĕçлĕ палли пур, тата çак единицăсен хушшинчи типлă çыхăнусен пуххи пур. Çавна май, единицăсен тата вĕсем хушшинчи хутшăнусен пуххипе кашни шайăн ĕлкин принципĕ палăрăнать.

3. Чĕлхен кашни шайĕ пĕр-пĕринпе тӳррĕн е тӳррĕн мар (кĕретĕн е кĕретсĕр) çыхăнса тăрать. Çакăн тăрăх шайсем пĕр-пĕрне витĕм кӳнине палăртма пулать. Çапла вара, фонема тата дифференци , фонема тата морфема, морфема тата синтаксис шайĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраççĕ; вĕсем хушшинчи иерархие палăртма пулать.

4. Енчен те çак шайсенчен хăшĕ те пулсан ытти-семпе çыхăнмасăр, хăйĕн единицисемпе хупă пĕрлешӳре çеç тăнă пулсан, çак шайăн тишкерĕвне те юри хăйĕн единицисемпе усă курса çеç тунă пулсан, чĕлхере изоморфизм термин кирлĕ те пулмастчĕ. Тен, çирĕпрех лингвистика анализĕ тăвас тесен кашни чĕлхе единицине тĕрлĕ шайсенче урăх ятсем памалла пулнă пулĕччĕ. Тĕслĕхрен, сăмаха семантика шайĕнче лексема тесе, морфема шайĕнче глоссема тесе палăртмалла, анчах та çакна каласа хăвармалла: енчен те единицăсене темиçе сийлĕ ят парсан пĕр-пĕр чĕлхене ăнлантарнă чухне йывăрлăхсем сиксе тухма пултараççĕ, унтан пĕр-пĕринпе çыхăнса таракан шайсен единицисем пирки çырнă чухне те йывăрлăхсем пулма пултараççĕ.

5. Чĕлхе системин уйрăлми палли çакă пулса тăрать: чĕлхен кашни элеменчĕ хăйне евĕрлĕ расна.

6. Чĕлхен тепĕр уйрăлми палли вăл – чĕлхен кирек хăш единицин те – фонема-и вăл, морфема-и, синтагма-и, сăмах-и – пурин те хăйĕн уйрăм парадигми пур.

7. Тĕрлĕ шай единицисем модельсен пĕрлĕхне тăвайсан, унтан вĕсен хушшинчи типлă хутшăнусем пулайсан тин пĕр шайри единица тепĕр шайри единицăна куçма пултарни çинчен ыйту хускатма пулать. Паллах, кунта

пĕр-пĕринпе тӳр килекен шайсем çинчен кăна калаçма пулать.

8. Пĕр шайри элементсене тепĕр шайри элементсемпе çакăн пек чухне кăна ылмаштарма пулать:

а) тĕрлĕ шайсен ĕлкисем çинчен пĕтĕмĕшле çырса кăтартсан;

ă) пĕр шайри единица тепĕр шайри единицăпа улшăнсан, анчах та улшăнакан шайĕ тепринпе тӳрĕ çыхăнура тăмалла.

9. Çакăнта пăхса тухнă шухăшсенче пĕр-пĕринпе çыхăнура тăракан тĕрлĕрен шайсем пирки кăна калаçма май пур.

10. Маларах каланисене пăхса тухсан çакăн пек пĕтĕмлетӳсем тума пулать: а) изоморфизм пулăмĕ, е чĕлхе единицисен конститутивлă тытăмĕ тата вĕсен хушшинчи хутшăнусем чĕлхе системин уйрăмлăхĕсене уçса параççĕ, унăн тĕрлĕ шайĕсемпе çирĕппĕн çыхăнса тăраççĕ. Çавăнпа та ку терминпа усă курмаллипе усă курмалла маррине ку ăнлава лингвистика ăнлантарăвĕ парсан çеç калама пулать; ă) чĕлхери кашни шайри синхрониллĕ принципсене пăхса тухни тĕрлĕ шайри единицăсен уйрăмлăхĕсене кăна мар, вĕсем хушшинчи пĕрпеклĕхсене те курма пулăшать; б) чĕлхе единицисен изоморфизмĕ пирки калаçнă чухне пĕр-пĕринчен тухса тăракан шайсен иерархи принципне çирĕп пăхăнмалла.

Пĕр-пĕринчен килмен шайсен конститутивлă единицисене шайлаштарма юрамасть.

Литература

*Булыгина Т.В.* Об организации плана содержания с точки зрения ее соответствия организации плана выражения // Проблемы языкознания. М., 1967. №5. С. 150-171.

## 4§. Чĕлхе механизмĕн теорийĕ тата чĕлхе шайĕсем ăнлав

XIX-XX ĕмĕрсенчи лингвистика чĕлхен механизмне, тытăмне, шайне е енĕсене сăнласа парас çул çине тăрать. Вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: фонема системи, сă-

мах системи, пуплев пайĕсен системи, предложени типĕсен системи. Чĕлхе шайĕсене тĕпчес ыйтусене татса панă пекех туйăнать. Анчах та çак проблемăсене тимлĕрех тишкерӳ тусан çитменлĕхсем курăнаççĕ. Ку ыйтусемпе пуçласа Э.Бенвенист лингвист ĕçленĕ. Халĕ вара вăл çак ыйтусене мĕнле татса панине пăхса тухăпăр. Автор чĕлхе тытăмĕн шайĕсем пирки калаçмасть, шайсен тишкерĕвне çеç пăхать. Тĕрлĕ шайсене татса панă чухне ученăй уйрăм методикăна тĕпе хурать: анализа хутшăнусемпе çыхăнакан элементсене уйăрса кăларассипе çыхăнтарать. Çак йĕрке икĕ операцирен: сигментаципе субстанцирен – тăрать.

Э.Бенвенист «шай» сăмаха методика йĕркипе тата унпа усă курма пултарнипе тӳрремĕнех çыхăнтарать: «Çакăнтах икĕ операцин уйрăмлăхĕсене палăртма пултаратпăр. Сегментаципе субституци калăпăшĕпе пĕр пек мар. Элементсене ытти сегментсемпе танлаштарса кăтартнă. Сегментаци мелĕпе пулнă чи пĕчĕк элементсем фонемăсем пек пĕрпекленеççĕ. Фонемăри уйăру паллисене вара таранрах тишкерӳ туса палăртма пулать. Çак уйăру паллисем пĕрпекленме тата пĕр-пĕрне ылмаштарма (субституциленме) пултараççĕ. Çавна май икĕ шай уйăрма пулать: фонема шайĕ тата субфонема шайĕ. Фонема шайĕнче икĕ операци пурнăçланма пултарать (сегментаци тата субституци), субфонема шайĕнче вара субституци операцийĕ çеç. Çавăн пек эпир икĕ шай патне пырса çитетпĕр: фонема шайĕ тата меризматика шайĕ».

Эпир Э.Бенвенист шайсене мĕнле ăнланнине пăхса тухрăмăр. Халĕ вара ученăй шучĕпе чĕлхере миçе шай пулма пултарнине тишкерĕпĕр. Фонема шайĕ, сăмах шайĕ, предложени шайĕ пурри пирĕншĕн паллă. Кунсăр пуçне тата морфема шайĕ пуррине те палăртмалла. Морфемăна чĕлхе единици пек пăхса тухаççĕ. Вăл вара сăмахпа пĕрпекленме пултарать. Çавăнпа та вăл аялти шай шутне кĕрет. Э.Бенвенист лингвистăна дистрибуциллĕ тата интеграциллĕ хутшăнусем ăнлавсене кĕртет. Дистрибуциллĕ хутшăнусем пĕр шайри элементсем хушшинче, интеграциллисем вара тĕрлĕ шайри эле-

ментсем хушшинче вырăн йышăнаççĕ. Апла пулсан меризм, фонема, морфема, сăмах, сăмах майлашăвĕсен, предложени шайĕсем пур, анчах та çакăн пек ыйту сиксе тухать: мĕншĕн-ха морфемикăра тата лексикăра меризма тивĕçлĕ шай çук? Морфемăра тата сăмахра фонемăсен уйăру паллисем пурри курăнать-çке. Тĕслĕхрен, *çын пырать (утать е килет), лекци пырать, ĕç пырать, поезд килет* предложенисене илĕпĕр. Панă тĕслĕхсенче сегментаци пĕр пек пулсан субституцие вара сăмахăн пĕлтерĕшĕ улăштарать. Э.Бенвенист фонемăсен уйăру паллисен шайĕ пуррине те палăртать. Апла пулсан мĕншĕн-ха вăл морфемăсемпе сăмахсен тивĕçлĕ сема пĕлтерĕш шайне шута илмен?

Мĕн-ха вăл шай? Çак сăмаха лингвистикăра расна пĕлтерĕшсемпе ăнлантарса панă пулнă. Тĕрлĕ дискуссисем ирттернĕ хыççăн ăна термин вырăнне усă курма пуçланă. Чĕлхе шайĕ тесе пĕр ятлă единицăсен чĕлхе системин пĕр пайне калаççĕ. Апла пулсан фонема, морфема, сăмах, сăмах майлашăвĕсен, предложени шайĕсем; пĕр ятлă единицăсем – фонема, морфема, сăмах, сăмах майлашăвĕ, предложени пурри паллă шайсем хушшинче çакăн пек хутшăнусем пуррине палăрать. Вăтам шая çаксем кĕреççĕ: фонема, морфема, сăмах, сăмах майлашăвĕ. Вĕсем, чи аялти шайри единицăсем, çӳлти шайри единицăсен компоненчĕ пулса вĕсен шутне кĕреççĕ. Тепĕр майлă сăмах майлашăвĕсем сăмахсенчен, сăмахсем морфсенчен, морфсем – аллофонсенчен тăраççĕ. Лингвистика тишкерĕвĕ чи малтанах умлăхыçлă ваклану, сегментаци пуррипе палăрса тăрать. Кун пек чухне эпир чĕлхен тĕрлĕ единицисене – сăмах майлашăвĕсене, сăмахсене, морфсене, аллофонсене – курма пултаратпăр. Анчах та кунта çакна шута илмелле: палăртнă хутшăнусем чĕлхен чиккинче вырăн йышăнаççĕ. Аллофонсем морф тăваççĕ, морфсем – сăмах.

Халĕ чĕлхе шайĕсене схемăра пăхса тухăпăр. Çак схемăпа усă курса лингвистсем чĕлхен абстрактлă единицисемпе конкретлă единицисем хушшинчи хутшăнусене пăхса тухнă. Çавна пула вĕсем çакăн пек çирĕплетсе калама пултарнă: морфемăсем фонемăсенчен

тăраççĕ, сăмахсем - морфемăсенчен, сăмах майлашăвĕсем – сăмахсенчен, предложенин структурăллă схеми сăмах майлашăвĕн структурăллă схемисенчен тăрать.

| | |
|---|---|
| Конкретлă е сăнавлă аспект | Абстрактлă аспект |
| Текст | |
| Предложени | Предложенин структура схеми |
| Сăмах майлашăвĕ | Сăмах майлашăвĕн структура схеми |
| Сăмах | Сăмах |
| Морф | Морфема |
| Аллофон | Фонема |

Пĕр шайри конкретлă тата абстрактлă единицăсем хушшинчи хутшăнусене май пур таран тишкернĕ. Вĕсене çак ăнлавсемпе палăртнă: репрезентаци, манифестаци, реализаци (пурнăça кĕртни). Тĕслĕхрен, морф морфемăна палăртать, морфема морфсенче пурнăçланать.

Чĕлхесене мĕнле шайсем, урăхла каласан, мĕнлерех хайсене тивĕçлĕ механизмсем тивĕçлĕ-ши? Кашни шай мĕнле единицăсенчен пулса кайнине Ф.М. Березинпа Б.Н. Головин вĕрентнине шута илсе пăхса тухăпăр.

1. Фонемăсен автономлă механизмĕ. Фонема морфемăпа сăмахсен сасă йышне кĕрет, морфемăсенче тата сăмахсенче вариантласа çĕнелсе пырать, дифференциллĕ паллăсем пуррипе уйрăлса тăрать.

2. Морфемăсен автономлă механизмĕ. Морфема сăмахсен тата вĕсен грамматика формисенче кĕретĕн курăнать. Унăн хайĕн пĕлтерĕшĕ пур.

3. Сăмахсен автономлă механизмĕ. Сăмах сăмах майлашăвĕсен йышне кĕрет, сăмах пулăвĕн типĕсене тăвас тата морфологи категорийĕсене йĕркелес ĕçе хут-

шăнать, морфемăсене тата фонемăсене пĕрлештерет, сăмах майлашăвĕсенче тата предложенисенче çĕнелсе пырать. Хăй тĕллĕнлĕх пĕлтерĕшне палăртакан паллă шутланать.

4. Сăмах пулăвĕн типĕсен автономлă механизмĕ. Сăмах пулăвĕн типĕ пуплев пайĕсене йĕркелессине хутшăнать, сăмахсем хушшинчи хутшăнусене йĕркелет.

5. Морфологи категорийĕсен автономлă механизмĕ. Вĕсем синтаксис категорийĕне йĕркелес ĕçе хутшăнаççĕ, сăмахсене тата вĕсен грамматика формисене пĕрлештереççĕ, предложени йышĕнче çĕнелсе пыраççĕ, пĕрлештерекен паллă пек шутланаççĕ.

6. Синтаксис категорийĕн автономлă механизмĕ. Вăл текста йĕркелеме пулăшать, морфологи категорийĕсем хушшинчи синтагматика хутшăнăвĕсене пĕрлештерет.

7. Текстăн автономлă механизмĕ. Ку вăл пуплевĕн результачĕ шутланать. Калаçу чĕлхин тата çыру чĕлхин тексчĕсем пур. Текст калăпăшĕпе пĕр предложенирен ытларах пулмалла.

Анчах та чĕлхен çак автономлă механизмĕсем тивĕçлĕ информаци параймаççĕ. Çавăнпа та чĕлхен хăйне тивĕçлĕ механизмĕсен çыхăнăвĕсене çапларах кăтартма пулать:




Çак модель те чĕлхен автономлă маханизмĕсем хушшинчи çыхăнусен пĕр пайне çеç кăтартса парать. Вăл чĕлхе тытăмĕнчи фонетика, морфемика, лексика, сăмах пулăвĕ, морфологи тата ситаксис çыхăнăвĕсене тĕрĕс кăтартса параймасть. Анчах та çак моделĕн лайăх енĕсем те пур. Тĕслĕхрен, вăл фонетика морфемикăпа тата лексикăпа, морфемика фонетикăпа, лексикăпа тата сăмах пулăвĕпе, сăмах пулăвĕ лексикăпа, морфемикăпа тата морфологипе, морфологи морфемикăпа

тата синтаксиспа, синтаксис морфологипе тата морфемикăпа çыхăннине палăртать.

Халĕ чĕлхен единицисене пăхса тухăпăр. Мĕн вăл фонема? Фонема вăл чĕлхе тытăмĕнчи вакланман тата пăхăнман чи пĕчĕк пайрăм. Фонема чĕлхе материйĕн пайрăмĕ шутланать. Хăш-пĕр чухне фонемăн пĕлтерĕшĕ çуккине палăртаççĕ. Çавăнпа та вăл паллă шутланмасть иккен. Фонема мĕнле функцисем пурнăçлать-ха? Вăл темиçе çумсистемăллă система тăвать. Чĕлхе механизмĕн тепĕр единици вăл – морфема. Морфсем çинчен дескриптивистсем пуçласа калаçма тытăннă. Ю.С. Степанов чĕлхеçĕ ăнлантарнă тăрăх, морф вăл – сăмахăн пĕлтерĕшлĕ вакланман чи пĕчĕк пайĕ пулсан, морфема вара çўллĕрех шайри единица та, единицăсен класĕ те. Морфема пĕрешкел морфсен класĕ шутланать. Пурте вĕсем аллофонсенчен тăраççĕ тата мĕнле те пулин конкретлă позицире тĕл пулаççĕ. Çакăн пек класри кашни морф алломорф шутланать.

Морфема – чĕлхен пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк единици. Дескриптивлă лингвистика морфемăра текстăн сегментне курать. Енчен те морфема текстăн сегменчĕ анчах пулать пулсан, тимлĕхе фонема çине куçараççĕ. Мĕншĕн тесен фонема çав текстăн сегменчĕ шутланать. Сегмент мĕнле пĕлтерĕше палăртни кирлĕ мар, вăл пахалăхлă пулни кирлĕ. Морфема – чĕлхе системин единици, хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне çавăнта йышăнать.

Халĕ вара морфема функцийĕсем пирки калаçăпăр. Ахăртнех, фонемăпа танлаштарсан, морфема интеграциллĕ тата пĕрлештерўллĕ функцисене, унсăр пуçне тата вăл, сăмахпа танлаштарсан, конструктивлă функцие пурнăçлать. Сăмахсем морфемăсенчен пулса кайнă. Сăмах тĕпĕ е тымарĕ морфемăпа танлашать пулсан та, морфема унран яланах уйрăлса тăрать. Морфема сăмахсем тăвас ĕçе хутшăнать.

Тымар морфемăна, аффикс морфемăна, сăмах тăвакан, форма тăвакан морфемăсене уйăрма пулать. Аффикс морфемăсем шутне çаксем кĕреççĕ: префикссем, суффикссем, флексисем тата интерфикссем. Тымар хыççăн тăракан ытти аффикссене постфикссем теççĕ.

Сăмах тунă чухне префикспа суффикс хушăнаççĕ пулсан, конфикссем çинчен калаçаççĕ. Сăмах пулăвĕн автономлă механизмĕ çĕнĕ сăмахсем тума кирлĕ.

Сăмах пулăвне терминологи енчен тĕрлĕрен ăнлантараççĕ:

а) процесс пулăвĕ, çĕнĕ сăмахсем туни;

ă) калаçу чĕлхин психофизиологийĕ. Вăл çĕнĕ сăмахсем тунинче палăрать;

б) чĕлхе механизмĕ çĕнĕ сăмахсене тунинче курăнать;

в) сăмах тытăмĕ;

г) лингвистика вĕрентĕвĕ. Чĕлхере çĕнĕ сăмахсем туни çинчен вĕрентекен наука.

Сăмах тăвакан типăн тепĕр палăртăмне те пама пулать: сăмах тăвакан тип тесе сăмах пулăвĕн речĕ чĕлхе пĕрлĕхĕн пĕлтерĕшĕпе пĕрлешнине калаççĕ. Сăмах тăвакан тип ăнлава çапларах ăнланмалла:

а) иккĕмĕшле сăмахсен речĕн пурнăçланнă тата потенциллĕ семантики, тата лексикăна хунатмалли мел;

ă) тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ иккĕмĕшле сăмахсен семантикине ăнланса илни;

б) сăмах тăвакан пĕлтерĕше ăнланса илни тата палăртни;

в) сăмахăн иккĕмĕшле ретне курни, унăн пурнăçланнă тата потенциллĕ семантика майне ăнланни;

г) сăмах тăвакан мелсене сăнласа пани;

д) сăмах тăвакан типа сăмах тăвакан ытти типсен вырăнĕнче курни, çавăн пекех типсем хушшинчи çыхăнăва тата хутшăнусене асăрхани.

Сăмах пулăвĕ вăл – уйрăм сăмахсен структури мар, сăмах тăвакан механизм. Кашни сăмах лексика пуянлăхĕ шутланать, чĕлхен словарь йышне пуянлатать. Сăмах пулăвне пăхса тухнă чухне сăмах истори тĕлĕшĕнчен мĕнле пулса кайнине ытлашши пăхмалла мар.

Пĕтĕмлетӳ тăвăпăр. XIX-XX ĕмĕрсенчи лингвистика структура облаçĕсене, енĕсене е чĕлхе шайĕсене курма тата сăнама пултарать. Шайсене ăнлантарнă чухне тĕрлĕрен хирĕçӳсем тухса тăраççĕ. Шай сăмаха «анализ»

тата «сăнлав» терминсемпе улăштарма пулать. Чĕлхе механизмĕ калăпăшĕпе пĕчĕк ретсене, ансăр тата пĕр евĕрлĕ механизмсене кĕртни пирки калаçма пулать. Вĕсем хăйсен автономийĕпе палăрса тăраççĕ.

Чĕлхе науки пĕтĕм автономлă механизмсене пĕлет. Унăн задачи – вĕсене логика тĕлĕшĕнчен сăнласа парасси. Чĕлхен автономлă механизмĕсен тĕрлĕ принципĕсене пĕтĕмлетме пулать: е пĕр автономлă механизмăн йышне кĕмелле, е вĕсене тунă çĕре хутшăнмалла, е интеграциллĕ палла пĕлтермелле.

Паянхи чĕлхе шайĕнче çакăн пек автономлă механизмсем пур: фонемăн механизмĕ, сăмах пулăвĕн типĕсен, морфологи категорийĕсен автономлă механизмĕ, синтаксис категорийĕсен автономлă механизмĕ. Автономлă механизмăн хутшăнăвĕсене схемăпа кăтартма пулать.

Чĕлхе автономийĕн пĕчĕк механизмĕсем пĕр евĕрлĕ, пĕр типлă единицăсем çине таянаççĕ. Фонема тата морфема уйăру функцине, конструктивлă тата интеграциллĕ функцисене пурнăçлаççĕ. Çапах та фонема теорийĕнче те, морфема теорийĕнче те çутатса паман ыйтусем чылай.

Лексикăри сăмах çыхăнăвĕ хăйне евĕрлĕ е пĕлтерĕшлĕ, морфологири сăмах çыхăнăвĕ – стандартлă, сăмах пулăвĕнчи сăмах çыхăнăвĕ – стандартлă-индивидуаллă. Чĕлхе структурин виçĕ аспекчĕ тата виçĕ автономлă механизмĕ шутне лексика, морфологи тата сăмах пулăвĕ кĕрет. Сăмах пулăвĕн автономлă механизмĕн структура единици сăмах пулăвĕн типĕ шутланать. Сăмах пулăвĕ уйрăм сăмахсен структури мар, сăмах тăвакан элементсен системи.


Литература

1. *Березин Ф.М., Головин Б.Н.* Общее языкознание. М.: Просвещение, 1979.

2. Общее языкознание. Внутренняя структура языка. М.: Наука, 1972.

3. *Степанов Ю.С.* Основы общего языкознания. М., 1975.

4. *Кодухов В.И.* Общее языкознание. М.: Высш. шк., 1974.

# III пай. ЧĔЛХЕН ТĔП ЯРУСĔСЕМ (ШАЙĔСЕМ)

## 1§. Чĕлхе шайĕсем

Чĕлхе системине (е тытăмне) характеристика пама чĕлхе пĕлĕвĕпе çырнă ĕçсенче «шай» (уровень) терминпа анлă усă кураççĕ, унпа тĕрлĕ çум системăсене тата чĕлхе тĕпчевĕн тĕрлĕ сыпăкĕсене, тапхăрĕсене хак параççĕ. «Шай» терминпа пĕрлех çав пĕлтерĕшпех «сий» (ярус) термин та пур.

Чăн малтан «шай» çинчен çут çанталăк çинчен вĕрентекен наукăра калаçма пуçланă. Унта «шай» сăмахпа чĕрĕ системăсен йĕркелĕхне çырса кăтартма, чи ансат йĕркелĕхрен пуçласа чи кăткăсси патне аталанса çитнине шута илнĕ чух усă курнă. «Шай» сăмахĕ хăй вара кирек мĕнле кăткăс та ансат классен хутшăнăвне те пĕлтерет. Тепĕр майлă каласан, кирек хăш структура шайĕсен концепцийĕ çинчен калаçнă чух та «кăткăс» тата «ансат» ăнлавсемпе усă курмалла.

Чĕлхе пĕлĕвĕнче шайсем çинчен чăн малтан Америкăри дескриптивлă чĕлхе пĕлĕвĕнче сăмах хускатнă, çапах та чĕлхе материалне тĕрлĕ пайлăсем тăрăх стратификацилес шухăш нихăçан та чĕлхе наукипĕн ют пулман. Çакă чĕлхе материалне традицие пăхăнса фонетика (фонологи), морфологи, синтаксис тата ытти пайсене пайланинче курăнать. Хальхи пĕлўсемпе танлаштарсан, малтан çакăн пек чĕлхе пулăмĕсене иерархиллĕ çыхăнусен кăткăс системине тăваканни пек мар, йĕркене пăхăнса тăракан пулăм пек пăхса тухнă.

Америкăри дескриптивлă лингвистикăра шай шухăшĕсем хăйне май чĕлхе структуринче тата чĕлхене çырса кăтартас методикăран тухса тăракан тĕрлĕ стройри элементсен хутшăнăвне тĕкĕнекен концепци пулса кайнă.

Шайсен лингвистикăри концепцийĕ те кăткăс тата ансат ăнлавсемпе усă курать. Ансат шай тесен эпир тата ансатрах единицăсен пĕрлешўлĕхне, тĕслĕхрен, фонемăсене шута илетпĕр; кăткăс шайра вара тата кăт-

кăсрах единицăсен пĕрлешӳлĕхне, тĕслĕхрен, сăмахсен системăлăхне калатпăр.

Чĕлхе вăл – хăш-пĕр единицăсен пуххи тата вĕсемпе усă курас правилăсем. Чĕлхе, калаçу хатĕрĕ пулнă май, унта кăткăс чĕлхе единицисем тăвакан модельсемпе схемăсем тата тĕрлĕ пулăмсем – конкретлă сăмах майлашăвĕсем, предложенисем кĕреççĕ. Чĕлхепе калаçу хатĕрĕ вырăнне усă курни уйрăм системăсем чĕлхе элеменчĕсенчен тăнине пĕлтерет. Вĕсем информаци пухса йĕркелеççĕ, пĕлтереççĕ, каласа параççĕ. Калаçнă чух йĕркеленекен системăсем конкретлă предложенисем пулса тăраççĕ, вĕсем калаçу системи пулнă май чĕлхе единицисенчен тăраççĕ.

Чĕлхе единицисем кăткăслăх шайĕпе тата тĕллевĕпе уйрăлса тăраççĕ: фонемăсем морфемăсен тата сăмахсен сасă витĕмне тăваççĕ, морфемăсен пĕрлĕхĕ сăмахсем тăвать. Сăмахсем вара правилăсене пăхăнса ирĕклĕ калаçу единицисем – конкретлă сăмахсем, сăмах майлашăвĕсем тата предложенисем тăваççĕ. Çавна май кăткăс единицăсем ансатрах единицăсенчен аталанаççĕ.

Анчах биологипе танлаштарсан (кунта кăткăссисем ансатлисенчен аталанса пулнă), чĕлхере кăткăс единицăсем ансатраххисенчен аталанмаççĕ: предложени фонемăсенчен те, морфемăсенчен те тӳремĕн аталанмасть. Çавăнпа та чĕлхе единицисенчен пулнă чĕлхепе калаçу системинче кăткăс шайри тата ансат шайри единицăсен хутшăнăвĕ эволюцилле хутшăну мар, уйрăм компонентсен тата пĕтĕм пĕрлĕхĕн хутшăнăвĕ шутланать.

Пĕтĕм чĕлхе единицисен пахалăхĕ вĕсем ытти чĕлхе единицисемпе мĕнле хутшăнура пулнинче палăрать. Пĕтĕмĕшле илсен, çав хутшăнусем виçĕ тĕрлĕ пулаççĕ: синтагматикăллă, парадигматикăллă тата иерархиллĕ.

Синтагматикăллисенче единицăсен хутшăнăвĕ линиллĕ йĕркепе пулса пырать (тепĕр майлă вĕсене комбинаторлă хутшăнусем теççĕ). Ассоциациллĕ е парадигматикăллă хутшăнусенче единицăсене тĕрлĕрен классем çине вĕсен хăш-пĕр чи кирлĕ пĕрпеклĕхĕсене шута илсе ушкăнлаççĕ; иерархиллĕ хутшăнусенче – кăткăслăхран килекен хутшăнусем, е, тепĕр майлă каласан, ансат

единицăсем кăткăс единицăсене кĕнипе пулаççĕ. Иерархиллĕ хутшăнусене çакăн пек терминсемпе палăртма пулать: «... кĕрет» е «...тăрать». Кусем ансат единицăсем кăткăссисене кĕнипе пулнă хутшăнусем.

Асăннă виçĕ тĕрлĕ хутшăнăва кĕресси чĕлхери пур единицăсемшĕн те характерлă. Çак виçĕ тĕрлĕ хутшăну пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраççĕ. Тĕпчевсем акă мĕн кăтартаççĕ: синтагматикăллă хутшăнусене чĕлхери пур единицăсем те кĕреймеççĕ, пĕр пек кăткăслăхлă (пĕр евĕрлĕ единицăсем) кăна кĕме пултараççĕ. Тĕслĕхшĕн, линиллĕ йĕркере фонемăсем морфемăсемпе те, сăмахсемпе те çыхăнса тăраймаççĕ, ытти фонемăсемпе кăна çыхăнаççĕ. Морфемăсем фонемăсемпе те, сăмахсемпе те çыхăнаймаççĕ, ытти морфемăсемпе кăна çыхăнаççĕ. Сăмахсем ытти сăмахсемпе кăна çыхăнаççĕ, предложенисемпе те, сăмах майлашăвĕсемпе те çыхăнаймаççĕ.

Çакна шута илсе фонемăсем тĕрлĕ классене, парадигмăсене ушкăнланаççĕ: уçă сасăсен тата хупă сасăсен класĕсем пулаççĕ. Çак классем вара хăйне май пĕтĕмĕшле «фонемăсен» класне пĕрлешеççĕ. Кун пек класс çак единицăсен (чĕлхери фонемăсен) анлă пĕрлешĕвĕ шутланать. Ăна чĕлхери ытти единицăсемпе усă курса анлăрах нимĕнле класа та пĕрлештерме пулмасть.

Морфемăсем (сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсем) тĕрлĕ ушкăнсем е классем тума пултараççĕ: уйрăм пĕлтерĕшлĕ морфемăсем, сăмах тăвакан морфемăсем, сăмаха улăштаракан морфемăсем т.ыт.те. Чĕлхери мĕнпур морфемăсем пĕр пĕтĕмĕшле морфемăсен класне йĕркелеççĕ. Ку вăл морфемăсен анлă пĕрлешĕвĕ пулса тăрать. Сăмахсем пирки те çакнах каламалла. Вĕсем те тĕрлĕ ушкăнсем (классем) йĕркелеççĕ. Тĕслĕхрен: япала ячĕсем, глаголсем т.ыт.те, хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсем, пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсем т.ыт. те.

Единицăсен анлă пĕрлешĕвне чи анлă класс е чи анлă парадигма теме пулать. Чи анлă кашни класра е чи анлă кашни пардигмăра пĕр пек единицăсем, тепĕр майлă каласан, пĕр-пĕринпе синтагматикăллă хутшăнусене кĕме пултаракан единицăсем кăна тĕл пулаççĕ. Чи

анлă пĕр класра пĕр вăхăтрах фонемăсем тата морфемăсем, фонемăсем тата сăмахсем пулма пултараймаççĕ. Лиииллĕ (синтагматикăллă) çыхăнура тăма пултаракан единицăсем кăна чи анлă классене пĕрлешме пултараççĕ.

Чи анлă парадигмăсем, пĕр евĕрлĕ единицăсен пĕрлĕхĕсем, хăйне май единицăсен тĕрĕс ушкăнĕсем пулаççĕ. Çав ушкăнсене уйăрасси чĕлхери пур единицăсемшĕн те пĕр тан палăрăмсем тăрăх пулса пырать.

Шая пĕр евĕрлĕ единицăсен (пĕр пек кăткăс единицăсен) пĕтĕмĕшле хисепĕ кĕрет. Вĕсем пĕр-пĕринпе синтагматикăллă, парадигматикăллă хутшăнусене кĕреççĕ, анчах иерархиллĕ хутшăнусенче пулаймаççĕ (фонемăсем фонемăсенчен, морфемăсем морфемăсенчен, сăмахсем сăмахсенчен кăна тăраймаççĕ).

Кашни чĕлхерех йĕркене вырнаçнă единицăсем чи анлă парадигмăсем е шайсем тăваççĕ. Çавна пула чи анлă парадигмăсем е шайсем пĕтĕм чĕлхе системин хăш-пĕр пайĕсем пулаççĕ. Кашни шай тата ун единицисем пахалăх тĕлĕшĕнчен хăйне евĕрлĕ.

Иерархиллĕ хутшăнусем тĕрлĕ шайри единицăсен хутшăнăвне кăна характеристика параççĕ, тепĕр майлă каласан, пахалăхĕ енчен тĕрлĕ пысăкăшсене хакласçĕ. Çакăн пек чух ансат шайри единицăран кăткăс шайри единицăна куçасси шайлаштару урлă пулса пырать, тепĕр майлă каласан, ансат шайри элементсен синтагматикăллă пахалăхĕсене реализацилени; фонемăсен пĕрлĕхĕсем морфемăсен сасă витĕмне тăваççĕ; морфемăсен пĕрлĕхĕсем сăмахсем тăваççĕ, сăмахсен пĕрлĕхĕсем предложенисем тăваççĕ. Çавăнпа та предложенире чĕлхен пур шайĕсем те хăйсен хутшăнăвĕсемпе палăрса тăраççĕ. Çакă вара калаçу юхăмĕнче е синтагматикăра кашни шай тупăнма пултарнине пĕлтерет.

Ф.М. Березинпа Б.Н. Головинăн «Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ» вĕренӳ пособийĕнче чĕлхе шайĕсене чĕлхен автономлă механизмĕсем тенĕ. Çак чĕлхе механизмĕсене (чĕлхе шайĕсене) уйăрмалли тĕп принципсем: а) пĕр автономлă механизмри единицăсем тепĕр автономлă механизм единицисен йышне кĕмелле, е вĕсене тунă чух

хутшăнмалла, е вĕсене пĕрлештермелле; ă) кашни автономлă механизм единицисем ытти кăткăсрах механизм единицисенче е калаçура вариантсемпе çĕнĕрен пулаççĕ; б) кашни автономлă механизм единицисен шалти пĕрлĕхĕ пур; в) кашни автономлă механизм единициех тĕрлĕ паллă е паллăсен пĕрлешĕвне кăтартать.

Хальхи вăхăтра çакăн пек шайсене уйăрма йышăннă:

*1. **Фонетика – фонологи шайĕ**.* Ку шайăн единици – фонема. Вăл сасă системин абстрактлă единици шутланать. Фонема чĕлхере пĕр пек пĕлтерĕшлĕ тата фонетика тĕлĕшĕнчен пĕр евĕрлĕ сасăсен класĕ пек çӳрет.

Конкретлă сасăсене – фонемăсен варианчĕсене – фонсем е аллофонсем теççĕ. Вĕсем конкретлă фонемăсем пулаççĕ. «Фонема» термин хăй конкретлă фонемăсен класĕн кĕске ячĕ пулать.

Фонема тата фон пĕр единицăнах тĕрлĕ майлă калани пулать. Сасă фонемăн пĕр пайĕ (компоненчĕ) мар, сасă вăл – конкретлă фонема.

Фонема морфемăсен тата сăмахсен сасă витĕмĕн йышне кĕрет, морфемăсенче тата сăмахсенче тĕрлĕ вариантсемпе çӳрет, шалти пĕрлĕхлĕ (дифференциллĕ паллăсен пуххиллĕ) пулать.

*2. **Морфема – морфологи шайĕ**.* Ун пирки калаçнă чухне эпир çакăн пек ăнлавсемпе тĕл пулатпăр: морф, морфема, алломорф, сăмах. форма. «Морф» терминпа сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пайне палăртаççĕ. Çавăнпа та морфа тата вакрах пайсем çине пайласан, унта пĕлтерĕшсĕр пайсем – фонемăсем анчах юлаççĕ. Тĕслĕхшĕн, *перечитывать* сăмаха илетпĕр те ăна морфсем çине пайлатпăр: *пере – чит – ыва – ть*. Çăмăллăнах палăртма пулать, кашни сăмах пайĕ пĕр-пĕр ĕçпе çыхăннă (танл: *читать, читатель* т.ыт.те); *пере* – ĕç темиçе хут пулнине палăртать («тепĕр хут», танл: *переписать, переделать* т.ыт.те); *-ыва* – ĕç пурнăçланса çитейменнине пĕлтерет, ĕç темиçе хут пулнине кăтартать (танл: *разбрасывать, переделывать* т.ыт.те); *-ть* – инфинитив формине тăвать. «Морф» терминпа

пĕрлех чĕлхе наукинче сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пайне палăртма морфема терминпа усă кураççĕ. Мĕнле уйрăмлăх пур-ха морф тата морфема ăнлавсем хушшинче? Уйрăмлăхĕ çакăнта: морф – конкретлă морфема, вăл кашни абстрактлă морфрах пур, çак термин – семантикăпа функци тĕлĕшĕнчен пĕр пек морфсен ушкăнĕсен кĕске ячĕ: тĕслĕхрен, *ленинград-ец* тата *ленинградц-а; книг-а* тата *книж-ник* сăмахсене илер. Сăмахсен пĕрремĕш мăшăрĕнчи тĕрлĕ морфсем (*-ец* тата *-ц*) пĕр суффикс морфемăна, сăмахсен иккĕмĕш мăшăрĕнчи тĕрлĕрен морфсем (*книг-* тата *книж-*) пĕр тымар морфемăнах палăртаççĕ.

Çапла вара, морфема вăл – пĕрлештернĕ единица, морфсем вара – пайланă хыççăн паларакан морфемăн конкретлă представителĕсем.

Çакăн пек иккĕллĕ терминсем кирли сăмахăн структурине тишкернĕ чух конкретлă сасă сегменчĕсемпе тата сăмах составĕнче пĕтĕмĕшле функцие пурнăçлакан пĕрлештернĕ единицăсемпе ĕçлеме тивнинчен килет.

«Морф» тата «морфема» терминсемпе пĕрлех «алломорф» терминпа та усă кураççĕ. Алломорф тесе пĕр пек пĕлтерĕшлĕ морфсене калаççĕ. Вĕсем хушшинчи çиелти уйрăмлăхсене вара вĕсен сăмахри вырăнĕпе ăнлантарма пулать. Пĕр морфемăн алломорфĕсем пĕр сăмахăн тĕрлĕ сăмах формисенче (тĕслĕхшĕн *-ец/-ц: ленинград-ец, ленингад-ц-а*) тата тĕрлĕ лексемăсенче (тĕслĕхрен, *книг – книж-: книга – книжный*) пулма пултараççĕ. Çапла вара, пĕр морфемăн алломорфĕсем фонемăсен ылмашăвĕпе уйрăлса тăма пултараççĕ. Пĕр морфемăн алломорфĕсене морфонема теççĕ. Çав йĕрке пĕр члентан тата темиçе члентан тăма пултарать, тĕслĕхрен, *к/ч – ручка, рука; г/ж – друг, дружеский, дружба; т/ч – турат, турач(ĕ).* Морфонема ăнлав тĕрлĕ морфсене пĕр морфемăна пĕрлештерме пулăшать.

Çакăн пек уйрăмлăхсемлĕ морфсем пĕр морфемăна пĕрлешеççĕ: 1) пĕлтерĕшĕпе пĕр пеккисем; 2) вырăнĕсемпе пĕр пеккисем; 3) тĕрлĕ вырăнта та пĕр-пĕрне ылмаштарма пултараканнисем. Çав морфсем морфемăсен вариантĕсем ятлă.

Морфемăсен, хăйсем тĕллĕн, уйрăм илнĕскерсен, коммуникативлă паллисем пулмаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем чылай чухне грамматика тĕлĕшĕнчен йĕркеленсе çитмен тата синтаксис тĕлĕшĕнчен ирĕклĕ паллăсем пулаймаççĕ. Вĕсем сăмахсем тата сăмах формисем тума кирлĕ.

*3. **Синтаксис шайĕ.*** Синтаксис шайĕ, ытти шайсем пекех, хăй единицисен пуххипе уйрăлса тăрать. Çав единицăсем шутне сăмах майлашăвĕсем тата предложенисем кĕреççĕ. Сăмах майлашăвĕ вăл – пĕр-пĕринпе пĕлтерĕшĕпе тата грамматика тĕлĕшĕнчен çыхăннă икĕ е ытларах сăмах çыхăнăвĕ. Вĕсем – чăнлăхри япаласен кăткăс ячĕсем, тĕслĕхрен, *студенческое собрание, человек среднего роста, тĕнче уçлăхĕ, cup of tea, tall man, blau Himmel.*

Предложени – чĕлхе законĕсене пăхăнса грамматика тата интонаци тĕлĕшĕнчен йĕркеленсе çитнĕ калаçăвăн тулли единици. Вăл – шухăша хăш-пĕр чăнлăх çинчен тата калаçакан ун çинчен мĕн шутланине йĕркелемелли, палăртмалли тата пĕлтермелли тĕп мел. Чĕлхе наукинче предложение 200 ытла определени панă. Предложени тытăмĕнче чĕлхе тата пуплев паллисене уйăрасси структурăллă лингвистика квалификацийĕшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Предикативлă, атрибутивлă, объективлă тата ытти хутшăнусене пурнăçлакан предложени пайĕсем предложени тытăмĕнче сăмахсен тата сăмах майлашăвĕсен формисем пек тăраççĕ.

*4. **Лексикăпа семантика шайĕ.*** Çак шай чĕлхе пĕлĕвĕн пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă икĕ пайне, лексикологие тата семасиологие, пĕрлештерет. Мĕнле материала тишкернине кура уйрăм лексикологи, тепĕр майлă вăл е ку чĕлхесен лексикологине (тĕслĕхрен, чăваш, вырăс, акăлчан, нимĕç т.ыт.) тата пĕтĕмĕшле лексикологие уйăраççĕ. Пĕтĕмĕшле лексикологи пур чĕлхесене те пырса тивекен ыйтусене пăхса тухать, тĕрлĕ чĕлхе материалĕпе усă курать. Чĕлхере танлаштаруллă тата шайлаштаруллă (контрастивлă) лексикологисене уйăраççĕ. Пĕрремĕшĕ, тĕпрен илсен, хурăнташ чĕлхесенчи пĕрпеклĕхсене тата

уйрăмлăхсене тĕпчет, иккĕмĕшĕ вара пĕрпеклĕхсене тата уйрăмлăхсене хурăнташ чĕлхесенче кăна мар, хурăнташ мар чĕлхесенче те тупса палăртать.

Семасиологи вăл – лексика пĕлтерĕшĕсене тĕпчессипе çыхăннă пĕтĕмĕшле ыйтусене хускатать. Унăн тишкерӳ объекчĕ – сăмахсен чĕлхери пĕлтерĕшĕ мар, лексика пĕлтерĕшĕ.

Семасиологи лексика единицисен пĕлтерĕшне сăнать. Вăл çакăн пек ыйтусене тĕпчет: лексика пĕлтерĕшĕн несĕллĕх никĕсĕ; лексика пĕлтерĕшĕсен типĕсем; сăмахсен пĕлтерĕшĕ аталаннин закономерноçĕсем; сăмах пĕлтерĕшĕ мĕнле улшăннине классификацилени. Лексика шайĕн тĕп единици – лексема. Тепĕр майлă каласан, чĕлхен лексика пĕлтерĕшĕсене пĕрлештерекен структурăллă элеменчĕ сăмах шутланать. Сăмах сăмах майлашăвĕсен тытăмне кĕрет, сăмах тăвакан типсене тата морфологи категорийĕсене тунă çĕре хутшăнать, морфемăсемпе фонемăсене пĕрлештерет, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисен йышĕнче вариантлă пулса çĕнĕлле курăнать.


Литература

1. *Ахунзянов Э.М.* Общее языкознание. Казань: Изд-во Казан. ун-та, 1981.

2. *Степанов Ю.С.* Основы общего языкознания. М.: Просвещение, 1975.

3. *Ахманова О.С.* Словарь лингвистических терминов. 2-е изд. М.: Сов. энцикл., 1990.


## 2§. Фонетика. Фонологи шайĕ

**Фонетика** (грекла phonetikos – «сасăллă», phone – «сасă») – чĕлхе вĕрентĕвĕн пуплеври сасăсене тĕпчекен пайĕ. Тĕпчевçĕсем ăна тĕрлĕрен палăртаççĕ: чĕлхеçĕсен пĕр ушкăнĕ фонетика предмечĕн ыйтăвĕ – чĕлхери пĕлтерĕшлĕ пайрăмсем – морфемăсем, сăмахсем мĕнле сасăсенчен пулса кайни тесе пăхаççĕ (Р.И. Аванесов, А.А. Реформатский); тĕпчевçĕсен тепĕр ушкăнĕ фонетика вĕрентĕвĕ шутне интонаци хатĕрĕсене те кĕртеççĕ (Л.Л. Буланин, А.Н. Гвоздев, М.В. Панов). Тепĕр

тĕрлĕ шухăшлакансем те пур. Ку шухăшпа килĕшӳллĕн фонетика предмечĕ шутне сасăсем çырура мĕнле çырăннине те (графикăна), пĕлтерĕшлĕ пайрăмсене тĕрĕс çырнине (орфографие) те кĕртмелле (Л.В. Щерба).

Фонетика чĕлхен пĕлтерĕшсĕр единицисене тишкерет. Пĕр енчен, ку чĕлхе пайрăмĕсен (сасăсен, сыпăксен, пусăмăн) пĕлтерĕшĕ çук, е хăйне евĕр пĕлтерĕш пур (тĕрлĕ интонаци сĕмĕсем), тепĕр енчен, вĕсем чĕлхен пĕлтерĕшлĕ пайрăмĕсене (морфемăсене: сăмахсене, калăшсене) калăпласçĕ.

Фонологи (грекла phone – «сасă», logos «сăмах», «вĕрентӳ») – чĕлхе вĕрентĕвĕн пайĕ, чĕлхери сасă тытăмĕн хальхи тăрăмне (ăна синхрони фонологийĕ теççĕ) тата авалхи тăрăмне (çакна диахрони е историлле фонологи теççĕ) тĕпчет. Фонетика пуплеве артикуляципе акустика пулăмĕ тĕлĕшĕнчен тĕпчет пулсан, фонологи сасă пайрăмĕсене пĕлтерĕш енчен тишкерет. П.Я. Яковлев ун пирки çапла çырать: «Чĕлхе материйĕ çинчен вĕрентекен ăслăлăхăн фонологи текен пайĕ, фонетика пайĕпе танлаштарсан, çӳллĕрех картлашкара тăракан ăслăлăх. Вăл чĕлхери сасăсене лингвистика енчен, урăхла каласан фонетика пулăмĕсем мĕнле функци пурнăçланине тĕпе хурса тĕпчет (Чăваш фонетики, 14 с.).

Чĕлхе вĕрентĕвĕн ытти пайĕсем пекех «фонологи» чĕлхе системинче уйрăм ярус (шай) йĕркелет. Фонологи икĕ шайлă сегмент тата суперсегмент пайрăмĕсен сасă тытăмне тишкерет. Çавăнпа хăш чухне сегмент тата суперсегмент фонологийĕсем çинчен калаçаççĕ.

Сегмент шайĕнче пуплеври сасăсене пĕрин хыççăн тепри епле сыпăнса пыни енчен тишкереççĕ. Сегмент шайĕнчи тĕп пайрăм – фонема. Вăл пуплеве аллофон пулса кĕрет. Нумай чĕлхере, çав шутрах вырăс чĕлхинче те, фонетикăри тĕп пайрăм фонема шутланать. Фонема – чĕлхен сасă тытăмĕнчи чи пĕчĕк, вакланман, пăхăнман пайрăм, унăн пĕлтерĕшне çыхăнас хевти пур, чĕлхен пĕлтерĕшлĕ пайрăмĕсене калăплать тата вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма пулăшать (Чăваш фонетики, 18 с.).

Хăш-пĕр чĕлхесенче фонема термин вырăнне силлабема (сыпăк) тени те тĕл пулать. Чĕлхен чи пĕчĕк пайрăмĕ фонема тетпĕр пулсан, пуплев юхăмĕн чи пĕчĕк пайрăмĕ – сыпăк.

Фонетикăн вакрах пайĕ шутне сăнавлă фонетикăна кĕртеççĕ. Пуплеве сăнавлă меслетпе тĕпчени пуплев пулăмĕсене тĕрĕсрех çырса кăтартма май парать, çĕнĕлĕхсем кĕртет.

Фонетикăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пайĕ – тишкерӳллĕ е ӳкерчĕклекен фонетика. Тишкерӳллĕ фонетика сасăсене илтĕнӳ палăрăмĕсене кура, мĕнле каланине кура тата кирлĕлĕхне кура хаклать.

Фонетикăн ятарлă пайĕ – историлле фонетика. Вăл харпăр чĕлхен сасă тытăмне историри пулăмĕ тĕлĕшĕнчен çырса кăтартать. Историлле фонетикăн тĕп ыйтăвĕ – фонетикăра вăхăт иртнĕçемĕн пулса иртекен улшăнусене пăхса тухасси. Историлле фонетика авалхи çыру палăкĕсене е вĕсен реконструкциленнĕ варианчĕсене тĕпчет.

Çавăн пекех чĕлхе ăслăлăхĕнче пĕтĕмĕшле фонетика текен пай пур. Пĕтĕмĕшле фонетика тĕнчери чĕлхесенчи сасăсене, вĕсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене, сасă улшăнăвĕсен пĕр пĕтĕмĕшле йĕркисене тупса палăртать.

***Пуплеври сасăсем тата вĕсене ушкăнласси.*** Сасă – пĕр-пĕр япала чĕтренĕвĕн результачĕ. Сасă пуплевре сасă чĕлĕхĕсем чĕтреннипе тата сывлăш хумĕ пуплев органĕсене сĕртĕнсе тухнипе пулать. Физикăн пĕр пайĕ – акустика – сасса çапла хаклать:

1) сасă хулăнăшĕпе çинçĕшĕ палăртнă вăхăтра чĕтренӳ миçе хут пулса иртнинчен килет. Чĕтренӳ мĕн чухлĕ хăвăртрах, сасă çавăн чухлĕ çинçерех пулать. Этем хăлхи 16-ран пуçласа 20 000 Гц тăтăшлăхпа чĕтрекен сасса илтме пултарать (Гц – çеккунтра пулса иртекен пĕр тулли чĕтренӳ);

2) сасă вăйĕ чĕтренӳ сулăмлăхĕнчен килет. Чĕтренӳ сулăмлăхĕ мĕн чухлĕ вăйлăрах, сасă вăйĕ çавăн чухлĕ пысăкрах;

3) тембр тĕп тонпа тата унпа хутăшса каякан хушма тонсенчен килет;

4) сасӑ вӑрӑмӑшӗ тесе пӗр-пӗр сасӑ мӗн вӑхӑт илтӗннине калаççӗ.

Этемӗн сасӑ тумалли чи кирлӗ органӗ – сасӑ чӗлӗхӗсем. Вӗсене музыка инструменчӗпе танлаштарма май пур. Сасӑ чӗлӗхӗсем пӗр пек ӗçлеççӗ теме пулать. Анчах сасӑ кӑларнипех пуплев пулмасть. Сасӑ тумалли пуплев органӗсем шутне карланкӑ, çӑвар хӑвӑлӗ, сӑмса хӑвӑлӗ кӗрет. Çавӑн пекех пуплев органӗсем шутне чӗлхе, шӑлсем, тута кӗреççӗ. Вӗсем сывлӑш çулӗ çинче чӑрмавсем туса тӗрлӗ сасӑ кӑларма май параççӗ. Сывлӑш пуплев органӗсенчен тухса хӑйне уйрӑм сасӑ пулать.

Пуплев юхӑмӗнчи сасӑсен спектрне спектографпа тупса палӑртаççӗ. Сасӑ спектограмми çӳхе йӗрсенчен тӑрать. Уçӑ сасӑсене сӑнланӑ чухне виçӗ форманта пуррине палӑртни çителӗклӗ: чи кирлине тата икӗ хушма формант ($F^2$,$F^3$) палӑртаççӗ. Сасӑ хулӑнӑшне герцпа виçеççӗ е, ытларах чухне, чикӗ леш енче циклпа виçни те тӗл пулать. Сасӑ вӑйне децибалпа виçеççӗ.

Фонетика ыйтӑвӗсемпе ӗçлемен çыншӑн сасӑсене ушкӑнласси сасса илтнӗ тӑрӑх пулса пымалла пек туйӑнать. Анчах пуплеври сасӑсене кун пек ушкӑнлани çителӗксӗр. Пуплеври сасӑсене икӗ майлӑ ушкӑнлама пулать: 1) пуплеври сасӑсем мӗнле майпа пулнине пуплев органӗсен ӗçне кура ушкӑнласси артикуляци тӗлӗшӗнчен пулать; 2) тӗрлӗ приборсемпе, пуплеври акустика палӑрӑмӗсемпе – формантпа, шавпа тата ыттисемпе те. Çакӑ акустика тӗлӗшӗнчен ушкӑнлани пулать.

***Сасӑсене артикуляци тӗлӗшӗнчен ушкӑнласси.*** Сас паллисем, орфографи çырӑвӗ фонетикӑра тӗп-тӗрӗс информаци памаççӗ. Пӗр саспалли темиçе сасса тӳр килме пултарать, е пӗр сассах темиçе саспаллипе палӑртма пулать. Çавӑнпа чӗлхе ӑслӑлӑхӗнче хӑйне уйрӑм çыру системи – транскрипци пур. Кирек хӑш уçӑ сасса та чӗлхе çӑварта ӑçталла куçнине кура хаклама пулать.

Хупӑ сасӑсене уйӑрнӑ чухне икӗ тӗп уйрӑмлӑха шута илмелле: 1) хупӑ сасӑн пулу вырӑнӗ; 2) пулу

мелĕ. Кусем хупă сасăсен тĕп уйăру паллисем шутланаççĕ.

Хупă сасăсене пулу вырăнне кура ушкăнласан, вырăс чĕлхинчи хупă сасăсем çак ушкăнсене пайланаççĕ:

1) тутапа калакан хупă сасăсем [б], [п], [м];

2) малчĕлхепе тата шăлпа калакан хупă сасăсем [д], [н],[б];

3) хыççĕлхепе калакан хупă сасăсем [г], [к], [х];

4) сăмсапа калакан хупă сасăсем [м], [н];

5) тутапа-шăлпа калакан хупă сасă [в].

Француз чĕлхинчи [r] сасса чĕлхепе калаççĕ. Акăлчан чĕлхинче пырпа калакан [h] сасă пур.

Хупă сасăсене пулу мелне кура ушкăнласси:

1) питĕрĕнчĕк: [п], [к], [т];

2) хĕсĕнчĕк: [ф], [х], [с], [ш], [в], [j];

3) хутшăнчăк [ц], [ч];

4) тавра, чĕлхеçум [л];

5) тавра, сăмсапа [м], [н];

6) чĕтренчĕк [р].

Чĕлхери сасăсене артикуляци тĕлĕшĕнчен уйăрни вĕрентӳ ĕçне çăмăллатать, ансатлатать. Чĕлхе вĕрентĕвĕнче те ку классификаципе килĕшеççĕ, анлă усă кураççĕ. Акустика енчен сасăсене çакăн пек ушкăнлани тĕрĕсех мар пулин те, ку ансат классификаци шутланать. Артикуляци тĕлĕшĕнчен тунă классификацие, тĕрлĕ приборсемпе шыраса тупнă çĕнĕлĕхсене пĕр кĕнекене кĕртсе пĕтерме май çук.

Иртнĕ XX ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенчен пуçласа чĕлхеçĕсем этем калама пултаракан пур сасăсене те ушкăнласа тĕпчес ыйтупа уйрăмах нумай ĕçлеççĕ. Çак тĕллеве пурнăçлас тĕлĕшпе нумай çĕнĕлĕх шухăшласа кăларнă. Сасăсене çĕнĕлле ушкăнлас енчен Р.Якобсон, Г.Фант, М.Халле хăйсен классификацине сĕнеççĕ. Классификаци никĕсĕнче – вуникĕ пункт. Çак пунктсем тăрăх тĕнчери мĕн пур чĕлхери сасăсене ушкăнласа, тишкерсе тухма май пур. Классификацин тĕп паллисем:

1) уҫă сасă – уҫă сасă мар (акустика тата артикуляци енчен сывлăш сасă ҫулĕпе мĕнле тухнине кура тишкереççĕ);

2) хупă сасă – хупă сасă мар (акустика енчен сасă хулăннине е ҫинҫине, артикуляци тĕлĕшĕнчен сывлăш сасă ҫулĕпе мĕнле тухнине кура тишкереççĕ);

3) компактлă – дифузиллĕ;

4) йывăрланнă, е туртăнчăк – туртăнчăк мар;

5) янăравлă – янăравсăр;

6) сăмсапа калакан – тутапа калакан;

7) татăлнă – татăлман;

8) уҫăмлă – уҫăмсăр;

9) пырпа калакан – пырпа каламан;

10) хулăн – ҫинҫе;

11) бемольлĕ (ҫурма аял тонлă) – ансат;

12) диезлă (ҫурма ҫӳл тонлă) – ансат.

Каярахпа Н.Хомскипе М.Халле чĕлхесенчи сасăсене уйăрма урăхларах классификаци сĕнеççĕ. Ку классификаци ҫĕнĕлĕхĕ – тĕпчев ĕҫне «пуплев органĕсен нейтраллă позицийĕ» текен ăнлава кĕртни.

Этем чĕлхи – сасăллă чĕлхе. Пуплев юхăмĕ сасăсем татти-сыпписĕр тухнипе пулать. Фонетика тĕлĕшĕнчен пуплев юхăмне пайрăмсем ҫине уйăрма май пур. Текста хăйне сăмах ҫаврăнăшсем (фразăсем) ҫине пайлама пулать. Сăмах ҫаврăнăшĕсенче (фразăсенче) интонаци вĕҫленмест. Сăмах ҫаврăнăшĕсем синтагмăсене пайланма пултараççĕ. Синтагмăсем хушшинче пĕчĕкрех чарăнусем пур.

Синтагмăран та пĕчĕк пайрăм – фонетика сăмахĕ. Фонетика сăмахĕсем чарăнусăр, пĕр пусăмлă пулаççĕ. Фонетика сăмахĕсене паузăсăр татăксем, хыççăмахсем хушса калаççĕ. Тĕслĕхрен: *вăрман витĕр, ан пыр, эсĕ те.* Юлашкинчен, сăмахсем, вăл шутра фонетика сăмахĕсем те, сыпăксене пайланаççĕ. Сыпăксем сасăсенчен тăраççĕ. Сыпăк тесе пуплев юхăмĕн пайланман чи пĕчĕк пайрăмне калаççĕ. Ҫавăн пекех сыпăк кăткăс фонетика пайрăмĕ шутланать. Сыпăка тишкерекен уйрăм теори ҫук. Артикуляци тĕлĕшĕнчен сыпăк тесе сывлăш юхăмĕпе черетленсе тухакан сасăсене е сасăсен

пĕрлешĕвне каламалла. Акустика тĕлĕшĕнчен сыпăк чикки сыпăк янравлăхĕнчен килет. Янравлăх тесе сасă илтĕнĕвне калаççĕ. Янравлăха сасă илтĕнĕвĕ пек пăхсан уçă сасăсем чи янравлисем шутланаççĕ, хупă сасăсенчен сонорлă хупă сасăсем янăравлисем пулаççĕ. Сăмахри сасăсем пĕр-пĕринчен янăравлăхпа уйрăлса тăраççĕ. Янăравлă сасă тавра янăравсăррисем пуçтарăнаççĕ. Янăравлă сасă сыпăк тăвать. Янăравлисем уçă сасăсем пулнă пирки вĕсем сыпăк тăвакан сасăсем шутланаççĕ. Сыпăк уçă сасăпа вĕçленсен уçă сыпăк, хупă сасăпа вĕçленсен хупă сыпăк теççĕ. Сыпăк – чи пĕчĕк калу пайрăмĕ. Сыпăксем калаçнă чухне сывлăш çавăрса илме кирлĕ.

***Фонемăсене уйăрса палăртни.*** Чĕлхе пĕлĕвĕн тĕп задачи харпăр чĕлхери пуплев юхăмĕнчи сасăсене пĕр-пĕринчен уйăрса сăмахсем, сăмах формисем йĕркелеме хăш сасăсем хутшăннине тĕпчесси шутланать. Сăмахсем пĕр-пĕринчен янравлăхĕпе уйрăлса тăраççĕ. Фонемăсене тупса палăртас тесен пĕр пек янравлăхлă сăмахсене илмелле. Оппозицисенче чи пĕчĕк, урăх пайланман пайсене тупаççĕ. Фонема тесе пуплев юхăмĕн урăх татах вакланман пайрăмне калаççĕ. Кашни фонемăн хăйĕн уйăру паллисем пур.

**Фонологи системи.** Сасă пайрăмĕсене вĕсен функцийĕсене кура тĕпчесен çеç вĕсем чĕлхе пулăмĕ шутланаççĕ. Сасă пайрăмĕсене тĕрлĕ сăмах, сăмах форми тăвас пĕлтерĕшпе пăхмалла. Çакăнта этем чĕлхин пĕлтерĕшĕ палăрать. Фонетикăра сасă пайрăмĕсен системине икĕ енчен тĕпчеме пулать: пĕрремĕшĕ – артикуляцине физиологи пĕрлĕхĕ тĕлĕшĕнчен; иккĕмĕшĕ – сасăсен пĕлтерĕшĕ (функцийĕ) тăрăх. Икĕ енлĕ тĕпчесен те тишкерӳ объекчĕ пĕрех пулать. Сасăпа фонема – фонетика системин расна пайрăмĕсем. Вĕсем нимĕнле майпа та пĕр япала пулаймаççĕ. Сасăпа фонема пĕр-пĕринчен уйрăлса кайма та, пĕрлешме те пултарайманççĕ. Çапах фонемăпа пуплеври сасă хушшинче çыхăну пур. Çак çыхăну фонема пуплевре çеç пурнăçланма пултарнинче курăнать.

Сасă пайрăмĕсем пуплевре сăмахсем, сăмах формисем йĕркелеççĕ. Сăмахсемпе сăмах формисем сасă пайрăмĕсен калăпăшĕпе уйрăлса тăраççĕ. Вĕсен хушшинчи уйрăмлăхсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ: икĕ сăмах сасă йышĕпе уйрăлса тăма пултарать (тĕслĕхрен: *капан – каплан; утă – вутă*); сасă черетленĕвĕ расна пулма пултарать (тĕслĕхрен: *ĕне – енĕ, ут – ту, сĕт – тĕс* т.ыт.те); юлашкисен, пĕр сасă пайрăмĕ çеç расна, ыттисем пĕр пек пулсан та пĕлтерĕш улшăнать (тĕслĕхрен: *куç – пуç, су – сӳ* тата ыт.те). Енчен те икĕ сăмах пĕр-пĕринчен пĕр сасă пайрăмĕпе çеç уйрăлса тăраççĕ пулсан – пĕр пек сассисем пĕр фонетика позицийĕнче пулаççĕ, урăхла пĕлтерĕш тăвакан сасă пайрăмĕ сăмах формин уйрăмлăхĕ пулать. Çапла майпа фонема сасă системинче сăмахсемпе вĕсен формисене уйрăмлатакан пайрăм тулса тăрать.

Сасă пайрăмĕсем яланах ытти пайрăмсемпе юнашар тăраççĕ, çавăнпа юнашар тăракан пайрăмсен витĕмне хăйсем çинче туяççĕ. Çак витĕме пула сасă пайрăмĕсем хăйсен пахалăхĕсене, уйрăмлăхĕсене улăштарма пултараççĕ. Кайри ретри уçă сасăсем çемçе хупă сасăсен витĕмĕпе мала куçма пултараççĕ, малти ретри хытă хупă сасăсен витĕмĕпе уçă сасăсем кайри рете куçма пултараççĕ. Сасă пайрăмĕсене функцийĕ (пĕлтерĕшĕ енчен, пăхнă хыççăн сасă пайрăмĕсен улшăнман пĕлтерĕшĕсене тупса палăртмăлла. Çавăн пекех çыхăнчăк гата улшăнакан пĕлтерĕшсене те пĕлмелле, мĕншĕн тесен çак пĕлтерĕшсемпе вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса е уйрăлса тăраççĕ. Кирек мĕнле фонемăна та уйăру паллилĕ пĕрлĕх тесе хаклама пулать.

Улшăнакан позицирен килекен пĕлтерĕшлисем фонема шутне кĕмеççĕ. Фонемăна чăнлăхра калайман пуплев сасси те теме пулать. Фонема пурнăçа пуплеври сасă урлă кĕрет. Фонемăна эпир алăпа тытса кураймаспăр, мĕншĕн тесен вăл сасă системинчи абстрактлă пайрăм. Пуплеве сăнаса фонема аллофонĕсене тишкерме пулать. Фонема пĕлтерĕшлĕ пайрăмсене калăплать, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма пулăшать.

Пушлев юхăмĕнче сасăсем пĕр-пĕрне витерсе пынăран тĕрлĕ условисенче аллофонсем çуралаççĕ. Аллофон пулăвĕн çирĕп йĕрки пур. Ана чĕлхен фонема тытăмĕ йĕркелесе пырать. Чĕлхере тĕрĕс йĕркеленĕ фонологи системи çук, тен, нихăçан та пулмĕ.

Литература

1. *Березин Ф.М., Головин Б.Н.* Общее языкознание: Учеб. пособие. М.: Просвещение, 1979.

2. *Яковлев П.Я.* Чăваш фонетики: Вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар: Чăваш ун-чĕн изд-ви, 1995.

3. *Ахманова О.С.* Фонология. М.: Изд-во Моск. ун-та, 1954.

4. *Бондарко Л.В.* Фонетическое описание языка и фонологическое описание речи. Л., 1981.

5. *Бондарко Л.В. и др.* Основы общей фонетики. СПб.: Изд-во С-Петерб. ун-та, 1991.

6. *Воронкова Г.В.* Проблемы фонологии. Л.: Изд-во Ленингр. ун-та, 1981.

7. *Зиндер Л.Р.* Основы фонологии. М.: Наука, 1960.

## 3§. Морфемăпа морфологи шайĕ

**Морф ăнлав.** Дескриптивистсен ĕçĕсенче «морфема» ăнлавпа юнашар çĕнĕ термин çӳреме пуçларĕ. Пурте морф пирки калаçма тата çырма тытăнчĕç. Мĕн вăл морф? ЛЭС (Лингвистика энциклопеди словарьне) уçса пăхсан унта «морф» ăнлавăн çакăн пек палăртăмне тупма пулать. «Морф» (гр. чĕл. morhe сăмахран, пулнă, вăл «форма» тенине пĕлтерет) – текстăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк единици.

«Морф» термина 1947 çулта Ч.Ф. Хоккетт аллофон ăнлавăн параллелĕ пек сĕннĕ. Аллофонпа фонема хушшинчи çыхăну морфпа морфема хушшинчи çыхăнупа пĕр тан тесе шутланă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенчи Америка лингвистчĕсем морфа пĕр енлĕ единица пек пăхнă, тепĕр майлă каласан, каларăшăн тулаш элеменчĕ тенĕ. Çак ăнлану Хоккетт пĕтĕмлетĕвĕнче те палăрнă. Вăл каланă тăрăх, морф фонемăсенчен, морфема вара морфсенчен тăрать.

Ăнлава лайăхрах ăнланса илес тесен лингвистсен темиçе палăртăмне пăхса тухар. Ю.С. Степанов шухăшĕпе, морф вăл – сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕ, тепĕр майлă каласан, сăмахăн хăйĕн пĕлтерĕшне çухатмасăр малалла пайланман пайĕ. Морф тенине икĕ енчен: хăйĕнчен чылай пысăкрах единицăсем – сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсем, унсăр пуçне пĕчĕкреххисем – сасăсем тата фонемăсем тĕлĕшĕнчен те пăхма пулать.

Сăмахри вырăнĕпе морфсем çакăн пек пайланаççĕ: сăмахăн тĕп пайĕ (ăна *сăмах тымарĕ* теççĕ); сăмах тымарĕ умĕнче тăраканни – *приставка* е *префикс*; сăмах тымарĕ хыççăн тăракан морф – *аффикс* е *суффикс*, суффикс хыççăн тăраканнисем – *сăмах вĕçлемĕшĕ* е *флекси*; сăмах тымарне кĕрекен морфсене инфикс теççĕ. Çавăн пекех сăмахра пĕлтерĕше палăртас енĕпе аффикс евĕр элементсем пулма пултараççĕ. Апла пулин те вĕсем нимĕнле категори пĕлтерĕшĕпе те çыхăнман. Вĕсене *интерфикс* теççĕ. Интерфикссен тĕп пĕлтерĕшĕ – сăмах тымарĕсене е тымарсемпе аффикссене пĕр-пĕринпе çыхăнтарасси (*вод-о-провод, сам-о-лет*).

Морфема – чĕлхе единици, – гет А.Е. Супрун. – Пуплеври вара вăл хăйĕн уйрăм тĕсĕ – морф пулса тухса тăрать. Морфемăн пуплеври улшăнăвĕн тĕслĕхĕ вырăнне вырăс чĕлхинче *свет – свеч – свет (светить) свящ – (освящать)* альтернаци пулма пултарать.

Алломорф вăл – морфемăн варианчĕ. Морфсемпе морфемăсем çинчен калаçнă чух виçĕ тĕп саманта шута илмелле. Чи ансатти вăл – морфемăсем пĕр йышши фонемăсенчен тăни. Чăваш чĕлхинче: *ватăсемпе – атăсемпе, хутсемпе – утсемпе*. Ку тĕслĕхре эпир морфема пĕр евĕрлĕ тата расна фонемăсенчен тăрать теме пултаратпăр.

Морфсене пĕтĕмлетнĕ чух час-часах йывăртарах самантсем те тĕл пулаççĕ. Пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен морфсем пĕрешкел, фонетика формипе пĕр пек мар аллофонсенчен тата тĕрлĕ фонемăсенчен тăраççĕ. Тĕслĕхрен, вырăс чĕлхинче:

*Мам – ой* анчах та *печ' – ју*
*Ламп – ой* *ноч' – ју*
*Кор – ой,* *двер' – ју*

Кун пек тĕслĕхсене чĕлхеçĕсен тĕрлĕ мелпе ăнлантарма тивет. Унсăр пуçне виççĕмĕш тĕс те пулать. Вĕсен шутне, тĕслĕхрен, акăлчан чĕлхинче тĕл пулакан нумайлă хисепĕн тĕрлĕ морфĕсем кĕреççĕ. Пĕлтерĕшĕпе вĕсем пур те пĕр пек, анчах та фонема тытăмĕ расна:

а) *boy – z* ă) *box – iz* б) *ox - en* г) *man – çын*
*dog – z* *tax – iz* в) *sheep – сурăх* *men – çынсем*
*cat – s* *fox – iz* *sheep – сурăхсем*

Чăн малтан çакă морфсем пĕлтерĕшĕпе пĕр пек, фонема тытăмĕпе тĕрлĕрен чух пулса иртет. Маларах асăннине пĕтĕмлетсе морфема-омонимсем пурри пирки калама пулать.

Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем вара морфемăсен хушшăнăвĕнче синоними, антоними тата омоними пулăмĕсем хуçаланнине палăртаççĕ.

***Морфема – морфема шайĕн тĕп единици.*** Чĕлхе грамматики синтаксиспа морфологирен тăрать. Кунта морфема та пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. “Морфема” ăнлав сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пайĕ тенине пĕлтерет. Вăл тата термин шутланать, ăна 1881 çулта И.Бодуэн де Куртене сăмах тымарĕпе аффикс ăнлавсен пĕтĕмлетĕвĕ тесе палăртнă. Çак термин Парижри лингвистика шкулĕн, Л.Блумфилдăн тата дескриптивлă лингвистикăн тĕпчевĕсенче, хальхи чĕлхе пĕлĕвĕнче анлă сарăлнă.

Морфема ăнлав структура лингвистикин картĕнчен тухса пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕнче тата историллĕ грамматикăсенче тĕп вырăн йышăнчĕ. Францин хăш-пĕр чĕлхеçисем аффикссемпе пулăшу сăмахĕсене кăна морфема теççĕ. Хăй пĕлтерĕшлĕ морфемăсене (сăмах тымарĕсене) семантемăсем (Ш. Балли) е лексемăсем (Мартине) теме сĕнеççĕ, морфема ăнлав вырăнне монема ăнлава сĕнекенсем те пулнă (Мартине).

Юлашки çулсенче морфема ăнлав уйрăмах вăраха пыракан хĕрӳ тавлашусен теми пулса тăчĕ. Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем ăна лингвистика литературинче чи пăтравлă

терминтесе шутлаççĕ. Фонетика тĕлĕшĕнчен Бодуэн де Куртенэ морфемăна çакăн пек пайлама сĕннĕ:

1) сăмахпа калакан нормăсен речĕсен морфеми;
2) сасăпа калакан сăмахсен морфеми;
3) сыпăксен морфеми;
4) фонемăсен морфеми.

Семасиологипе морфологи тĕлĕшĕнчен пĕчĕккĕн пайланса пынине çырса кăтартса Бодуэн де Куртенэ пуплеве, предложенисене, синтагмăсене, морфемăсене, психика (морфологипе семасиологи) морфемисен пайĕсене йĕркипе вырнаçтарнă. Халĕ морфемăсене классификацилеме (ушкăнлама) та юранă. Морфемăсен хăй пĕлтерĕшне пĕлни пачах та кирлĕ мар, вĕсен пĕлтерĕшĕсен уйрăмлăхне пĕлни те çителĕклĕ. Ку тĕлĕшрен морфемăсене икĕ пысăк ушкăна пайлаççĕ:

1) ятарлă пĕлтерĕше палăртаканнисем; каларăш вĕсемсĕр пачах та пулма пултараймасть;

2) ятарлă мар пĕлтерĕше палăртаканнисем.

Формине кура морфемăсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ:

1) *сегментлă морфемăсем* (пуплев юхăмне пайласан вĕсене уйăрса илме пулать);

2) *суперсегментлисем* (вĕсене калаçу юхăмĕнче пайласа уйăрма май çук, вĕсем пуплев юхăмĕнче çеç хăшпĕр сегмент морфемăсем пулăшнипе палăраççĕ). Суперсегмент морфемăсем суперсегмент фонемăсенчен тăраççĕ, темиçе тĕсе уйăлаççĕ:

1. *Пусăм морфемисем*: *Вăл!* тата *Вăл?* тĕслĕхсенчи икĕ каларăшра пусăмсемпе (тон) пĕрле суперсегмент морфемисене йĕркелеççĕ, урăхла каласан, вĕсем пулăшнипе тĕслĕхсем ахаль сăмахсем мар, каларăшсем пулнине уйăрса илме пулать.

2. *Сасă морфемисем* – вырăс тата чăваш чĕлхисенчи ыйтуллă предложение çирĕплетсе каланинчен уйăракан сасă пахалăхĕ. (Тĕслĕх: *Вăл!* тата *Вăл?*). Сасăсем вырăс чĕлхинче интонацие уйăраççĕ тата каларăшăн пĕлтерĕшне тытса тăраççĕ, анчах та сăмахсене уйăрмаççĕ. Çав вăхăтрах вырăс чĕлхинче сасăсем морфемăсем те пулаççĕ: *а, и.*

3. *Çыхăнтару морфемисем*: *кĕрӳ(ш)ĕ*, *пăру(ш)ĕ*

Çапла тытăм (структура) шайĕнче çырса кăтартнă морфема фонема пекех абстрактлă единица шутланать. Чăннипе вара фонемăсен варианчĕсем пулма пултараççĕ. морфемăсенче черетленекен фонемăсем пулаççĕ, çавăнпа та вĕсене пĕрлĕхре çеç туллин çырса кăтартма пулать.

Халĕ лингвистикăн тепĕр пайне – морфологие пăхса тухăпăр.

***Морфологи.*** Ку терминпа эпир чĕлхе урокĕсенче те, пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕн курсĕнче те пĕр хут çеç мар тĕл пулнă. Малтанах лингвистика словарĕнче панă определение пăхса тухар.

Морфологи (грек сăмахĕнчен пулнă: «morhe» – форма тата «logos» – сăмах, вĕрĕнӳ):

1) сăмах формисене йĕркелеме тата вĕсене ăнланма май паракан чĕлхе механизмĕн системи;

2) çак система килĕшӳллĕ ĕçленине тата аталаннине тĕпчекен грамматика пайĕ.

Морфологие грамматикăн уйрăм пайĕ пек пăхнин тĕп сăлтавĕ – сăмах формисенче пĕчĕкрех пайлăллă единицăсем – морфемăсем, морфсем е монемăсем пулни. Çавăн пекех *морфологи – формăсем çинчен вĕрентекен ăслăлăх* текен анлăрах ăнлав та пур. Морфологие предмет пек пăхса тухни вырăнлă. Н.М. Шанский ăна сăмах çинчен вĕрентекен грамматика пайĕ тесе вĕрентет. Морфологин тĕп объекчĕ – сăмах тата унăн улшăнăвĕ. Эпир морфологие çакăн пек определенисем паратпăр: «Пуплев пайĕсем тата çав пуплев пайĕсене кĕрекен сăмахсен е вĕсен категори формисемпе категорисĕр формисен улшăнăвĕпе пĕлтерĕшĕсем çинчен вĕрентекен чĕлхе наукин пĕр пайне морфологи темелле» (Хальхи чăваш чĕлхи: Морфологи, 16 с.). Кĕскен: сăмах е сăмах формин улшăнăвĕ тата форма пулăвĕ çинчен вĕрентекен чĕлхе наукин пĕр пайне морфологи темелле.

Морфологи сăмахсен грамматика паллисене тĕпчет, ку е вăл сăмах, сăмахсен ушкăнĕсем мĕнле грамматика пĕлтерĕшлĕ пулнине, тĕрлĕ пуплев пайĕнчи сăмахсен грамматика категорийĕсене тупса палăртать. Тĕслĕхрен, пуплев пайĕсен системине, кашни пуплев пайĕнчи сă-

махсен лексикăпа грамматика хăйне евĕрлĕхне тĕпчет, пуплев пайĕсем пĕр-пĕринпе çыхăннин уйрăмлăхĕсене тупса палăртать.

Сăмахсене пуплев пайĕсем тăрăх ушкăнланă чух усă куракан морфологи паллисем çаксем:

1) сăмахсем улшăннипе улшăнманни, вĕсен улшăнăвĕн тĕсĕ тата хăйне евĕрлĕхĕ (вĕçленӳ. сăпатлану); сăмахсен парадигми;

2) сăмахсен грамматика категорийĕсем тата вĕсен хăйне евĕрлĕхĕ.

Чĕлхе пĕлĕвĕ тĕлĕшĕнчен пăхсан морфологие çапла палăртма пулать: сăмахсен грамматика категорийĕсен пĕрлĕхĕпе системи тата сăмах формисен грамматика пĕлтерĕшĕсем чĕлхе морфологине йĕркелеççĕ те ĕнтĕ. Пĕтĕм морфологие компонентсен терминĕсемпе çырса пама пулать. Компонентсене пĕр çыхха – комбинацие пухма пулать. Кашни çыххи уйрăм морфемăна кăтартать.

Морфологие морфемăсен пĕрлĕхĕ тата вĕсен çыхăнăвĕ пек пăхни, пирĕн шутпа, тĕрĕсех мар. Вăл формăллă та, семантикăллă та. Çавăнпа та чĕлхе морфологине форма тĕлĕшĕнчен кăна çырса пама çук.

Чĕлхе морфологийĕн хăйĕн семантики пур. Ку вăл чĕлхе единицисен тытăм пĕлтерĕшĕсем çине, вĕсен çыхăнас мелĕ çине таянакан пĕрлĕх тата система.

***Чĕлхен морфемăпа морфологи шайĕ.*** XIV-XV ĕмĕрсенчи лингвистика чĕлхе тытăмне (е шайĕсене), çырса пама вĕренсе çитнĕ.

Шай тенине юлашки çулсенче лингвистикăра тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. Вăл пĕр-пĕрне хирĕçлекен пĕлтерĕшпе усă куракан сăмахсенчен пĕри. Тухăçлă тавлашусем хыççăн ку сăмах тинех тĕрĕс термин пулса тăчĕ. *Чĕлхе шайĕ* тесе унăн системин хăйĕнпе тӳр килекен пайне калаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, пĕр ятлă единицăсем: фонема, морфема, сăмах, сăмах майлашăвĕ, предложени пур пирки фонема шайĕ, морфема шайĕ, сăмах шайĕ, сăмах майлашăвĕн шайĕ, предложени шайĕ пур. Чĕлхе науки тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, морфема – сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи

пĕчĕк пайĕ. Морфема шайĕн тĕп единици пулнă май морфемăн хăйне евĕрлĕ тăватă паллă пур:

1. *Çине-çинех тĕл пулни.* Калаçăвăн конкретлă факчĕсене танлаштарсан кӳлепе тĕлĕшĕпе те, семантика тĕлĕшĕпе те пĕр пĕтĕмлĕхлĕ элементсене тупма пулать. Тĕслĕхрен, пĕр-пĕр çынна швед чĕлхинчи nordisk «çурçĕрти», grammatisk «грамматика» («грамматический»), hatisk «усал» сăмахсене кăтартсан вăл çăмăллăнах «пĕр-пĕр пахалăхлă» пĕлтерĕшпе çӳрекен -isk элемента уйăрма пултарĕ. Çавăн пекех вăл çав чĕлхери сăмахранах tonfisk «тунец», diskurs «калаçу» сăмахсенче кун пек -isk элемент çук тесе çирĕплетĕ.

Чăвашла пĕлекен кашни çыннах *хырлăх, куçлăх, пуçлăх* сăмахсенче *-лăх* аффикс пуррине асăрхать; анчах *шăналăк, аслăк, аçлăк* сăмахсенчи *-лăк* элемента асăрхамасан та пултарать.

Çапла ĕнтĕ, морфемăна уйăрассипе пĕрлех унăн кӳлепипе пĕлтерĕшне палăртасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тепĕр майлă каласан, морфема тĕрлĕ сăмахсенче тата сăмах кӳлеписенче çине-çинех тĕл пулмалла, çавăн чух ăна уйăрса илме çăмăлрах.

2. *Пĕлтерĕшлĕх.* Определени тăрăх, морфема пĕлтерĕшлĕ единица та шутланать. Сăмахра пурнăçлакан функцие кура морфемăсем тымар тата аффикс морфемăсене пайланаççĕ, юлашкисем хăйсен йĕркипе çĕнĕ сăмах тăвакан (дериваци) тата сăмаха улăштаракан (реляци) аффикссене пайланаççĕ. Тымар морфема кирек мĕнле сăмахра та пур, аффикс морфема тымар морфемăпа пĕрле çĕнĕ сăмах тума е сăмах формине йĕркелеме пултарать;

а) тымар морфемăсем лексика пĕлтерĕшне палăртаççĕ (пулăшу сăмахĕсене уйрăм ушкăна кĕртеççĕ, вĕсенче тымар морфемăсем грамматика пĕлтерĕшне тытса тăраççĕ);

ă) сăмах тăвакан морфемăсем çĕнĕ сăмах тăваслăх пĕлтерĕше палăртнисĕр пуçне лексика пĕлтерĕшне йĕркелес ĕçе те хутшăнаççĕ тата классификаци пĕлтерĕшне те палăртма пултараççĕ;

б) сăмаха улăштаракан морфемăсем сăмахăн грамматика пĕлтерĕшне палăртаççĕ, çавăнпа пĕрлех вĕсен сăмах тăвас пĕлтерĕш сĕмĕ те пур.

3. *Пайланмалăх.* Морфемăна пĕлтерĕшлĕ вак пайсене пайлама пулмасть, мĕншĕн тесен вăл хăй пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк единица.

4. *Абстрактлăх.* Морфема – чĕлхе единици. Пуплевре вăл хăйĕн уйрăм тĕсĕ – морф пек тухса тăрать. Хальхи акăлчан чĕлхинчи япала ячĕн нумайлă хисеп флексийĕн [iz] (bridges – «кĕперсем»), [z] (boys – «арçын ачасем»), [s] (books – «кĕнекесем») тĕсĕсем пулаççĕ. Функци, семантика тĕлĕшĕнчен çак морфсем пурте пĕр тан, анчах кашнин суйлавĕ юнашар тăракан сасăран килет: пĕрремĕшĕ – хĕсĕнчĕк аффрикат, шавлă хупă сасăсем хыççăн, юлашки – янăравсăр хупă сасăсем хыççăн пулать.

Чăваш чĕлхинче кун пек пулăм куçкĕретлĕ мар, анчах тимлесерех пăхсан *-сем* нумайлă хисеп аффиксĕн *-се* алломорфĕ пуррине палăртмалла: *ача-сем, ача-се-н.*

Морфологи тĕлĕшĕнчен морфемăсем конструктивлă тата интеграцилле функцисене пурнăçлаççĕ. Морфема сăмахăн грамматика формисене (падеж, несĕл, вăхăт, наклонени тата ыттисене те) тунă çĕре хутшăнать. Унпа пĕрлех морфема пĕр типлă формăсене кӳлепесен ушкăнĕсене пĕрлештерет, интеграцилет, çапла майпа грамматика категорийĕсене йĕркеленĕ çĕре хутшăнать.

Çапла вара, морфемика тата морфологи пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ, чĕлхе наукинче хăйсене тĕллĕн çӳреççĕ.

Литература


1. Супрун Л.Е. Общее языкознание. М.: Высш. шк., 1983.
2. Шанский Н.М., Тихонов А.Н. Современный русский язык. Ч. II. М.: Просвещение, 1981.
3. Сергеев В.И. Хальхи чăваш чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1992.

4. Сергеев В.И. Морфемика тата морфонологи. Шупашкар, 2001.

## 4§. Семантика шайĕ

Пĕлтерĕшĕпе сасă витĕмĕ, лексика тата грамматика категорийĕсене пĕрлештерме пултарни сăмах ансат симметриллĕ структура пулнине пĕлтерет. Çавна май сăмахăн тăватă аспекчĕ хире-хирĕç тăраççĕ:

1) фонематика (фонема составĕ);
2) морфематика (морфема составĕ);
3) лексематика (лексема составĕ);
4) лексикăпа семантика (сăмахăн лексикăпа семантика варианчĕсен, тĕрлĕ пĕлтерĕшсен шайĕ).

Семантика (французла semantique, грекла semantikos – «пĕлтерекенни», sema – «паллă») – сăмахсен, вĕсен грамматика формисен, фразеологизмсен, сăмах майлашăвĕсен, предложенисен, урăхла каласан, чĕлхен тĕрлĕ единицисен пĕлтерĕшĕсене тĕпчекен чĕлхе пĕлĕвĕн пĕр пайне *семасиологи* теççĕ. Ку унăн анлă пĕлтерĕшĕ.

Чĕлхен кашни единицин пĕлтерĕшне çав шайри ытти единицăсемпе танлаштарсан курма пулать. Çакă вĕсене пĕр ретре тишкерме хистет. Чĕлхе единицисене пĕр рете пухма пĕрпеклĕх уйăру паллисем (дифференциаци паллисем) те пулăшаççĕ. Тĕслĕхрен, юхан шыва палăртакан *река* «юхан шыв» тата *речка* «пĕчĕк юхан-шыв» сăмахсемпе палăртакан япаласем пысăкăшĕпе уйрăлса тăраççĕ. Ку вĕсен лексика пĕлтерĕшĕсене палăртать.

Тĕрлĕ сăмахсен семантикине тĕпченĕ чух вĕсен грамматикăпа лексика пĕлтерĕшĕсене уйăраççĕ. Грамматика пĕлтерĕшĕ сăмахсен пысăк ушкăнĕсемшĕн кăтартуллă пулсан, лексика пĕлтерĕшĕ индивидуаллă, çавăнпа ăна тĕпчеме çав тери йывăр.

***Лексикологи тата семасиологи.*** Сăмахсем мĕне те пулин палăртнине, пĕлтерĕшлине, пĕлтерĕшсем сăмахсенче палăрнине кирек кам та, чĕлхе пĕлĕвне вĕренмен çын та калама пултарать. Ку ансат шухăш наукăрипе пĕр килмесен те пултарать. Чăнах та, пĕлтерĕш чĕлхере

хайён выранне сӑмахсен хупӑрлавӗнче, предложенире, калаҫура тупать. Ҫавӑнпа та чӗлхе пӗлӗвӗн никӗсне пӗлес тесен сӑмахсен тытӑмне вӗренмелле, пӗлтерӗшне сӑнамалла.

Чӗлхе лексикине, чӗлхе наукин ун ҫинчен вӗрентекен пайне лексикологи теҫҫӗ, чӗлхери пӗлтерӗшсене семантика, чӗлхе пӗлӗвӗн ун ҫинчен вӗрентекен пайне семасиологи теҫҫӗ. Семасиологи (грекла semasia – «пӗлтерӗш», logos – «сӑмах, вӗрентӳ») – семантика аспекчӗ, чӗлхе пӗлӗвӗн чӗлхе единицисен пӗлтерӗшӗсене тӗпчекен пайӗ. Тӗпрен илсен, ҫак икӗ пай – лексикологи тата семасиологи – тачӑн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен чӗлхе единицисен, сӑмахсен пӗлтерӗш пурри сӑмах чӗлхен тӗп единици пулнине пӗлтерет. Ҫапах та кашни пайӑн уйрӑм енӗ те пур. Пӗр енчен, сӑмахӑн кӑна мар, сӑмах пайӗсен – сӑмах майлашӑвӗсемпе сӑмах ҫаврӑнӑшӗсен те пӗлтерӗшӗсем пур. Вӗсен пӗлтерӗшӗсене тӗпченӗ пирки семасиологи лексикологи чиккинчен тухать. Тепӗр енчен, лексикологире сӑмах йышне пӗлтерӗш енчен кӑна пӑхмаҫҫӗ. Вӑл пулса кайнине, хутшӑнури выранне те шута илеҫҫӗ.

Эпир лексикологипе семасиологин пӗрлӗхлӗ енне – чӗлхери сӑмахсен йышне пӗлтерӗшӗ енчен тӗпченине пӑхса тухӑпӑр.

***Семантика виҫкӗтеслӗхӗ.*** Сӑмах – лексикӑн тӗп единици. Чи ансат тӗслӗх – сӑмах пӗр пӗлтерӗшлӗ анчах пулни. Ку, паллах, сайра тӗл пулать, ҫапах та теори тӗлӗшӗнчен эпир тишкерекен сӑмахсем пурте пӗр пӗлтерӗшлӗ. Кун пек чух пирӗн умра ҫакӑн пек ӳкерчӗк тӑрать: пӗрремӗшӗнчен, сӑмаха тулаш енчен кӑтартакан сасӑсен речӗ – сӑмахӑн сасӑ (фонетика) витӗмӗ е фонетика сӑмахӗ тухса тӑрать, иккӗмӗшӗнчен, сӑмах палӑртакан япала е пулӑм сӑнланать, виҫҫӗмӗшӗнчен, сӑмах пирӗн ӑнра пӗлтерӗш ҫуратать. Виҫӗ элеменчӗ те пӗр-пӗринпе ҫыхӑннӑ, ҫак ҫыхӑнусен лингвистикӑра хӑйне евӗр ятсем пур: сӑмах япалана пӗлтерет, сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ ҫын ӑс-тӑнӗнче япалан паллисене ӳкерчӗклет. Ҫак пӗтӗм комплекс (виҫӗ элемент тата вӗсен хушшинчи ҫыхӑнусем) сӑмах йӗркелет.

Чĕлхеçĕсем лексикăна тишкернĕ чух чĕлхере йышăннă терминсемпе усă кураççĕ: предмет (япала) – денотат е референт; пĕлтерĕш – сигнификат; пĕлтерни (ят пани) – номинаци; фонетика сăмахĕпе япала хушшинчи çыхăну – референт е референци. Маларах асăннине схема туса ăнлантарма пулать.

***Сăмах пĕлтерĕшĕ.*** Сăмах пĕлтерĕшĕ тесе пирĕн ăс-тăнра сăнарланакан паллăпа паллă хушшинчи çыхăнăва калаççĕ. «Пĕлтерĕш» термин чĕлхе пĕлĕвĕнче нумай пĕлтерĕшлĕ. Унпа усă курнă чухне яланах сăмах мĕн çинчен пынине шута илмелле. Фонетика сăмахĕпе пирĕн ăс-тăнра япалана ӳкерчĕклени (пĕлтерни) хушшинчи çыхăну сигнификат пĕлтерĕшĕ пулать. Пĕр енчен сигнификат пĕлтерĕшĕпе фонетика сăмахĕн çыхăнăвне, тепĕр енчен япалана, е денотата, денотат пĕлтерĕшĕ теççĕ. Лексикологипе семасиологире тĕп вырăнта сигнификат пĕлтерĕшĕ тăрать. Ăна денотат пĕлтерĕшĕнчен уйăрса пăхман чух пĕр терминпа «пĕлтерĕш» тесе палăртаççĕ.

Сигнификат пĕлтерĕшĕ – сăмаха пула этем ăс-тăнĕнче пулса пыракан япалан паллисем ӳкерчĕкленни. Çапах та логикăпа психологи наукисене илес пулсан этем ăс-тăнĕнче чăнлăх (чăн пурри) ӳкерчĕкленнин туйăм та, шухăшлав та, ăнлав та пулма пултарать.

Сăмах пĕлтерĕшĕ этем ăс-тăнĕнче чăнлăх ӳкерчĕкленнин ытти тĕсĕсенчен – сисĕмрен, шухăшлавран, ăнлавран уйрăлса тăрать. Сăмах пĕлтерĕшĕ ăнлава çывăхрах тăрать. Вăл пурнăçра тĕл пулакан япаласен пĕтĕмĕшле тата уйрăм паллисене ӳкерчĕклет. Сăмахăн пĕлтерĕшĕ сăмах майлашăвĕпе предложенире те, предложенисен пĕрлĕхĕнче те уçăмланма пултарать. Тĕслĕхрен, *хĕртекен хĕвел* текен сăмах майлашăвĕ *хĕвел хĕртет* предложение тӳр килет пек, анчах сăнарах пăхсан кун пек калани тӳрре килменнине асăрхама пулать.

Хăш-пĕр чух пĕлтерĕшне ăнлав хуплашăнаççĕ. Çакна, тĕслĕхрен, *сверхпроводимость, интеграл, морфема* тата ытти терминсенче асăрхама пулать.

Чĕлхе пĕлĕвĕ сăмах пĕлтерĕшне тĕпчет, çапах та пĕлтерĕшпе ăнлав хушшинчи çыхăну кăларса тăракан ыйтуран пăрăнса иртме çук.

Çапла ĕнтĕ, сăмах пĕлтерĕшĕ (сигнификат) – çын ăс-тăнĕнче чăнлăха ӳкерчĕклекен чи çӳлти шай е картлашка. Ăнлав та çав шайра тăрать. Сăмах пĕлтерĕшĕ ăнлав патне хăйĕн пĕтĕм кӳлепипе туртăнать, анчах та унпа танлашаймасть.

**Сăмах вариантлăхĕ**. Халĕ семантикăн виç кĕтеслĕх схеми патне таврăнар. Унта эпир чи ансат тĕслĕх илсе кăтартнăччĕ: виç кĕтеслĕхĕн кашни тăрринче сăмахăн пĕрер тата улшăнман элеменчĕ – фонетика сăмахĕ, денотат, пĕлтерĕш (сигнификат) тăрать. Çапах та чăнлăхра кашни элеменчĕ улшăнма (вариантлă пулма) пултарать: пĕр сăмах икĕ е темиçе фонетика витĕмĕллĕ, икĕ е ытларах пĕлтерĕшлĕ пулать. Тата пĕлтерĕш икĕ е темиçе япалапа çыхăнма пултарать. Хăш чухне пур виçĕ элеменчĕн те варианчĕсем пулаççĕ.

Сăмахăн сасă витĕмĕн вариантне кăшт улăштарни, урăхлатни е сăмахăн пĕлтерĕшне урăхлатса палăртни синонимсен ретне йĕркелет. Кун пек чух сăмахăн сасă витĕмĕ улшăнать, денотатпа пĕлтерĕш улшăнмаççĕ. Сăмахăн чи ансат фонетика варианчĕсем пĕр сасă ылмашăвĕпе йĕркеленеççĕ: *ноль – нуль, шкаф – шкап, тоннель – туннель, коридор – колидор.* Кунта хăш-пĕр чух пĕлтерĕшсен пĕчĕк уйрăмлăхне курма пулать, анчах ăна сăмахпа палăртма йывăр. Пĕр вариант пĕр тĕрлĕ сăмах çаврăнăшĕсем, тепĕр варианчĕ теприсем патне туртăнать. Енчен те сăмахăн икĕ тĕрлĕ вариант пулсан, çак уйрăмлăх пĕлтерĕшсен сĕмĕсене кăна пырса тивет.

Синоним тени сăмахсем пĕлтерĕшĕпе çывăх тенине пĕлтерет. Синонимлăхра, пĕрремĕшĕнчен, сигнификат пĕлтерĕшĕ енчен кăна темиçе сăмах пĕрпеклинеççĕ; иккĕмĕшĕнчен, кун пек чух сăмахсен сасă пĕр евĕрлĕхне тата вĕсен пĕлтерĕшĕсене пăхаççĕ (приставкăсемпе суффикссен пĕрлĕхĕ). Вырăс чĕлхинчи синонимсен тĕп кӳленисем çакăн пек пулма пултараççĕ:

е пĕр тымар çумĕнче тĕрлĕ приставкăсемпе суффикссем пулаççĕ, е пĕр пек приставкăсемпе суффикссем тĕрлĕрен тымарсем çумне хушăнаççĕ.

Чĕлхе пĕлĕвне чи малтан сăмахăн «çывăх тата аякри пĕлтерĕшĕсем» термина А.А. Потебня кĕртнĕ. Сăмахăн аякри тата çывăх пĕлтерĕшĕ тесе икĕ тĕрлĕ пулăма калаççĕ. Пĕр пулăмне чĕлхе пĕлĕвĕнче тĕпченĕ пирки çывăх пĕлтерĕш, теприне, ăна ытти наукăсен предмечĕ пек сăнанă май, аякри пĕлтерĕш теççĕ: шыв – ĕçме юрăхлă тĕссĕр шĕвек; шыв – $H_2O$ – водородпа кислород пĕрлешнипе пулнă хими пĕрлешĕвĕ. Паллах, *шыв* тата $H_2O$ – синонимсем мар.

***Синонимие хирĕçле пулăм – омоними.*** Омонимлăх тесе сăмахсем пĕлтерĕшĕ енчен тĕрлĕ, сасăсем енчен пĕрешкел пулнине калаççĕ. Сăмахăн денотат вариацийĕсем метафора енне туртăнаççĕ. Ку сăмахăн сасă витĕмлĕхĕ тата пĕлтерĕшĕ (ăнлав, сигнификат) улшăнман, анчах сăмах чăнлăхри тепĕр япалана ăнлантарнă, çав сăмахпах урăх япалана та ят панă чухне пулать: *таса – тăрă, таса – тĕрĕс; хĕрхи – çерçи тăмани, хĕрхи – тăмсай.* Метафора сăмах грек чĕлхинчен куçарсан «куçару» тенине пĕлтерет. Кирек мĕнле ята та тепĕр ята куçарни çирĕпленсен сăмахăн унччен пĕлтерĕшĕпе пĕрле тепĕр çĕнĕ, куçăмлă пĕлтерĕш çуралать. Пирĕн умра вара урăх пĕлтерĕшлĕ сăмах тăрать. Çĕнĕ пĕлтерĕш (сигнификат) çĕнĕ паллăсем йышăнсан çĕнĕ ăнлав йĕркеленет.

**Нумай пĕлтерĕшлĕх, е полисеми.** Эпир чи ансат тĕслĕхрен – пĕр сăмах – пĕр пĕлтерĕш тенинчен тишкерме тытăнтăмăр, анчах та чĕлхе аталаннăçемĕн çĕнĕ шайлашусем те йĕркеленеççĕ: «пĕр сăмах – темиçе пĕлтерĕш». Ку сăмахăн нумай пĕлтерĕшлĕхĕ пулать. Урăхла ăна полисеми терминпа палăртаççĕ. Сăмахăн полисемине курас тесен словаре кăна пăхмалла. Унти кашни фонетика сăмахĕ хыççăн кăтартнă цифрăсем (1,2,3 т.ыт.те) пĕр сăмахăн тĕрлĕ пĕлтерĕшĕсем пуррине кăтартаççĕ: *упа* – чĕрчун; *упа – упамас* – мăран çын (вырăсла – увалень).

Пĕр сăмахăн пĕлтерĕшĕсем – кăткăс та тĕрлĕ енлĕ пулăм.

Словарь статйинче пĕрремĕш вырăнта тĕп пĕлтерĕше кăтартаççĕ. Ку мел тĕп тата кĕçĕн пĕлтерĕшсене уйăрма хистет. Тĕп пĕлтерĕш – ирĕклĕ пĕлтерĕш.

Тĕп, е ирĕклĕ, пĕлтерĕш тесе сăмахсен хупăрлавне пăхăнмасăрах пуплевре кирек мĕнле сăмахпа çыхăннă чух та улшăнман пĕлтерĕше калаççĕ. Урăхла каласан, ку пĕлтерĕш тĕрлĕ конкретлă каларăмри позицирен килмест. Кĕçĕн пĕлтерĕш – позицие пăхăнакан пĕлтерĕш. Кирек мĕнле сăмахпа мар, палăртнă сăмахпа çыхăнсан çеç ун пĕлтерĕшне пĕлме пулать.

Тĕслĕх вырăнне вырăс чĕлхинчи *дядя* сăмаха илсе пăхатпăр. Хальхи вырăс чĕлхинче (С.И. Ожегов словарĕ тăрăх) ку сăмахăн виçĕ пĕлтерĕш пурри паллă: 1) арçынна хисеплесе чĕнни (калаçура); 2) арçын (ача-пăча чĕлхинче тата калаçура); 3) атте е анне пиччĕшĕ; инке (аппа, кинемей) упăшки. Çаксенчен тĕп пĕлтерĕшĕ виççĕмĕшĕ пулать, мĕншĕн тесен вăл кирек мĕнле сăмах майлашăвĕнче те çак пĕлтерĕше улăштарамасть. Малалла вăл пĕрремĕш пĕлтерĕш вырăнне йышăнать. Чăваш чĕлхинче *тете* икĕ пĕлтерĕшлĕ: 1) Аслă пичче; 2) Хăвăнтан аслă арçынна хисеплесе чĕнни. Чăваш чĕлхинче пĕрремĕш пĕлтерĕшĕ тĕп пĕлтерĕш шутланать. Çав пĕлтерĕшпех чăваш чĕлхинче *пичче* сăмах çӳрет. *Пичче* – 1) старший брат отца, дядя по отцу; 2) старший брат; 3) так обращаются к мужчинам старше себя (Ашмарин словарĕ, IX, 250-251с). Тĕп пĕлтерĕш – иккĕмĕшĕ (*пичче* – *тете* тенине пĕлтерет).

Словарь статйинче пĕрремĕш вырăна тĕп пĕлтерĕш тухать терĕмĕр. Ытти пĕлтерĕшсем унпа çăмăллăнах çыхăнаççĕ. Кун пек пĕлтерĕшсен çыхăнăвĕсем яланах чĕрĕ пек курăнаççĕ, вĕсемпе пĕр вăхăтра çеç усă кураççĕ. Тепĕр тапхăрта вĕсем улшăнма та пултараççĕ. Ку çыхăнусем яланах актуаллă. Çавăнпа та вĕсене пĕлтерĕшсен актуаллă çыхăнăвĕсем теççĕ. Çак принципа пăхăнса йĕркеленĕ словарьсем чĕлхене вĕренес тĕлĕшрен

усăллă. Анчах та вĕсем кивелеççĕ, çавăнпа словарьсене улăштарсах тăмалла.

Пĕрремĕш вырăна, кирлĕлĕхне кура, истори тĕлĕшĕнчен чи малтан пулса кайнă пĕлтерĕше кăлараççĕ. Ун хыççăн историре йĕркипе çуралса пынă пĕлтерĕшсене çыраççĕ. Кун йышши словарьсем чĕлхен хальхи тăрăмне çухатмаççĕ, анчах çĕнĕ пĕлтерĕшсем хушса çĕнĕ кăларăмлă словарьсем йĕркелеççĕ. Вырăс чĕлхинче кун пек словарь çук, французсен çакăн йышши словарь пур (Э.Лиммре словарĕ). Ун хушма кăларăмĕсем 1863-1874-мĕш çулсенчен пуçласа паян кунччене тухса тăраççĕ.

Чылай сăмахшăн тĕп пĕлтерĕшĕн виçĕ характеристики те пĕр килеççĕ. Урăхла каласан, тĕп пĕлтерĕш пĕр вăхăтра ирĕклĕ те (ытти сăмахсене пăхăнмасть), ытти пĕлтерĕшсене «кăларакан» центр та, истори енчен малтанхи те пулать. Танлаштарăр: *алă, пуç, ил, йăт, апат* т.ыт.те. Ку сăмахсем вырăс чĕлхинче те нумай пĕлтерĕшлĕ.

***Сăмахăн семантика аталанăвĕ.*** Сăмахăн семантика аталанăвĕ икĕ енлĕ. Пĕр енчен, денотатсем улшăнаççĕ – тĕпре метафорăпа çыхăннă процесс, тепĕр енчен, сигнификатсен содержанийĕ пĕрмай тарăнланать. Ку сăмах пĕлтерĕшĕсен системи наука ăнлавĕсен системипе тӳр килсе пынипе çыхăннă.

Метафора лексика семантикин аталанăвĕн тĕп шăнăрĕсенчен пĕри. Поэтсемпе писательсем метафора куçарăвĕсене тĕрлĕ енлĕ пурнăçлаççĕ – çутçанталăкран çыннăн шалти тĕнчи çине; çын пĕлĕвĕнчен ун ăс-хакăл енĕсем çине; чунран кĕлеткс çине; çутçанталăкăн пĕр пулăмĕнчен тепри çине куçараççĕ. Чĕлхери метафора куçарăвĕсен тĕп енĕ – çынран тата унпа çывăх сăнлăхран пĕтĕм тĕнче çине куçарни. Чĕлхе тата чĕлхери пулăмсене, мелсене пула çын тулаш тĕнчене ăнланать.

Тепĕр процесс – пĕлтерĕшсен, сигнификатсен аталанăвĕ. Чĕлхе ăнлавĕсен системи пĕрмаях ытти наука ăнлавĕсен системи енне туртăнать, çав чикке çитмесĕрех тата çав системăпа пĕр килмесен те ăна хăй тытăмне илме тăрăшать. Тĕслĕхрен, *цветок* вырăс сăмахĕн çывăх

пĕлтерĕшĕ çакă: «çеçкесемпе ĕрчекен ӳсен-тăран (курăк)» (Вырăс чĕлхин ăнлантару словарĕ, Д.Н. Ушаков редакциленĕ). Ботаникăра ку сăмаха çак пĕлтерĕшпех *чечек ӳсен-тăранĕ* сăмах майлашăвĕпе ылмаштарнă. Пĕтĕмĕшле чĕлхери сăмаха наука чĕлхинчи сăмах майлашăвĕпе ылмаштарни – ăнсăрт пулăм мар. Нумай чухне ăнлав аталанăвĕн процесĕнче тĕп сăмахăн пĕлтерĕшне уçăмлатма тивет. Ку вара сăмах тĕпĕсене çыхăнтарнипе (пĕрлештернипе) е палăртăм хушнипе пулса пырать. Илсе кăтартнă сăмах майлашăвĕ *цветковый* (паллă ячĕ) тенинчен пулса кайнă. *Цветковый* сăмах нумайлă хисеприи *цветок – цветки* сăмахсенчен пулнă. Литература чĕлхинче унпа нумайлă хисепре усă кураман пирки *цветы* сăмах пулнă. Эппин *цветковые растения* текен хальхи ботаника терминĕ тахçан *цветок* сăмахран пулса кайнă. Сăмахăн пĕлтерĕшне палăртакан термин кулленхи пурнăçра тĕл пулакан сăмах çине таянать. *Цветок* сăмах пĕлтерĕшĕн тĕп паллисем «цветковые растения» – наибольшие по размеру представители не только растительного. но и всего органического мира. Они могут достигать 150 м высоты (эвкалипты из семейства миртовых), а некоторые лианы (ротанговые пальмы) имеют стебли длиной 200 и более метров».

Чечеклĕ ӳсен-тăрансен тĕп паллисене çырса пани вĕсен наука ăнлавне йĕркелет, словарьте пысăк форматăн тăватă страницине йышăнать. Чечеклĕ ӳсен-тăрансем йывăçсем те пулма пултараççĕ тесе палăртнă. Ботаникăра *чечек* сăмах чечеклĕ ӳсен-тăрансен пĕр пайне çеç пĕлтерет. Апла пулсан, чечек, чечеклĕ ӳсен-тăран, йывăç пĕтĕмĕшле тата ботаникăн хальхи чĕлхинче, кулленхи калаçура семантика аталанăвĕн икĕ точкине пĕлтерет: кулленхи калаçури çывăх пĕлтерĕше тата ботаника чĕлхинче – аякри пĕлтерĕше – термина. Чечекпе йывăç çывăх терминсем пулса тăраççĕ. Кулленхи калаçури сăмахсен пĕлтерĕшĕсем ботаника терминĕсемпе пĕр килме пултараççĕ.

Ӳсен-тăран (растение) ăнлава истори тĕлĕшĕнчен пăхăпăр. Латин чĕлхинче «ӳсен-тăран» сăмах та, унăн

ăнлавĕ те пулман. Çав вăхăтри ботаникăра *ačbor* «йывăç» тата *harba* «курăк» пĕтĕмĕшле ятсем кăна çӳренĕ.

Ӳсен-тăранăн пĕтĕмĕшле несĕл терминĕ *planta* вăтам ĕмĕрсенче çеç, XIII ĕмĕрти Альберт Великий схоласт тĕпчевçĕ кĕнекисенче, тĕл пулать.

Хăш-пĕр терминсем тĕс (вид) пĕлтерĕшĕсенчен кăшт çӳлĕрех тăраççĕ. Вĕсем çаксем: 1) былие, зелие; 2) летораслия; 3) рассада, расада, росада; 4) ращение, произрастание; 5) растущие вещи, прозябающие вещи; 6) латинизмы: вегетабили, планты; 7) растение.

Лексикăпа семантика системин тĕп тишкерӳ объекчĕ – сăмахăн лексикăпа семантика варианчĕсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсем. Лексикăпа семантика системинчи мĕн пур единицăсемпе классем (сăмахăн лексикăпа семантика варианчĕсем, сăмах пĕрлешĕвĕсем, лексикăпа семантика парадигми, сăмахăн макросистемисем) пĕрпĕринчен уйрăлса тăнă пирки сăмах тĕп конститутивлă единица пулса тăрать, ытти единицăсем пурте унпа çыхăнаççĕ.

***Семантика контексчĕ.*** Хальхи наука шкулĕсем лингвистика тĕпчевĕн задачисене, предметне, меслечĕсене тĕпе хурса сăмаха контекстра тĕпчеççĕ.

Семантика контексчĕ системăллă. Вăл тĕрлĕ компонентсенчен тăрать. Системăллă семантика контексчĕ тесе икĕ членлă чи пĕчĕк сăмах пĕрлешĕвне калаççĕ: çак синтагмăн пĕр членĕ – семантика енчен чăнлăхри сăмах, тепĕр членĕ – семантика тĕллевне пурнăçлакан тĕп сăмах. Лексикăри ирĕклĕ пĕрлешӳ вăл – синтаксисри пăхăнуллă çыхăнура тăракан икĕ членлă синтагма.

Япалалăха, ĕçе, палла, паллăн паллине пĕлтерекен сăмахсен пысăк семантика класĕсем тĕрлĕ пуплев пайĕнчи лексемăсен ушкăнĕсемпе пĕр килеççĕ: 1) сăмахсен конверсири семантика çыхăнăвĕсем; 2) сăмах пулăвĕнчи семантика çыхăнăвĕсем; 3) сăмахсем лексикализациленнĕ чухнехи семантика çыхăнăвĕсем.

Чĕлхен семантика категорийĕсем:

1) конкретлă япаласен тата абстрактлă ăнлавсен ячĕсем;

2) чёрё тата чёрё мар япаласен ячёсем;

3) шута тивёҫёкен тата тивёҫмен япаласен ячёсем;

4) ҫын тата ытти япаласен ячёсем.

## Пётёмлетÿ

Лексикăпа семантика парадигми: 1) синонимсем; 2) антонимсем; 3) омонимсем; 4) лексикăпа семантика ушкăнёсем; ăнлав уйланкисем т. ыт. те. Семантика тёлёшёнчен пуплев пайёсем чи пысăк ушкăнсене йёркелеҫҫё.

I. Лексикăпа семантика системи чёлхен ытти ҫумсистемисенчен ҫак паллăсемпе уйрăлса тăрать:

1) пёлтерёш тёшшин тёрлё енёпе;

2) шухăш единицин тёрлё енёпе;

3) сăмахăн икё тёрлё пахалăхёпе: а) лингвистика пахалăхё (вырăн, пахалăх); ă) экстралингвистика пахалăхёпе (япалалăх, ăнлав танлаштарăвё);

4) Шухăш ҫыхăнăвёсен тёрлё енёпе: сăмахри, сăмахсен хушшинчи парадигматика тата синтагматика ҫыхăнăвёпе.

II. Лексикăпа семантика системи фонологи системинчи единицăсен тата вёсен ҫыхăнăвёсен синтезё пулать, урăхла ăна синтез е интеграци шайё теҫҫё.

III. Лексикăпа семантика системи, фонологипе морфологи системипе танлаштарсан, уҫă характерлă, мёншён тесен ун ăшёнче чёлхен тёрлё ҫумсистемисем пёр-пёринпе ҫыхăнаҫҫё. Лексикăпа грамматика пёр-пёринпе ҫыхăнни чёлхен лексика структурине йёркелеме пулăшать.

Литература

1. Апресян Ю.Д. Экспериментальное наследование семантики русского глагола. М.: Наука, 1967.

2. Виноградов В.В. Основные типы лексических значений слова // Вопр. языкозн. 1953. № 5.

3. Ломтев Т.П. Общее и русское языкознание. М.: Наука, 1976.

4. Общее языкознание. Внутренняя структура языка. М.: Наука, 1972.

5. Русский язык: Энциклопедия. М.: Сов. энцикл., 1997.

6. Уфимцева А.А. Слово в лексико-семантической системе языка. М.: Наука, 1968.

7. Шмелев Д.Н. Проблемы семантического анализа лексики. М.: Наука, 1973.

Ку пая çырнă чух Степанов Ю.С. Основы общего языкознания ( М.: Просвещение, 1975) кĕнекери шухăшсене тĕпе хунă.

## 5§. Лексикăпа семантика ушкăнĕсем (ЛСУ)

Лексикăпа семантика ушкăнĕсем (е урăхла вĕсене лексикăпа тематика ушкăнĕсем те теççĕ) пĕр пуплев пайне кĕрекен сăмахсене çыхăнтарса тăраççĕ. Ку тĕлĕшрен вĕсем тематика, терминологи тата синоним сăмахсен ушкăнĕсене çывăх. Тĕслĕхшĕн. çакăн пек сăмахсене танлаштарса пăхар: *сĕтел, пукан, табуретка, сак, тенкел, кресло, кравать, койка* т.ыт.те. Вĕсем пурте пӳлĕмри сĕтел-пукана пĕлтереççĕ, çак ушкăнри сăмахсен шутне кĕреççĕ. *Сакпа тенкел, кроватьпе койка* сăмахсем синонимсем пулаççĕ.

Пӳлĕмри сĕтел-пукан ячĕсем çынсем пурăнакан вырăна кура тĕрлĕрен пулаççĕ (хулари, ялти, дачăри т.ыт.те). Ăна пăхмасăрах асăннă ятсем сĕтел-пукан ячĕсен лексикăпа семантика ушкăнне йĕркелеççĕ. Асăннă лексикăпа семантика ушкăнне япала ячĕсем çеç кĕреççĕ. Тематика ушкăнне, пурте йышăннă сăмахсемсĕр пусне, каласа (е çырса) панă чух усă куракан сăмахсем те, вĕсен шутне ытти пуплев пайĕсенчи сăмахсем те кĕреççĕ. Акă, тĕслĕхшĕн, тĕрлĕрен сăнласа кăтартнă икĕ пӳлĕме илер:

*Вошедши в комнату, я тотчас узнал картинки, изображающие историю блудного сына; стол и кровать стояли на прежних местах; на окнах уже не было цветов, и все кругом показывало ветхость и небрежение (Пушкин).*

*Чичиков еще раз окинул комнату, и все, что в ней было, – все было прочно, неуклюже в высочай-*

*шей степени и имело какое-то странное сходство с хозяином дома: в углу гостиной стояло пузатое ореховое бюро на пренелепых четырех ногах, совершенный медведь. Стол, кресла, стулья, все было самого тяжелого и беспокойного свойства, словом, каждый предмет, каждый стул, казалось, говорил, и я тоже Собакевич! (Гоголь).*

Тĕслĕхсенчен акă мĕн курăнать: пӳлĕмри сĕтел-пукана ят парасси пӳлĕмрен е унти сĕтел-пукансенчен çеç мар, пӳлĕме сăнаса кăтартнинчен те килет. Çавăнпа та сĕтел-пукан ячĕсемсĕр пуçне унти ӳкерчĕксене те кăтартса хăварнă, «пузатое» бюро, на «пренелепых» ногах – çаксем пурте – ку е вăл калав сыпăкĕнчи тематика ушкăнне кĕрекен сăмахсем. Калаçура тематика ушкăнĕнчи сăмахсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Терминологи ушкăнне кĕрекен сăмахсем ку е вăл наукăри пĕлӳпе çыхăннă пулсан, тематика ушкăнĕн тĕп уйрăмлăхĕ – сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕпе усă курни.

Лексикăпа семантика ушкăнĕсем пуплев пайĕсемпе çыхăннă. Кашни пуплев пайĕн хăйĕн лексикăпа семантика ушкăнне кĕрекен сăмахсем пур. Япала ячĕсен, тĕслĕхшĕн, хурăнташлăх терминĕсем *(атте, анне, пичче, аппа, йăмăк, шăллăм, хуняма, асанне* т.ыт.те), паллă ячĕсен – тĕсе палăртакан паллă ячĕсем (*сенкер, кăвак, шурă, хĕрлĕ* т.ыт.те), ĕç-хĕлсен – куçăма пĕлтерекен сăмахсем (*ут, кил, кай, пыр, çӳре, вĕç* т.ыт.те) е пуплеве (калаçăва) пĕлтерекен сăмахсем *(кала, пăшăлтат, çухăр, ыйт, хуравла, йăлăн, тархасла* т.ыт.те). Лексикăпа семантика ушкăнĕсем сăмахăн грамматика паллисемпе çыхăннă.

***Лексикăпа семантика шайĕ.*** Чĕлхен лексикăпа семантика шайĕ чĕлхе пĕлĕвĕн тачă çыхăннă икĕ пайĕнчен тăрать – лексикологирен (грек. lexikos – «сăмах», logos – «вĕренӳ») тата семасеологирен. Çак термин грек сăмахĕсенчен – semasia «пĕлтерĕш, ăнлав» тата logos “вĕрентӳ” пулса кайнă. Материалсене кура уйрăм е пĕр-пĕр чĕлхен (тĕслĕхрен, вырăс, акăлчан, нимĕç т.ыт.те) тата пĕтĕмĕшле лексикологи пуррине палăртаççĕ. Пĕтĕмĕшле лексикологи пур чĕлхери ыйтусене

те хускатать, тĕрлĕ чĕлхе материалĕсене тĕпчет. Кунсăр пуçне танлаштаруллă тата шайлаштаруллă лексикологисем пур. Пĕрремĕшĕ хурăнташ чĕлхесенчи уйрăмлăхсемпе пĕрпеклĕхсене тишкерет пулсан, тепри тăван мар чĕлхесенчи уйрăмлăхсемпе шайлашусене те тĕпчет.

Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕпе çыхăннă ыйтусем – семасеологин тĕп ыйтăвĕсем. Лексикологипе семантика пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, мĕншĕн тесен чĕлхере пĕлтерĕшсĕр сăмах çук.

Лексикологи чĕлхен пĕтĕм сăмах йышне тишкерет. Вăл лексика тытăмĕнчи истори улшăнăвĕсене, тĕрлĕ лексика категорийĕсене тата уйрăм принципсене (чĕлхери хăйĕнче пулса кайнă сăмахсене, ют чĕлхерен йышăннисене, кивелнисене (архаизмсене), çĕннисене (неологизмсене) литература чĕлхинчи сăмахсене, жаргонизмсене, вак калаçусенчи, диалектсенчи сăмахсене, терминсене, профессипе çыхăннă сăмахсене тĕпчет.

Семасиологи тĕпчевĕн объекчĕ чĕлхери пĕлтерĕш мар, вăл – лексика пĕлтерĕшĕ текен шухăш чылай вăхăт хуçаланнă. Семасиологи чĕлхе лексикине вăл мĕне пĕлтернине е ăнлантарнине пăхса тĕпчет, тенĕ. Пĕтĕмĕшле лексикологи ыйтăвĕсене тĕпченĕ май семасиологи лексикологин пĕр пайĕ шутланать, ăна пăхăнса тăрать тесе ĕнентерме пăхнă.

Семасиологи, паллах, лексика единицисен пĕлтерĕшлĕ енне тĕпчет. Вăл лексика единицисен пĕлтерĕшĕсен тĕнчине, лексика пĕлтерĕшĕсен ушкăнĕсене, сăмахсен пĕлтерĕш аталанăвĕн саккунĕсене, сăмахсен пĕлтерĕш улшăнăвĕн ушкăнĕсене пăхса тухать.

***Лексикăпа семантика системи ăнлав.*** «Лексикăпа семантика» тенинче системăлăх пурри палăрать: пĕр енчен, чĕлхен семантика шайĕнче лексика пĕлтерĕшĕ грамматика пĕлтерĕшĕнчен уйрăлса тăрать, тепĕр енчен, çак система пулăшнипе сăмахăн пĕлтерĕшĕ малалла, словарĕн элеменчĕ пек пайланса каять.

Лексикăпа семантика тени – чĕлхен икĕ сферинчи сăмахсен уйрăм пĕлтерĕшĕсен кăткăс çыхăну рузультачĕ, синтезĕ тесе калама пулать. Çавăнпа та лексикăпа семантика категорийĕ икĕ типлă пулма пултарать.

Пĕрремĕшĕ нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен лексикăпа семантика ушкăнĕ пек палăрать. Вăл чĕлхере семантика варианчĕсене пĕр çĕре пуçтарать, сăмахсем пĕр пек илтĕнеççĕ, анчах кашни семантика варианчĕ уйрăм пĕлтерĕшлĕ. А.И. Смирницкий вĕсене лексикăпа семантика варианчĕсем (ЛСВ) тет. Тепĕр майлă каласан, сăмахпа усă курнă чухне эпир кашни хутĕнчех сăмахăн актуаллă (узус) пĕлтерĕшĕпе тĕл пулатпăр. Герман Пауль сăмахсен содержанине тата уйрăм актсенче усă курнă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене терминологи тĕлĕшĕнчен уйăрнă: пĕрремĕшне – узуаллă (ялан усă куракан), иккĕмĕшне – окказионаллă (ăнсăрт) пĕлтерĕшлĕ тенĕ.

Палăртнă, каласа (е çырса) панă уйрăм ушкăнри сăмахсем, микроструктура, сăмахсен парадигми тата вĕсене классификацилемелли палăрăмсем, сăмахсен шалти пĕлтерĕшне уйрăм парадигмăсенче тата ытти ушкăнĕсенче (ретсенче, классенче) çыхăннине палăртни – лексикăпа семантика системин тĕпчемелли ыйтăвĕсем шутне кĕреççĕ, тĕп задачăсем пулса тăраççĕ.

***Лексикăпа семантика системине тĕпчемелли задачăсем.*** Чĕлхен семантика системине тĕпчени çакăн пек задачăсене татса пама май кӳрет:

1. Сăмах йышне пĕр-пĕринпе пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен çыхăннă сăмахсен класĕсем çине пайлани (Ш.Баллин пуплев факчĕсене идентификацилени тата ушкăнлани; Й.Трир семантика уйлăнкисене чикĕлени, Л.М. Васильев семантика ушкăнĕсене уйăрни, ытти авторсем лексикăпа семантика ушкăнĕсене уйăрни) чĕлхери сăмах йышĕнче семантика тĕлĕшĕнчен пĕр пек сăмах ушкăнĕсене тупса палăртма май парать.

2. Лексикăпа семантикăн уйрăм ушкăнĕсен (сăмахсен класĕ) шалти анализĕ, вĕсен йышне палăртни, семантика уйрăмлăхĕсемпе панă ушкăна кĕрекен сăмахсен пĕлтерĕшĕсем пĕр-пĕрне пăхăнса тăни, ушкăнри членсен нумай пĕлтерĕшлĕхĕ аталанни, ушкăн çĕнĕ элементсемпе пуянланни тата ытти лексика элеменчĕсем ун составĕнчен тухса ӳкни.

3. Уйрăм сăмахăн пĕлтерĕш тытăмне е лексикăпа семантика ушкăнĕнчи сăмах йышне тĕпчени, сăмах

пĕлтерĕшне объективлă критерипе уйăрни, çак пĕлтерĕшсене шайлаштарни (тĕп, иккĕмĕшле, тӳрĕ, куçăмлă, ирĕклĕ, ирĕклĕ мар т.ыт.те).

4. Сăмах пĕлтерĕшĕн компонетлă анализĕ, уйрăм сăмаха семантика тĕлĕшĕнчен уйăрни, семемăсене (е семăсене) тупса палăртни.

**Семантика ушкăнĕсем ăнлав.** Кашни сăмах чĕлхере куçа курăнман семантика çыхăнăвĕпе тата ассоциацийĕпе çыхăннă. Çавăнпа та чĕлхери пур сăмахсем те тĕрлĕрен пайсене пĕрлешсе пысăк тата пĕчĕк лексика ушкăнĕсене йĕркелеççĕ. Соссюр «обучать» (француз enseignement) сăмах урлă сăмахсем пĕр-пĕрипе нумай енлĕн çыхăннине кăтартнă.




Ăс-тăнра тĕвĕленнĕ ушкăнсем сăмахсем çывăхланнипе, мĕн те пулин пĕрпекленнипе çеç çырлахмаççĕ. Ăс кашни ĕçĕн тыткаларăшне пĕрлештерсе

тăракан характера ас туса юлать, çавна май мĕн чухлĕ ытларах хутшăну, çавăн чухлĕ ытларах пĕрлешÿллĕ йĕрке пулать. Çапла вара, *обучать* «вĕрент», *обучение* «вĕрентÿ», *обучаю* «вĕрентетĕп», *обучаем* «вĕрентетпĕр» т.ыт. сăмахсен пĕр тĕп элемент пур – вăл *обучать* «вĕрент» сăмах тĕпĕ. Анчах та *обучать* «вĕрент» сăмахра тепĕр элемент – суффикс пур: (танл., *обучать, вооружать, писать* т.ыт.); пĕрлешÿ çавăн пекех пĕр пĕлтерĕш пĕрешкеллĕхĕ çинче таянма пултарать (*обучать, наставлять, воспитывать, просвещать* т.ыт.те), е акустика тĕлĕшĕнчен кăна пĕр пек пулать; (тĕсл.: *обучать, печать;* танл. чăв.: *çыртар, выртар*). Çапла вара пĕлтерĕшпе форма пĕрле çеç çÿреме пултараççĕ.

Вĕрентÿ процесĕпе çыхăннă тематика ушкăнне çакăн пек сăмахсене те кĕртме пулать. Тĕсл.: *урок, заняти, шкул, лицей, Вуз (аслă пĕлÿ паракан учреждени), вĕрентÿ, гимнази, вĕрен. лекци, семинар, пĕлÿ т.ыт.те.*

Лексикăна тематика ушкăнĕсене пайлани тата словарь тытăмне идеографи ушкăнĕсемпе классификацилени пĕр вăхăтрах пулса иртеççĕ.

Сăмахсенчи шухăш çыхăнăвĕ чĕлхе системинче нумай енлĕ пулнине тĕрлĕ шая çити тĕпчеилпе лингвистика литературине кĕрсе юлнă çакăн пек тĕп паллăсемпе, сăмахсен ушкăнĕсемпе хаклама пулать: 1) ăнлав уйланки (понятийное поле), е семантика уйĕ; 2) предмет е тематика ушкăнĕсем, кунта пĕрпеклĕхсем пуррине кура е функцисен пĕрлĕхне кура сăмахсене пĕр ушкăна пĕрлештереççĕ, сăмахсемпе япаласене тата процесс паллисене (кун пек ушкăнсене тĕпчесси тивĕçлĕ инвентаризаци йĕркипе чикĕленет: кулленхи пурнăçра усă куракан япаласем, тум-тир, çурт-йĕр, ÿт-пÿ пайĕсем т.ыт.) кăтартаççĕ; 3) лексикăпа семантика ушкăнĕсем тата сăмахсен разрячĕсем (кун пек чух синоним рăнне микросистема е микроструктура, семантика парадигми т.ыт. терминсемпе усă кураççĕ).

***Тематика ушкăнĕсемпе лексикăпа семантика ушкăнĕсем хушшинчи уйрăмлăхсем.*** Ф.П. Филин лексикăпа семантика ушкăнĕсенчи сăмахсене пурнăçри уйрăм ушкăнсенчен, тĕслĕхрен, кĕлетке пайĕсен ячĕсенчен тата

ыттисенчен те уйăрмалла тесе шутлать. «Сăмахсен кун пек пĕрлешĕвне, лексикăпа семантика ҫыхăнăвне кура мар, япалине тата пулăмне кура классификациленине, словарьсен тематика ушкăнĕсем теме пулать. Енчен те тематика ушкăнĕнчи сăмахсенчен пĕри вăхăт иртнĕҫем тепĕр сăмахпа улшăнать пулсан, ҫак ушкăнри сăмахсем стилистика тĕлĕшĕнчен кун пек улшăнма пултараймаҫҫĕ. Ку вăл ҫак вăхăтри аталану шайĕнчи сăмахсен ушкăнĕсем хушшинче семантика ҫыхăнăвĕсем ҫукпа пĕрреххине пĕлтерет. Тĕслĕхрен, *хребет* (ҫурăм шăмми) сăмах *спина* (ҫурăм) сăмахпа улшăнни *пуҫ, чĕркуҫҫи, тута* сăмахсенче нимĕн те улăштармасть». Тематика ушкăнĕсемпе лексикăпа семантика ушкăнĕсем хушшинчи тĕп уйрăмлăх – лексикăпа семантика ушкăнĕнчи пайсем пĕр-пĕринпе чĕлхе системинче хирĕҫле пĕлтерĕшпе ҫыхăннинче. Пĕр ҫын ҫинченех *хĕрача* тата *карчăк* теме пулмасть, урăхла каласан, ҫак сăмахсен пĕлтерĕшĕсене «пĕр-пĕр пĕлтерĕшне кăларса пăрахса улăштарма пулмасть». Тематика ушкăнĕнчи сăмахсем вара пĕр-пĕрне хирĕҫлемеҫҫĕ. Ҫапла вара, тематика ушкăнĕнчи сăмахсен тĕрлĕ членĕсем пĕр ҫыннах тĕрлĕрен палăртаҫҫĕ: *арҫын, летчик, Мускав ҫынни, хитре арҫын, упăшка* т.ыт.те.

Тематика ушкăнĕсемпе лексикăпа семантика ушкăнĕсем хушшинчи уйрăмлăх экстралингвистика (чĕлхе тулашĕнчи) факторĕсемпе те ҫыхăннă.

Тематика ушкăнĕсем вĕсем – мĕнле те пулин чĕлхере пулни е пулманни, вĕсен составĕ вăл е ку халăхăн пĕлӳ шайĕнчен килни, чăнлăхри пулăмсене классификациелеме пĕлни тата вĕсене словарьсенче паллă туса хăварни.

Лексикăпа семантика ушкăнĕсем вара чĕлхен спецификине истори тĕлĕшĕнчен еплерех аталаннине, компонентсенчи семантика ҫыхăнăвĕ тачă пулнине кăтартса параҫҫĕ.

Ҫапла вара, пĕр пуплев пайĕнчи сăмахсен пĕлтерĕшĕнче пĕр пĕтĕмĕшле семантика палли пуррине шута илсе, ҫак сăмахсен пĕрлешĕвне лексикăпа семантика ушкăнĕсем теме пулать.

Лексикăна система пек тĕпчени лингвистикăна аталанма пулăшать. Чĕлхен системлăхĕ палăрнине конкретлă уçса памалли çул – тĕрлĕ лексикăпа семантика ушкăнĕсене уйăрни тата шухăш структурине палăртни шутланать. Куна çак ыйтупа çыхăннă нумай тĕпчев кăтартса парать. Çав ĕçсенче ку ыйтăва теори тĕлĕшĕнчен кăна мар, вырăс тата ытти чĕлхе материалĕсем тăрăх уйрăм ушкăнсене практика тĕлĕшĕнчен те анализ туса çырса кăтартнă.

Маларах калани çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума май парать:

Кашни пуплев пайĕн хăйĕн тематика ушкăнне кĕрекен сăмахсем пур. Япала ячĕсен, тĕслĕхрен, хурăнташлăх терминĕсем (*атте, анне, пичче, аппа, йăмăк, шăллăм, хуняма, асанне* т.ыт.те), паллă ячĕсен – тĕсе палăртакан паллă ячĕсем (*сенкер, кăвак, шурă, хĕрлĕ* т.ыт.), ĕç-хĕлсен – куçăма пĕлтерекен сăмахсем (*ут, кил, кай, пыр, çӳре, иш* т.ыт.те) е пуплеве (калаçăва) пĕлтерекен сăмахсем (*кала, пăшăлтат, çухăр, ыйт, хуравла, йăлăн, тархасла* т.ыт.те). Лексикăпа семантика ушкăнĕсем сăмахăн грамматика паллисемпе çыхăннă.

## Литература


1. История советского языкознания: Хрестоматия. М.: Высш. шк., 1981.
2. Кодухов В.И. Введение в языкознание. М., 1987.
3. Лингвистичский энциклопедический словарь. М.: Сов. энцикл., 1990.
4. Общее языкознание: Внутренняя структура языка. М.: Наука, 1972.
5. Супрун А.Е. Лекции по языковедению. Минск: Из-во БГУ, 1978.
6. Шаумян С.К. Структурная лингвистика. М.: Наука, 1965. Ку пайри шухăшсен çаврăмне çак авторсен шухăшĕсемпе шайлаштарнă.
7. Ахунзянов Н.М. Общее языкознание. Казань: Изд-во Казан. ун-та, 1981.
8. Кодухов В.И. Общее языкознание. М.: Высш. шк., 1974.

## 6§. Ăнлав е пĕлтерĕш уйланкисем

Тĕрлĕрен лексика ушкăнĕсен тĕсĕсем пулма пултарнине ученăйсем XII ĕмĕртех асăрханă (М.М. Покровский), лексикăри уйланкă структури хăш-пĕр уйрăмлăхĕсене (П.Роже, Ф.Дорнзайф, Р. Халлиг тата В. фон Вартбург хăйсен тезисĕсенче палăртнă.

Чи малтанах *уйланкă* (поле) ăнлав чĕлхере Й.Трир, Г.Ипсен ĕçĕсенче тĕл пулать; вĕсем хăйсен тĕпчевĕсенче ку ăнлава пĕлтерĕш уйланки тесе палăртнă. Уйланкă – чĕлхе тата лексика единицисен пĕрлĕхĕ.

Пĕлтерĕш уйланкинчи лексемăсен пĕр пек пĕлтерĕшлĕх пур, унта пĕр пек семантика паллиллĕ сăмахсем кĕреççĕ.

Тĕслĕхрен, куçăм глаголĕсен пĕлтерĕш уйланкине çакăн пек галаголсем кĕреççĕ: *кай, чуп, пыр, иш, вĕç* т.ыт.те.

Ăнлав е пĕлтерĕш уйланкисене мĕнле те пулин пĕрпеклĕх тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринпе пĕлтерĕш енчен çыхăннă лексемăсем кĕреççĕ. Иртнĕ ĕмĕртех вырăс чĕлхеçи М.М. Покровский çакна уйрăмах палăртса хăварнă: «Сăмахсемпе вĕсен пĕлтерĕшĕсем пĕр-пĕринчен уйрăм пурăнмаççĕ, анчах та пирĕн ăс-тăн хутшăнмасăрах вĕсем уйрăм ушкăнсене пĕрлешеççĕ». Сăмахсем уйрăм ушкăнсене пĕрлешни, М.М. Покровский шутланă тăрăх, чăнлăхри япаласем хушшинчи çыхăнăва кăтартакан сăмахсен ассоциацийĕнчен тата вĕсем морфологи тĕлĕшĕнчен пĕр пек пулнинчен килет. М.М. Покровский вĕрентĕвĕнче лексикăн системăлăхĕ, семантика тĕлĕшĕнчен пăхсан, этемĕн тĕнчекурăмĕнчен, çав вăхăтрах тата пурнăçра усă курмалли япаласене ушкăнланинчен те килет.

Пĕлтерĕш уйланкисене Г.Ипсен, Й.Трир, Л.В.Щерба, А.И. Смирницкий тата ытти чĕлхеçĕсем малалла тĕпченĕ.

Л.В. Щерба ку ĕçсен тухăçлăхне çапла ăнлантарса парать: сăмахсене классификацилени ăнлавсен системине ăнкарма çул уçса парать. Лексикăна система тĕлĕшĕнчен классификацилени, Л.В. Щерба тĕпченĕ тă-

рах, П.Роже, Ш.Балли т.ыт. тĕпчевçĕсен ĕçĕсенче ăнăçлах пулса тухман, мĕншĕн тесен вĕсен тĕпчевĕсенче вăл е ку чĕлхепе хăш вăхăтра усă курни паллă мар тата чĕлхен наци уйрăмлăхне палăртман, урăхла каласан пĕлтерĕш классификацийĕ логика тĕлĕшĕнчен кăна йĕркеленнĕ.

А.И. Смирницкий шутланă тăрах, пĕр енчен пăхсан, пĕлтерĕш уйланкисем, «хисеп», «вăхăт», «талккăш», «чĕрчунсен тĕнчи» т.ыт. пысăк темăсемпе çыхăннисем, хăйсем тĕллĕнех пайланаççĕ, тепĕр енчен пăхсан, чылай сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ пулнипе ытти пĕлтерĕш ушкăнĕсене кĕме пултарать. Çакна пула ытти пĕлтерĕш уйланкисен чиккисем анлăланса каяççĕ, вара классификаци питĕ кăткăсланса каять.

Тĕслĕхрен, акăлчан сăмахĕ *wood* «вăрман» пĕлтерĕшĕпе *grave* «роща», *forest, thicket* «чаща» лексика ушкăнĕсенчи сăмахсемпе пĕр ретре тăрать, анчах та «материал» пĕлтерĕшлĕ чух ку ретре *stone* «камень», *metal* «металл», *iron* «железо» сăмахсем тăраççĕ.

***Пĕлтерĕш уйланкисене уйăрас ыйту.*** Пĕлтерĕш уйланкисене уйăрас ыйту ку е вăл чĕлхеçĕ уйрăм сăмах епле, хăçан пулса кайнине пĕлнипе çыхăннă тесе шутлать. Л.В. Щербăпа А.И. Смирницкий шутланă тăрах, сăмах хăйне тĕллĕн илсен чĕлхе единици шутланать, ăнлав уйланкисем çак сăмахсенчен пĕлтерĕшне кура ушкăнсем йĕркелеççĕ.

Й.Трир вара урăхларах шутлать: сăмахсем пĕлтерĕш уйланкин пĕр пайĕ кăна пулнипе пĕлтерĕшсене те вĕсем ку е вăл пĕлтерĕш уйланкинче кăна палăртма пултараççĕ.

Çакна палăртса хăвармалла: сăмахсене пĕлтерĕш уйланкисене тулашри еңĕсене шута илсе классификацилеңĕ чух лексика пĕр пек пайланманни куранать тата ку тĕрĕс лингвистика мелĕ шутланмасть, мĕншĕн тесен тĕпчевçĕн малтан чĕлхе уйрăмлăхĕсене мар, япалалăх паллине тупса палăртмалла та, çакăн хыççăн кăна лексика тытăмне тĕпчемелле.

Пĕлтерĕш уйланкисене уйăрма лингвистика критерийĕсене шыранă чух чĕлхеçĕсем юлашки вăхăтра чĕлхе

материалне шута илме пуçларĕç. Çавна май акă мĕн çирĕплетсе калама пулать: тĕслĕхрен, *сĕтел* тата *пукан* сăмахсем пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраççĕ, вĕсем текстра ялан тенĕ пекех пĕрле тĕл пулаççĕ, чăваш чĕлхинче *сĕтел-пукан* мăшăр сăмах йĕркелеççĕ. Сăмахсен çыхăнăвĕ пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен мĕн чухлĕ çирĕпрех, текстра вĕсене пĕр-пĕринпе юнашар çавăн чухлĕ ытларах курма пулать. Çак паллăсем семантика уйланкисене уйăрнă чух кирлĕ.

Семантика ушкăнĕсене уйăрмалли тепĕр çул-йĕр вăл – сăмахăн синтаксис уйрăмлăхĕсене тĕпчени.

Пĕрешкел синтаксис улшăнăвне кĕрекен сăмахсем парадигмăна пĕрлешеççĕ. Тĕслĕхрен, вырăс чĕлхинче япала ячĕсем, япалан параметрне кăтартаканнисем кăна, синтаксис тĕлĕшĕнчен улшăнма пултараççĕ. Тĕслĕхрен, *высотой с дом – высокий как дом; шириной с улицу – широкий как улица* т.ыт.те.

Вырăс чĕлхинчи глаголсемпе тата белорус чĕлхинчи япала ячĕсемпе туса ирттернĕ тĕпчев ĕçĕ сăмахсем пачах урăх ушкăнсене пайланса кайма пултарнине кăтартса панă.

**Ăнлав е пĕлтерĕш уйланкисем.** Ăнлав е пĕлтерĕш уйланкисене чĕлхеçĕсем тахçанах тĕпчеме тытăннă.

Ку ыйтăва А.А. Уфимцева, А.И. Кузнецов, Г.С. Щур т.ыт. чĕлхеçĕсен ĕçĕсенче хускатнă. Асăннă тĕпчевçĕсен монографийĕсенче пĕлтерĕш уйланкисене тĕпченĕ, урăхла каласан, пĕр-пĕр паллă ăнлава пĕлтерекен сăмахсен ушкăнĕсем йĕркеленнине çырса кăтартнă. Чĕлхеçĕсем çакăн пек уйланкăсенче сăмахсен семантика çыхăнăвĕсене тупса палăртаççĕ те вĕсене тĕпчесе çырса кăртартаççĕ.

«Пĕлтерĕш уйланки» ăнлав иртнĕ ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче В.Гумбольдт «чĕлхен шалти форми» çинчен вĕрентнĕ май çуралнă терĕмĕр. Пĕлтерĕш уйланки термин тĕрлĕрен ăнлава пĕлтерет, урăхла каласан, вăл е ку тĕпчевçĕ чĕлхен шалти формине мĕнлерех ăнланнинчен килет. Ют çĕр-шывра Й.Трир концепцийĕ уйрăмах палăрса юлнă. Çак концепци ытти чĕлхеçĕсен ĕçĕсене нумай енчен хирĕçлет.

Г.Ипсен ăнлав уйланкин ушкăнне этимологи тĕлĕшĕнчен пĕр пекрех пĕлтерĕшлĕ тата грамматика тĕлĕшĕнчен пĕрлĕхлĕ сăмахсене кĕртет.

А.Иоллес тĕпчевçĕ вара ăнлав уйланкин ушкăнне антоним сăмахсене те кĕртет. Й.Трир шухăшĕпе, пĕлтерĕш уйланки вăл – словарĕн пĕрлешсе ларнă пĕр пайĕ. Пĕр-пĕр чĕлхен уйрăмлăхне тата сăмахсен пĕлтерĕшне тупса палăртасси тĕпчевçĕн тĕп задачи пулса тăрать. Ăна татса пама чĕлхе лексикине уйрăм пайсене, урăхла каласан, «уйланкăсене» пайламалла, тĕслĕхрен, «çар ĕçĕпе çыхăннă сăмахсен уйланки», «савăнăçа, хаваслăха кăтартакан сăмахсем», «тум-тир тата капăрлăх уйланки», «çитменлĕх, çуклăх уйланки» т.ыт.те. Й.Трир шухăшĕпе, ăнлав уйланкине çутçанталăк панă ăс-тăна пĕлтерекен ăнлавсем кăна мар, этем вĕренӳре туяннă ăнлавсем те кĕреççĕ. Пĕлтерĕш уйланки чĕлхесенче пĕр пек мар пулни нумай тĕпчевçĕсен ĕçĕсенче палăрса юлнă. Ăнлав уйланки тенине чĕлхеçĕсем тĕрлĕрен ăнлантараççĕ, ăна утмăл çул ытла тĕпченĕ пулсан та вĕсем пĕр шухăш патне пырса тухайман. Çакăн сăлтавĕ ку е вăл тĕпчевçĕ сăмаха хăй пĕлнĕ пек пĕр-пĕр уйланкăна кĕртни. Хальлĕхе уйланкăсене уйăрмалли тĕп критерисене тупса палăртайман-ха.

Й.Трирăн теорийĕпе практикăра усă курас текен тĕпчевçĕ умĕнче çакăн пек йывăрлăх сиксе тухма пултарать: чĕлхен тĕрлĕ элеменчĕсем тĕрлĕрен ушкăнсем тăваççĕ. Тĕслĕхрен, хулара ĕçлесе пурăнакан çын тата ялти хресчен пĕр япаланах икĕ тĕрлĕ ăнланма е ăнлантарма пултараççĕ.

Хальхи чĕлхе пĕлĕвĕнче *пĕлтерĕш уйланки* термина тĕрĕсрех определени пачĕç. Акă, тĕслĕхрен, Ю.С. Маслов шутланă тăрăх, *пĕлтерĕш уйланки* пурнăçри пĕр-пĕр фрагментпа çыхăннă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене кăтартать. Çак уйланка кĕрекен сăмахсем вара пĕр ăнлава пĕлтерекен сăмахсем йĕркелеççĕ. Тĕслĕхĕсем:

– вăхăта пĕлтерекен сăмахсем (*вăхăт, çул, уйăх, эрне, талăк, сехет, хĕл, çу, кĕркунне, çуркунне, кун, çĕр);*

– тăванлăха кăтартакан терминсем;

– ӳсен-тӑрансен ячӗсем;
– ӑшӑпа сивве туйнине палӑртаканнисем.

Чӗлхери кашни сӑмахах пӗлтерӗшӗпе ытти сӑмах-семпе ҫыхӑнса тӑрать. Ҫавӑнпа та вӗсем тӗрлӗрен хут-шӑнӑва кӗрсе пӗчӗк е пысӑк лексика ушкӑнӗсем, е ӑн-лав уйланкисем, йӗркелеҫҫӗ. Пирӗн ӑс-тӑнра йӗркеленнӗ ушкӑнсенче сӑмахсен пӗлтерӗшӗсем пӗрешкелли кӑна ҫителӗксӗр, эпир вӗсене хамӑр ӑс-тӑнпа тӗрлӗрен сӑмах-семпе ҫыхӑнтарса тӗрлӗрен пӗлтерӗш ушкӑнӗсене кӗртетпӗр, ҫапла вара лексика ушкӑнӗсем нумайлансах пыраҫҫӗ. Тӗслӗхрен, вырӑс чӗлхинчи *обучать, обученье, обучаю, обучаем* сӑмахсенче пӗр тӗп элемент пур – сӑмах тӗпӗ; анчах та *обучать* сӑмах урӑх ушкӑна та кӗме пултарать, мӗншӗн тесен унӑн аффиксӗ ытти сӑ-махсенчи элементсемпе пӗр пек; тӗслӗхрен, *обучать, вооружать, писать* т.ыт.те. Пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен вӑл ытти сӑмахсемпе пӗр пек пулма пултарать (*обучать, наставлять, посвящать*).

Кирек мӗнле сӑмах та пирӗн ӑсра тӗрлӗрен пӗрлӗхсем тума пултарать. Пӗр пек пӗлтерӗшлӗ *обу-чать, преподавать* сӑмахсен ушкӑнне тата нумай сӑмаха кӗртме пулать.

Словарь йышне классификацилени тӗрлӗрен пулӑм-сенчен килет. Лексикӑна пӗлтерӗш ушкӑнӗсене пайлани те словарь йышне классификацилени шутланать.

Литература

1. Ахунзянов Э.М. Общее языкознание. Казань: Изд-во Казан. ун-та, 1981. С. 243-248.

2. Березин Ф.М., Головин Б.Н. Общее языкознание. М.: Просвещение, 1979. С. 61-72.

3. Кодухов В.И. Общее языкознание. М.: Высш. шк., 1974. С. 112.

4. Степанов Ю.С. Основы общего языкознания. М.: Просвещение, 1975.

## 7§. Синтаксис шайĕ

Чĕлхеçĕсенчен пĕрисем синтаксис пуплев пайĕсенчи сăмахĕсемпе вĕсен формисен пĕлтерĕшĕсене тĕпчет тесе шутлаççĕ; теприсем синтаксиса логика калавĕпе тата синтагматикăпа пĕрешкел тесе пăхаççĕ. Аса илер-ха: синтаксис сăмах майлашăвĕпе предложени çинчен вĕрентекен наука пулнине шута илсе ĕлĕкрех ăна логикăпа морфологирен уйăрнă.

Чăнах та, синтаксисра эпир сăмах формисемпе тата лексемăсемпе усă курнине, синтаксис тытăмĕ шухăшлавăн логика формисемпе шайлашса тăнине куратпăр; синтаксис единицисем морфологи единицисенчен уйрăлса тăраççĕ. Çавна шута илсе синтаксис шайĕ, ун единицисемпе категорийĕсем çук теме пултараймастпăр.

Чĕлхен морфема тата морфологи шайĕ хăйне евĕр пĕлтерĕшлĕ, çав вăхăтрах синтагматика çыхăнăвĕсене морфологире анчах мар, фонологире те тупма пулать. Çапла вара, синтаксис пĕлтерĕшне тата синтагматикăн хăйне евĕрлĕхне морфологи (е лексика) формисен функцийĕ пек уйăрса ăнлантарма çук.

Сăмахран, япала ячĕсен туху падеж формине морфологире ытти падеж формисемпе танлаштарсан палăртма пулать. Анчах та падежăн морфологи парадигмин пĕлтерĕш структури синтаксис йĕркине нимĕнле те ăнлантарса параймасть.

Чĕлхери синтаксис шайĕн хăйĕн единицисен пуххи пур; вĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай сăмах майлашăвĕпе сăмах çаврăнăшĕ тăвакан синтаксис тĕслĕхĕсем (ĕлкисем) пулса тăраççĕ. Çапла вара, *Эпĕ кĕнеке вулатăп; Вăл çыру çырать; Вĕсем вутă татаççĕ* т.ыт. предложенисем чĕлхен пĕр евĕрлĕ синтаксис моделĕпе йĕркеленнĕ тетпĕр.

Чĕлхери синтаксис шайĕн, морфологи шайĕнчи пекех, хăйĕн единицисем пур – предложени тата сăмах майлашăвĕ. Вĕсем хушшинче пĕрпеклĕхсем те пур: сăмах майлашăвĕсем, сăмах кӳлеписем пекех, предложенисене тумалли конструктивлă материал шутланаççĕ. Сăмаха морфемăсене пайлани сăмахăн морфологи струк-

турипе пӗрешкел мар, предложени модельне предложенире усӑ курнӑ сӑмах майлашӑвӗсем ҫине пайлани предложенин синтаксис структурипе пӗр мар: предложени сӑмах майлашӑвӗсенчен, предложени членӗсемпе синтагмӑсенчен тӑрать. Предложени моделӗ сӑмах майлашӑвӗн моделӗнчен хӑйӗн вӑрӑмӑшӗпе тата анлӑ тытӑмӗпе уйрӑлса тӑрать.

Предложени моделӗн тарӑн сӑн-сӑпачӗ чи малтанах предложени структури мӗнле предложени членӗсенчен тӑнинче курӑнать. Предложени структурин ҫак уйрӑмлӑхӗ ҫинчен чи малтан предложенин тӗп тата кӗҫӗн членӗсем ҫинчен вӗрентни пек калана.

Сӑмахран, *Тинех, майӗпен манӑн атте лӑпланчӗ* предложени никӗсӗнче унӑн тӗп членӗсем тӑраҫҫӗ, определенипе обстоятельство вара предложение иккӗмӗшле элементсем, сӑмах майлашӑвӗн пайӗсем пек кӗрсе анлӑлатаҫҫӗ. *Тинех* сӑмах синтаксис контексчӗ тума кирлӗ. Предложенин никӗсри членӗсем шутне предложенин тӗп членӗсем анчах мар, дополненипе обстоятельство та кӗме пултараҫҫӗ (*Манӑн ҫыврас килмест; Фабрикӑра лӑпкӑ марччӗ* т.ыт.те). Уйрӑмах хутлӑ предложенин ӗлки (моделӗ) нумай компонентлӑ: кунта тӗп тата пӑхӑнуллӑ предложенисен никӗсри членӗсем анчах мар, предложени пайӗсем хушшинчи ҫыхӑнӑва кӑтартакан синтаксис паллисем те (союзсем, союзла сӑмахсем т.ыт.те) кӗреҫҫӗ.

Предложенин иккӗмӗш уйрӑмлӑхӗ – вӑл коммуникаци тӗллевӗллӗ пулни. Ҫакӑ унӑн икӗ паллӑ енӗнче курӑнать:

1) предложени моделӗн пӗлтерӗшлӗ енне шухӑшлавӑн тӗп логика формипе – шухӑшланипе (пропозиципе, логемӑпа) – шайлаштарнӑ; ҫакӑ конкретлӑ содержание ӑнланмалла каласа памалли единица пек кӑтартать;

2) предложени структури хутшӑнӑвӑн тӗрлӗ формисене, чӗлхен конситуацине, диалог тата монолог пӗрлӗхне хутшӑнма пултарать.

Чӗлхен синтаксис шайӗ ушкӑнсене тата разрядсене пӗрлешекен сӑмах майлашӑвӗсемпе предложенисенчен тӑрать. Предложенисемпе сӑмах майлашӑвӗсен класси-

фикацийĕ синтаксис шайĕн пĕтĕмĕшле синтаксис категорийĕсене тупса палăртма пулăшать. Тытăмне кура предложенисем пĕр составлисем тата икĕ составлисем, ятлисем тата глаголлисем пулаççĕ. Кăткăслăхне кура, пĕр енчен – хутсăр, анлă тата кăткăсланнă предложенисене, тепĕр енчен сыпăнуллă хутлă тата пăхăнуллă хутлисене уйăраççĕ.

Синтаксис моделĕсемпе усă курни, вĕсен содержанине актуализацилени тата синтаксис контекстне йĕркелени синтаксис предмечĕн тĕп задачисем пулса тăраççĕ.

Чĕлхен синтаксис шайĕ ытти шайсем пекех хăйĕн единицисен пуххипе палăрса тăрать, вĕсен шутне предложени тата сăмах майлашăвĕ кĕреççĕ терĕмĕр. «*Сăмах майлашăвĕ* – пĕлтерĕшне кура грамматика енчен çыхăннă, объективлă чăнлăхри пулăмсене ят паракан икĕ е ытларах сăмах çыхăнăвĕ. Тĕслĕхрен: *Студентсен пухăвĕ, сарă хĕвел, вăтам пÿллĕ çын.* Сăмахпа пĕрле предложени тăвакан элемент пулса, сăмах майлашăвĕ тĕп синтаксис единицисенчен пĕри пулса тăрать».

Синтаксисăн тепĕр тĕп единици – предложени. Вăл пĕр-пĕр пулăма тата ун çине калаçакан мĕнле пăхнине пĕлтерекен тĕп мел пулса тăрать, грамматикăпа интонаци законĕсене пăхăнса йĕркеленĕ пуплевĕн пĕрлĕлĕхлĕ единици шутланать. Предложенин вĕçленнĕ шухăша палăртас туртăмĕ пур. Вăл предикацие пĕлтерет, унăн чи пысăк йышне (е пулмалли минимумне) тăвакан пĕр е ытларах сăмахран тăрать. Лингвистикăра предложенин икçĕр ытла тĕсĕ пурри паллă.

Ученăйсем хушшинче предложени чĕлхепе е пуплевпе мĕнле çыхăнса тăни пирки пĕр шухăшлăх çук. В.М. Солнцев, сăмахран, çапла шутлать: «Фонемăпа, морфемăпа тата сăмахпа танлаштарсан, конкретлă предложенисем пуплев хатĕрĕ шутланаççĕ. Предложени хатĕр мар, чĕлхепе усă курмалли, пуплев ĕçĕн результачĕ кăна». А.И. Смирницкий шутланă тăрăх, «...маларах асăннă единицăсем чĕлхере хатĕр халлĕн çĕнĕрен пулас пахалăхлă пулсан, предложени вара – пуплевре

ҫӗнӗрен пулас пахалӑхлӑ. Ҫавӑнпа та предложени пуплев единици пек палӑрса тӑрать».

Предложени синтаксис единици пулса чӗлхепе те, пуплевпе те ҫыхӑнса тӑрать текен шухӑш вырӑнлӑрах пек туйӑнать. «Предложени икӗ пӗр пек туртӑмпа палӑрса тӑрать: пуплев хутшӑнӑвӗн ячейки, элементарлӑ пӗр пӗтӗм коммуникаци акчӗ пек вӑл пуплевпе ҫыхӑннӑ, анчах та тӗпре синтаксис тытӑмӗ, синтаксис формисем тата хутшӑнӑвӗсем модальлӗ-предикативлӑ ҫыхӑнура пулсан, вӑл чӗлхепе ҫыхӑнать. Пур предложени те – пуплев факчӗ, унӑн никӗсӗнче выртакан синтаксис структури, е моделӗ, – чӗлхе хатӗрӗ». Пуплев предложенийӗ чӗлхе предложенине пурнӑҫа кӗртнин тӗсӗ пулать. Кашни предложени, пӗр енчен, пуплев чӑнлӑхӗ, ӗҫ, тепӗр енчен – пӗр евӗрлӗ ӑнлавсем тӑвакан потенциллӗ схема, конструктивлӑ тип. Чӗлхе системин синтаксис шайӗ тӗп единицӑсем пулса тӑракан предложени структурин пӗрлӗхлӗ типӗсене е моделӗсене йӗркелет. Конкретлӑ пуплев содержанийӗпе тулнӑ предложени моделӗсем пуплев юхӑмӗн элементарлӑ ячейкисене, пуплевӗн тӗп коммуникаци единицисене куҫаҫҫӗ.

Коммуникациллӗ тата конструкциллӗ синтаксиссене пӗр-пӗринчен уйӑрни тухӑҫлӑ, мӗншӗн тесен ҫакӑ предложени структурине пуплев тата чӗлхе дихотомийӗпе ҫыхӑнтарса ҫутатса пама май туса парать. Предложенин коммуникациллӗ тата конструкциллӗ пайланӑвӗ унӑн структурин чӑн палли пулать. Предложени структурин конструкциллӗ синтаксисӗ, урӑхла каласан, чӑнчӑн чӗлхе аспекчӗ, коммуникациллӗ пуплевӗннипе тачӑ ҫыхӑннӑ. Ҫав вӑхӑтрах предложени структурисен пуплев тата чӗлхе планӗсем пӗр пек мар.

Литература

1. *Кодухов В.И.* Общее языкознание. М.: Высш. шк., 1974.

2. *Березин Ф.М., Головин Б.Н.* Общее языкознание. М., 1979.

3. *Ахунзянов Э.М.* Общее языкознание. Казань: Изд-во Казан. ун-та, 1981.

4. *Степанов Ю.С.* Основы общего языкознания. – М.: Просвещение, 1975.

## 8§. Çум тата хушма шайсем

Ку таранччен чăваш чĕлхе наукинче *подъярус, межъярусные явления, промежуточные ярусы* терминсене чăвашла куçарни пулман, çавна май эпир *подъярус* тенине *çум шай* (е *çумшай*), *промежуточные ярусы* тенине *хушма шайсем* теме сĕнетпĕр.

Хушма шайсем (е çумшайсем) шутне В.И. Кодухов морфонологи, сăмах пулăвĕ (дериватологи) тата фразеологи шайĕсене кĕртет. Ф.М. Березин, Б.Н. Головин çырнă «Общее языкознание» ( М.: Просвещение, 1979. С. 142-172) сăмах пулăвĕн шайне тĕп шайсен ретĕнче пăхма сĕннĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетсе теори тĕлĕшĕнчен ăсласа ку чăнах та çаппа пулмаллине ĕнентернĕ. Тутар чĕлхин тĕпчевçи Э.М.Ахунзянов хайĕн «Общее языкознание» ĕçĕнче сăмах пулăвне тĕп шайсен ретĕнчех пăхма сĕнет.

Пирĕн шухăш та çав еннеллех сулăнать. Енчен те эпир морфема тата морфологи шайне уйрăм тĕп тесе пăхатпăр пулсан, пирĕн морфема тата сăмах пулăвĕн шайне те тĕп шайсен ретнех лартма лекет, мĕншĕн тесен пĕрремĕшĕ тĕпрен илсен сăмах улшăнăвĕн парадигмипе, категорийĕсемпе, иккĕмĕшĕ вара – сăмах пулăвĕн парадигмипе тата категорийĕсемпе çыхăннă. Хальлĕхе ку ĕçре сăмах пулăвĕн шайне эпир хушма (е çум) шайсен ретĕнчех пăхатпăр. Хамăр енчен В.И. Кодухов кăтартнă хушма (е çум) шайсен ретне тата морфосинтаксис текен шая кĕртме сĕнесшĕн.

## 9§. Морфонологии шайĕ

***Морфонологин чĕлхе наукинчи вырăнĕ.*** Морфонологие час-часах хăйĕн пĕрремĕш утăмĕсене тăвакан çамрăк дисциплина пек сăнлаççĕ. Çак шухăшăн никĕсĕ те çук мар. Тĕслĕхшĕн вырăс морфонологине илсе пăхар. Унта акă мĕн курăнать: Н.С. Трубецкой ĕçĕ хыççăн (1929ç.)

çак темăпа пĕрремĕш монографилле тĕпчев ĕçĕ 1973 çулта çеç тухать тата тепĕр 10 çултан тин вырăс глаголĕн морфонологине халалланă монографи кун çути курать. Чăваш чĕлхинчи морфонологи пулăмĕсене пуçласа И.П. Павлов кăтартнă.

Чикĕ леш енчи чĕлхе наукинче морфонологи ыйтăвĕсене çутатнă ĕçсен шучĕ пысăкрах, паллах, анчах та вĕсенче, генеративизм йăлисемпе килĕшӳллĕн, фонологипе морфологие хăйсене уйрăм çеç пăхса тухнипе çырлахман. Çакăнпа пĕрлех чĕлхе наукишĕн морфонологи сфери те çĕнĕлĕх мар. Кунта çакна палăртса хăварни те çителĕклĕ: йăлана кĕнĕ лингвистика темисем шутне фонемăсен ылмашăвĕ, элизисем, метатезăсем кĕреççĕ. Ыттисемпе пĕрлех вĕсем пурте морфонологин тĕпчев объекчĕсем шутланаççĕ.

Чĕлхе наукин ĕçĕсенче морфонологи пысăк вырăн йышăнмасть. Çакă вăл ăна хăйĕн пĕлтерĕшлĕхĕпе, фонологипе, морфологипе, сăмах пулăвĕпе, синтаксиспа, семантикăпа танлаштарма çук чĕлхе периферийĕ тесе шутлама хăнăхнипе çыхăннă курăнать. Пĕтĕмĕшле илсессĕн, паллах, ку тĕрĕс мар.

Чĕлхе тĕпчевĕ тесе, Блумфилд шухăшĕпе, нумай чухне паллă янравпа татăклă пĕлтерĕш шайлашăвĕн тишкерĕвне калаççĕ. Морфонологи вара пĕлтерĕшлĕ единицăсем янăрав енчен «хăйсене мĕнле тытнипе» интересленет.

Морфонологи вăл, пĕр енчен – пĕлтерĕшлĕ единицăсен фонологийĕ, тепĕр енчен ăна морфологи, сăмах пулăвĕ е стинтаксис тĕпчевĕн тăсăмĕ тесе пăхни те йăнăш пулас çук. Морфонологин объектне, задачисене кашни автор тĕрлĕрен палăртать. Вĕсем морфонологин хăйне уйрăм единицисем пур-и, çук-и – ку ыйтупа та пĕр шухăш патне тухайман.

Раççей ăслăх литературинче морфонологипе çыхăннă ĕçсене çыракансем пурте тенĕ пекех Р.И. Аванесов тата Мускав фонологи шкулĕсемпе çыхăннă. Щерба шкулне илес пулсассăн вăл морфонологин тĕп принципĕсене системăласа çутатса çитерейменнине палăртса хăвармалла.

***Морфонологи пулӑмӗсен никӗсӗ тата функцийӗсем.*** Н.С. Трубецкойӑн «Некоторые соображения относительно морфонологии» ятлӑ паллӑ ӗҫӗнче морфонологин тӗп тӗллевӗсене ҫакӑн пек палӑртнӑ: «Тулли морфонологи» теорийӗ ҫак пайсенчен тӑрать:

1) морфемӑсен фонологи тытӑмӗн теорийӗ;

2) сасӑсен юнашарлӑх ылмашӑвӗсем морфемӑсен ҫыхӑнӑвӗнчи уйрӑм морфемӑсене мӗнле витӗм кӳнин теорийӗ;

3) морфологи функцийӗсене пурнӑҫлакан сасӑсен черетленӗвӗн теорийӗ.

Н.С. Трубецкойӑн шухӑшӗсемпе пуринпе те килӗшме май ҫук пулсассӑн та, унӑн ҫак виҫӗ пункчӗ пӗтӗмӗшле морфонологи ӑнлавӑн проблемипе паллаштарать, морфонологие тӗпчекенсен умне кирлӗ ыйтусемпе фактсене кӑларса тӑратать. Морфонологи пулӑмӗсем хӑйсене фонологипе морфологи ҫыхӑнӑвӗнче палӑртаҫҫӗ: ку закономерноҫсем – морфологи енӗпе сӑлтавланнӑ фонологи мелӗсен ӗҫӗ.

Литературӑра нумай хутчен пӑхса тухнӑ тӗслӗхех илер: вырӑс чӗлхинчи таврӑну глаголӗсенче [с] пулса кайни, тӗслӗхрен, *купаться* (kupassa), ҫак пулӑмах *пятьcя* (p´ats´a) глаголта ҫухалать. Ку тӗслӗхе Реформатский тишкернӗ. Вӑл ӑнлантарнӑ тӑрӑх, «фузи витӗмӗпе [ц] пулса каять, [тс] консонантлӑ ушкӑн [ц]-на куҫман чухне – агглютинаци пулать».

Агглютинаци тата фузи тенисем – ку ытлашши пӗтӗмӗшле характеристика. Ҫак пулӑма урӑхларах ӑнлантарма пулать: [s´a] сыпӑк [са] вариантпа сӑмах тӗпӗ [t] тата [t´] сасӑсемпе вӗҫленсен ҫӳрет, ытти тӗслӗхсенче ылмашӑнмасть (*мышь* сӑмахри уҫӑ сасӑ хыҫҫӑн пулакан [s´] варианта шутламасан, паллах).

Ҫак юлашки шухӑш тепӗр хут гибридлӑ морфонологи ӑнлавӑн кирлӗлӗхӗпе вырӑнлӑхне кӑтартса парать. Ҫак пулӑмсене кӗрекен мӗнпур процессне сӑнласа кӑтартма ӑннипе те фонологипе (пирӗн тӗслӗхре вӑл [t] тата [t´] вӗҫлемӗшсем), морфологипе те (*-ся* татӑк тӗслӗхӗ) ҫыхӑннӑ информаци те кирлӗ.

Морфонологи объекчĕн çак икĕ енлĕхне пула тĕпчевçĕсем объекта хăйне ансатлатма пăхаççĕ, ăна е «таса» морфологие, е «таса» фонологие кĕртме тăрăшаççĕ. Анчах та хăш-пĕр процессене фонологи е морфологи енчен уйрăммăн пăхса ăнлантарса пама май çукки те морфонологие чĕлхе наукин хăйне уйрăм пайĕ пек пăхма май парать. Çапла вара чĕлхере морфонологи хушма шай пуррине ĕнентерме пулать.

***Морфонологи правилисем.*** Морфонологи правилисене тĕрлĕ енчен пăхса классификацилеме май пур. Правилăсен чи ансат классификацийĕ пирĕн шутпа:

1) альтернацисем (*ят – ячĕ* (т-ч) йышши ылмашусем);

2) элизисем (пĕр е ытларах уçă фонема çухални (танл. *пурăнăç – пурнăç*));

3) аугментацисем (пĕр е ытларах фонема хушăнни: танл.: (*вăл* – диал. *вăлă*);

4) метатезăсем (фонемăсем вырăнна ылмашăнсa ларни).

*1. Альтернацисем* – морфонологин чи паллă процесĕсем е правилисем шутланаççĕ. Ылмашусен юхăмĕ тата вĕсен иерархи майлашăвĕ чи кирлĕ тата кăткăс ыйтусенчен пĕри шутланать. Тĕслĕхрен, йăлана кĕнĕ ылмашу к – ч: *батрак – батрачить.* "Хирĕçле" ылмашу та пур, тĕслĕх: ч – к, *стучать – стук.*

*2. Элизисем.* Морфемăшăн уçă сасăсен элизийĕ вырăнлăрах. *-Ушк, -чк, -к* суффикссен варианчĕсем *-ушк*, *-ечек, -ек.* Морфонологи пулăмĕсене ăнлантарнă чухне элизие е аугментацие суйласа илмелле пулсассăн нумай чухне суйлав элизи енче пулать: морфемăн тулли вариантне элизи мелĕпе кĕскетме çăмăлрах. Çавăнпа та *и, тен, мать, дочь* сăмах тымарĕсен тĕп варианчĕсем – *матер-, дочер-.*

Вырăс тата славян чĕлхисемшĕн элизи-кĕскетӳсем характерлă. Тĕслĕхрен, *заумный – заумь, бездарный – бездарь* т.ыт.те: кунта сăмах тĕпне кĕрекен *-н-* суффикс тухса ӳкет.

3. Метатезăсем çинчен нумай калама çук. Чи малтанах метатезăна диахрониллĕ процесс пек уйăрса пăх-

малла, фонемăсен черетленӳ йĕрки ылмашăнни синхронилле морфологи пулăмĕсене витĕм кӳрет: танл. *пек* ~ диал. *кап*, алт. *кеп* ~ *кап*, хак. *кип*.

Таса метатеза тĕслĕхне литва чĕлхинче тупма пулать. Тĕслĕхрен, *s, š, zg* хупă сасăсен ушкăнĕнче *t, a, k* сасăсем умĕнче тăрсассăн хăш-пĕр глагол формисем йĕркеленнĕ чухне сăмахри хупă сасăсен йĕрки ылмашăнать, тĕслĕхрен, *blusko* «бледнел» – *bluksta* «бледнеет».

Пĕтĕмлетсе çакна калама пулать: чĕлхен морфонологи меслечĕн курсĕнче виçĕ тĕрлĕ иерархи хутшăнăвĕсем йĕркеленнĕ: альтернацилле ретсенчи членсен иерархийĕ; правилăсен иерархийĕ; пĕр-пĕр чĕлхери морфонологи меслечĕсен пĕтĕмĕшле иерархийĕ.

***Морфемика тата морфонологи ăнлавсем.*** Ытти чĕлхе пулăмĕсене тишкернĕ пекех морфемикăна тĕпчеме тивĕçлĕ ăнлавсенчен тата çав ăнлавсене палăртакан терминсенчен тытăнмалла. Хальхи чĕлхе наукинче «морфемика» терминна икĕ пĕлтерĕшпе усă кураççĕ:
1) чĕлхе шайĕ;
2) çак чĕлхе шайне тĕпчекен чĕлхе наукин пайĕ.

Кунта тӳрех çакна каласа хăвармалла: лингвистика литературинче «морфемика» термин пĕрремĕш пĕлтерĕшпе (чĕлхе шайĕ пек) сайра тĕл пулать.

Çак пĕлтерĕше палăртма ытларах чухне хутлă тытăмлă терминсемпе усă кураççĕ, тĕслĕхрен; «чĕлхери морфемăсен тытăмĕ» (Д.И. Алексеев, Н.Д. Арютунова), «чĕлхери морфемăсен шайĕ» (Е.С. Кубрякова, В.В. Лопатин т.ыт.те), «морфемăсен механизмĕ» (В.В. Лопатин, Н.С. Улуханов).

Ытларах чухне ку термин иккĕмĕш пĕлтерĕшпе çӳрет: «сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсем, морфсемпе морфемăсем çинчен вĕрентекен ăслăх»; «сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсем пĕр-пĕринпе тата пĕтĕмĕшле сăмахпа мĕнле çыхăннине тĕпчекен ăслăх»; «морфемăсене тата сăмах тĕпĕсене чĕлхен (пуплевĕн) уйрăм икĕ енлĕ единицисем пек тишкерекен» чĕлхе наукин пайĕ.

Морфемикăна хăйне уйрăм чĕлхе шайĕ пек уйăрса пăхни вырăнлă. Морфемăсем морфемикăн единицисем пулнă май пĕр-пĕринпе парадигматикăллă тата синтаг-

матикăллă хутшăнусемпе çыхăннипе тата ытти чĕлхе шайĕн единицисемпе иерархилле хутшăнусенче тăнипе ăна хальхи ăнлавпа чĕлхе шайĕ пек йышăнма май парать. Хăйĕн единицисен кăткăслăхне, тăсăмне шута илсен, морфемика ку иерархилле «çуртра» фонетика хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнмалла, урăхла каласан, унăн фонетикăпа лексика варрине вырнаçмалла.

Морфемикăна морфемăсен системи пек пăхатпăр пулсан, ăна морфема ăнлавран тĕпчеме тытăнсан вырăнлăрах пулать.

Нумай чухне морфемăна сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пайĕ тесе калани тĕл пулать. Çапах та морфемăна кун пек çеç палăртни çителĕксĕр. Мĕншĕн тесессĕн вырăс тата ытти нумай чĕлхере вак пĕлтерĕшлĕ пайсем (морфемăсем) çине пайланман сăмахсем сахалах мар. Тĕслĕхрен: *кино, сасартăк, аран, çеç, пальто, шоссе, а, и, на* т.ыт.те.

Çакăнган вара морфема яланах сăмах пайĕ пулманнине, хăш-пĕр тĕслĕхсенче вăл сăмахпа та танлашма пултарнине куратпăр. Çавăнпа та морфемăна чĕлхен пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк единици тесе палăртсан тĕрĕсрех пулать.

Чылай чухне *морфонологи* термин мĕнле пĕлтерĕшлĕ пайсенчен тăни уçăмлă мар. О.С. Ахманова ăна реестра *фономорфология* тесе кĕртет те унăн вариантĕсене çапларах парать: *морфонология, морфофонемика, морфонемика.* Фономорфология тенине икĕ тĕрлĕ пайлама пулать: 1) фон(о) + морф(о) + логия; 2) фон(о) + морфология. Автор ăна иккĕмĕш пайри пĕлтерĕшпе парать: «Раздел языкознания, изучающий связи фонологии и морфологии, исследующий особенности использования фонологических противопоставлений для выражения морфологических различий, имеющий своим предметом фонологическое строение и фонемный состав слов и морфем» (О.С. Ахманова Словарь - энциклопедия, 1969. С. 499).

Е.С. Кубрякова ку термина пĕрремĕш пайри пек (фоно + морфо + логия) ăнлантарать: «Морфонология – раздел языкознания, изучающий фонологическую струк-

туру морфем разного типа и использования фонологических различий в морфологических целях» (Лингвистический энциклопедический словарь. М.: Сов. энцил.,, 1990. С. 315).

Çӳлерех каланине шута илсе морфонологи термин тытăмĕнче фонологи, морфема тата морфологи ăнлавсем тĕвĕленнĕ.

***Юлашкинчен калани.*** Чĕлхе наукинче морфемикăпа морфонологи пулăмĕсене .ку тарана çитсе те вĕçне çитиех тĕпчемен. Татса паман, тавлашу çуратакан ыйтусем нумай-ха. Вырăс чĕлхинче морфемикăна тĕпчес ĕçре нумай вăй хунă Е.С. Кубрякова, М.В. Панов чĕлхеçĕсене асăнса хăвармалла. Морфонологие пуçарса яракансенчен пĕри – Бодуэн де Куртенэ. Унăн шухăшĕсене малалла аталантараканĕсем – Н.С. Трубецкой, Н.В. Крушевский т.ыт.те. Чăваш чĕлхин морфонологине тĕпчекенсенчен палăраххи – И.П. Павлов.

Литература


*1. Ахманова О.С.* Фонология, морфонология, морфология. М., 1966.

*2. Земская Е.А.* Современный русский язык: Словообразование. М.: Просвещение, 1973.

3. Лингвистический энциклопедический словарь. М.: Сов. энцикл., 1990.

*4. Лопатин В.В.* Русская словообразовательная морфемика: проблемы и принципы описания. М.: Наука, 1977.

*5. Немченко П.С.* Современный русский язык: Морфемика и словообразование: Учебник. Н. Новгород, 1994.

*6. Павлов И.П.* Краткий очерк морфонологии современного чувашского языка // Чувашский язык, литература и фольклор. Чебоксары, 1974. Вып. 4. С. 3-45.

*7. Павлов И.П.* Краткий очерк морфонологии современного чувашского языка // Чувашский язык и литература / Тр. ЧНИИ. Чебоксары, 1975. Вып. 53. С. 3-43.

*8. Сергеев В.И.* Морфемика тата морфонологи: Лекцисен конспекчĕ. Шупашкар, 2001.

*9. Чурганов В.Е.* Очерк русской морфонологии. М.: Наука, 1973.

*10. Трубецкой Н.С.* Sur la morphonologie // Travaux duercle lingvistigue de Prague. V1. 1929.

## 10§. Сӑмах пулӑвӗн шайӗ

Иртнӗ ӗмӗрӗн 70-мӗш ҫулӗсемччен сӑмах пулӑвне чӗлхе пӗлӗвӗн уйрӑм пайӗ пек пӑхман. Ӑна ытларах морфологире тӗпченӗ. XIX ӗмӗрти ученӑйсен ӗҫӗсенче сӑмах пулӑвне этимологире тишкерни паллӑ. Иртнӗ ӗмӗрӗн юлашки ҫулсенче наукӑра ҫӗнӗ шухӑш тӗвӗленчӗ. Сӑмах пулӑвне чӗлхе наукин уйрӑм пайӗ пек пӑхма, е сӑмах пулӑвӗн вырӑнӗ чӗлхе ӑслӑхӗнче пуррине палӑр-тма пуҫларӗҫ.

Аслӑ шкул программисенче те, учебниксенче те сӑ-мах пулӑвне чӗлхе пӗлӗвӗн хӑйне уйрӑм пайӗ пек пӑхаҫҫӗ. Кунта ытларах Н.М. Шанский профессорӑн ӗҫӗсем палӑрчӗҫ, сӑмах пулӑвне ҫырса кӑтартнӑ тӗрлӗ пособисемпе учебниксем тухрӗҫ.

Сӑмах пулӑвӗ чӗлхе наукин хӑйне уйрӑм пайӗ кӑна мар, чӗлхе тытӑмӗн пӗр пайӗ те, вӑлах диахрони ӑн-лавпа та, чӗлхе тытӑмӗн пур пайӗсемпе те уйрӑлми тачӑ ҫыхӑнура тӑрать.

***Сӑмах пулӑвӗн шайӗ.*** Хальхи вӑхӑтра чылай чӗлхеҫӗ сӑмах пулӑвне чӗлхе наукин хӑйне уйрӑм пайӗ е чӗлхе шайӗ пек пӑхма пуҫларӗ. Сӑмах пулӑвӗ чӗлхери сӑмах пулӑвӗн тытӑмне уҫса парать, урӑхла каласан. чӗлхери сӑмах пулӑвӗн моделӗсене пӗтӗмӗшле ӑнлантарать. Ҫапла вара, чӗлхери сӑмахсен тытӑмне («сӑмахсем мӗнле пулнӑ») тата «ҫӗнӗ сӑмахсем мӗнле пулаҫҫӗ» те-нине ҫак пайра пӑхаҫҫӗ.

Ф.М. Березинпа Б.Н. Головин сӑмах пулӑвне чӗлхен уйрӑм шайӗ пек пӑхма хӑйне тивӗҫлӗ паллӑсем пур тесе шутлаҫҫӗ. Сӑмах пулӑвӗ пуплев пайӗсене йӗркелес тӗлӗшпе морфологипе те тачӑ ҫыхӑнура тӑрать.

***Мӗн вӑл сӑмах пулӑвӗ?*** Сӑмах пулӑвӗ – чӗлхе ӑс-лӑхӗн уйрӑм пайӗ; вӑл – сӑмах тытӑмӗ, хурӑнташ сӑ-махсем хушшинчи ҫыхӑну, чӗлхе наукин ҫӗнӗ сӑмахсем мӗнле пулни ҫинчен вӗрентет. Сӑмах пулӑвӗ терминӑн виҫӗ пӗлтерӗш пуррине асӑрхарӑмӑр, вӗсем пӗр-пӗрипе тачӑ ҫыхӑннӑ. Ҫак виҫӗ пӗлтерӗш пӗр-пӗринчен хӑш енчен уйрӑлса тӑнине пӗлме чи малтан сӑмахсем пул-

лев юхăмĕнче пулса каяççĕ текен йăнăша туйса илмелле, ăнланмалла. Чăн та, пулакан тĕпсем пуплевре йĕркеленмеççĕ, вĕсемпе хатĕр халлĕн усă куратпăр. Тĕслĕхрен, *ножка* тата *нога*, *водный* тата *вода* сăмахсем пĕри тепринчен пирĕн куç умĕнчех пулса каймаççĕ. Çапах та чĕлхере вĕсем тан правалла.

Чĕлхери пулăмсене икĕ енчен: чĕлхе аталанăвĕн хальхи е пĕр-пĕр паллă тапхăрне (синхроние) тата авалхине историри тĕрлĕ тапхăрсене (диахроние) тĕпе хурса тĕпчеме пулать. Çак икĕ ен сăмах пулăвне тĕпченĕ чухне те палăрса тăмалла.

Чĕлхе пĕр вĕçĕмсĕр аталанать, вăлах хутшăну хатĕрĕ те, шухăшлав хатĕрĕ те шутланать. Чĕлхе аталанăвĕ чи малтан сăмах йышĕ ӳснинче палăрать, кашни тапхăртах çĕнĕ сăмахсемпе пуянланать. Чĕлхе мĕн авалтан аталанса, пуянланса пырать, çĕнĕ сăмахсем киввисенчен пулăнаççĕ. Çавăнпа та чĕлхери пулакан тĕпсене синхрони енчен çеç мар (хурăнташ сăмахсен тытăмĕпе çыхăнăвне тĕпе хурса), диахрони енчен те (чĕлхе аталанăвĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенче сăмахсем пулса кайнине тĕпе хурса) тĕпчеме тивет.

***Пулăннă (е иккĕмĕшле) сăмах тытăмĕ.*** Морфемăсен шайлашăвне сăмах тытăмĕ тетпĕр. Морфема тесе сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пайне калама йышăннă. Вăл сасăсемпе сыпăксенчен хăй пĕлтерĕшлĕ пулнипе уйрăлса тăрать (сăмахран, *переписать* сăмах сасăсем тĕлĕшĕнчен пачах урăхла: *п-е-р-е-п-и-с-а-ть*; сыпăксем тĕлĕшĕнчен – *пе-ре-пи-сать*; морфемăсем тĕлĕшĕнчен çапла пайланать: *пере-пис-а-ть*). Сăмах тытăмĕнчи морфемăсем хăйсен пĕлтерĕшĕпе пĕр пек мар. Вĕсене икĕ расна ушкăна пайлама пулать: пĕрремĕшне сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕ тымар çеç кĕрет, тепĕр пайне – ыттисем: приставка, суффикс, вĕçлемĕш (окончание) кĕреççĕ. Иккĕмĕш ушкăнри морфемăсем – аффикссем. Сăмах тытăмĕнче вĕсем пулăшу пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ, урăхла каласан сăмах тăваççĕ е ун формине улăштараççĕ. Сăмаха морфемăсем çине пайланисĕр пуçне тата тепĕр икĕ хирехирĕçле пайсене кăтартма пулать: сăмах тĕпĕ тата вĕçлемĕшĕ. Çак пайланăва кура сăмах тытăмĕ мĕнле

морфсенчен тăнине пĕлетпĕр. Сăмах тĕпĕ икĕ тĕрлĕ пулать: хутсăр (пĕр тымартан çеç тăрать; тĕсл., *вод-а, ид-у*) тата хутлă (тымарсăр пуçне приставка, суффикс пур; тĕсл. *от-нес-у, книж-к-а, пере-движ-к-а*).

Сăмах тĕпне тата вĕçлемĕшне палăртасси пĕрремĕшле («çиелти») пайлану шутланать. Хутлă сăмах тĕпне тымар тата аффикссем кĕреççĕ. Морфемăна тишкернĕ чухне сăмах тымарне чи юлашкинчен тупса палăртма пултаратпăр. Малтан суффикссене, приставкăсене тупатпăр (тымар сăмах варринче ларать), унсăр йăнăш тума пултаратпăр. Хăш чухне приставка е суффикс патне каякан сасă тымар çумне çыпçăнать. Тĕслĕхрен, *заснуть, согнуть* сăмахсенче вĕренекенсем *сн, сну, гн, гну, сог, согн* тымарсене палăртаççĕ. Çавăнпа та морфемăсене хăй йĕркипе палăртни йăнăшсем тăвасран хăтарать. *Заснуть, согнуть* сăмахсенче нимĕнле чăрмавсемсĕрех *засну-, согну-* тĕпсене палăртатпăр, форма тăвакан суффикс *-ть*, приставкăсем *за-* тата *со-*. Çак морфсене пурне те палăртнă хыççăн *-с-* тата *-г-* тымарсем юлаççĕ.

Сăмах тĕпĕсем, хутлисем те, хутсăррисем те вырăс чĕлхинче çирĕп схемăпа йĕркеленнĕ. Сăмах тăваслăхăн схеми ăна тăвакан морфсен шайлашăвĕнчен килет, чи малтан – аффикссен шайлашăвĕнчен. Акă *передвижка* сăмах *пере – к-а* схемăпа пулать; – (тире) тымар морфа кăтартать. Чĕлхе хăйĕн меслечĕсемпе, мелĕсемпе питĕ перекетлĕ усă курать: нумай сăмах çак схемăпа йĕркеленнĕ. Пĕр евĕрлĕ схемăсемех тĕрлĕ тымарлă сăмахсене йышăнаççĕ, тĕслĕхрен, *пере – к-а* схемăпа *переписка, передвижка, переноска, перевозка, перекладка* т.ыт. сăмахсем пулаççĕ. Эпир схемăн пĕлтерĕшне те палăртма пултаратпăр. Кашни расна тымарлă сăмахшăн вăл пĕр пĕлтерĕшлĕ, сăмах тытăмĕ те пĕр евĕрлĕ. Çав пĕлтерĕше схемăна йĕркелекен аффикссем палăртаççĕ. Акă *пере – к-а* схема абстрактлă япала ятне пĕлтерет, тепĕр хут е çĕнĕрен, е урăх çĕрте иртекен ĕçе палăртать; *без – н-ый* схема паллă ятне пĕлтерет, япала е паллă çуккине кăтартать: *бездумный, бесшумный, беззвучный, бездымный.*

***Хурăнташ сăмахсем хушшинчи çыхăну.*** Çапла майпа, чĕлхери сăмахсемпе хатĕр халлĕн усă куратпăр, вĕсем чылай чухне çĕнĕрен йĕркеленмеççĕ. Пултаракан тата пулакан тĕпсем пĕр тан праваллă шутланаççĕ. Çавпа май пĕр тымартан пулнă сăмахсем хушшинче хăйне евĕрлĕ çыхăну палăрать, вĕсене хурăнташ сăмахсем теççĕ. Пĕр тымартан пулăннă мĕнпур сăмахсен пĕрлĕхĕ сăмах пулăвĕн йăвине çавăрать. Урăхла ăна сăмахсен çемйи теççĕ. Çав йăвари сăмахсем ярăм (вăчăра) йĕркелеççĕ; ярăмĕ сыпăксенчен (звеносенчен) тăрать. Хурăнташ сăмахсем хушшинчи çыхăну тӳрĕ тата тӳрĕ мар пулать. Акă, тĕслĕхрен, *вода* тата *водный* сăмахсем тӳрĕ çыхăнура, *вода* тата *водянистый* сăмахсем вара тӳрĕ мар çыхăнура тăраççĕ. Çак сăмахсем хушшинче çыхăнтаракан *водяной* сыпăк пур. Тӳрĕ çыхăнура йĕркеленнĕ икĕ хурăнташ сăмах сыпăк (звено) тăваççĕ. Енчен те йăва икĕ сăмахран çеç тăрать пулсан, ярăм (вăчăра) пĕр сыпăкпа вĕçленет (*календарь – календарный*). Енчен йăвара икĕ сăмахран ытла пулсан, ярăм вăрăмланать, темиçе сыпăка çитет. Çапла майпа, пĕр-пĕр сыпăкри сăмах тепĕр сыпăкăн пуçламăшĕ пулса тăрать *(вода – водяной, водяной – водянистый, водянистый – водянистость).* Сыпăксен йĕрки тӳрĕ тата юплĕ (туратлă) пулать.

Пĕл – пĕлтер – пĕлтерӳ – пĕлтерӳçĕ

Мука – мучной – мучнистый – мучнистость

Ученик – ученический – ученичество

Учить – учитель – учительский – учительство – учительствовать

Поучить – поучительный – поучение

Сыпăкри членсем (сăмахсем) пĕр-пĕринпе хăйне евĕрлĕ çыхăнура тăраççĕ. Çав çыхăнусен хăйсен структурипе семантики пур. Сыпăкри членсем пĕр-пĕринчен хăйсен структурипе, урăхла каласан хăйсен тытăмĕпе

уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Ытларах иккӗмӗш член пӗрремӗшӗнчен кӑткӑсрах пулать: *вод-а, шыв-ак* (икӗ морфема) тата *во-дя-ной, шыв-ӑш-лӑх* (виҫӗ морфема) пӗр-пӗринчен аффикс пуррипе, тепӗр чухне тата сасӑ улшӑнӑвӗпе е кӗрсе ларнипе (*мук-а – муч-н-ой; пиҫ – пӗҫ-ер*) уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Сыпӑкри компонентсем (членсем, сӑмахсем) хушшинчи уйрӑмлӑх икӗ тӗрлӗ пулма пултарать:

1) иккӗмӗш компонентӑн аффиксӗ пӗрремӗш компонентра палӑрмасть (*вод-а – вод-иц-а*);

2) пӗрремӗш компонентри пекех иккӗмӗш компонентра та ҫав евӗрлӗрех аффикс пур (*мук-а – муч-н-ой*).

Час-часах морфемӑсен хисепӗ (шучӗ) иккӗмӗш членӑн та, пӗрремӗш членӑн та пӗр пек пулать. Акӑ, калӑпӑр, *синь, тишь, ход, воз* япала ячӗсем хутсӑр сӑмах тӗпӗсем шутланаҫҫӗ. Сӑмах тытӑмӗн уйрӑмлӑхӗ вырӑс чӗлхинче флексирен килет (япала ячӗн флексийӗ – паллӑ ячӗн флексийӗ; япала ячӗн флексийӗ – глагол флексийӗ). Ҫакӑн евӗрлӗрех уйрӑмлӑх *перевоз, проход* тата *перевозить, проходить* сӑмахсем хушшинче те палӑрать. Морфемӑсен хисепӗ пӗр пек, анчах флексийӗ енчен уйрӑмлӑх пур.

Ҫӳлерех асӑннӑ тӗслӗхсенчен ҫакна калама пулать: иккӗмӗш член, пӗрремӗшӗпе танлаштарсан, пулакан тӗп шутланать; пӗрремӗш членӗ иккӗмӗшӗшӗн вара пултаракан тӗп пулать. Акӑ, *тишь, гордость, выходить* сӑмахсен пултаракан тӗпӗ *тихий, гордый, ходить* сӑмахсем пулаҫҫӗ.

**Ҫӗнӗ сӑмахсен пулӑвӗ.** Чӗлхери сӑмахсен пулӑвне историре, чӗлхе аталанӑвӗнче (диахронире) пӑхма тивет тенипе ҫӳлерех асӑнтӑмӑр ӗнтӗ. Вырӑс тата чӑваш чӗлхисенче ҫӗнӗ сӑмах тумалли мелсем чылай. Ҫав мелсем пӗр-пӗринчен расна, усӑ курасси тӗлӗшӗнчен те уйрӑм: аффикс мелӗ, тӗп ҫумне тӗп хушни, лексикӑпа синтаксис мелӗ, лексикӑпа семантика мелӗ, морфологипе синтаксис мелӗ. Уйрӑмлӑхсемсӗр пуҫне мелсем хушшинчи ҫыхӑнӑва та асӑрхама пулать.

1. Кирек мӗнле иккӗмӗшле сӑмах та тӗп сӑмаха кура пулса каять. Акӑ *водяной* сӑмах *вода* сӑмахран пулнӑ, *сейчас* сӑмах *сей* тата *час* сӑмахсен

пěрлешěвěнчен, *столовая* япала ячě *столовая* паллă ятěнчен, *кулак* (пуян хресчен) сăмах унчченхи *кулак* (чышкă) пěлтерěшлě сăмахран пулнă пулмалла; вырăссем ăна тěрěксенчен илнě: *кул* «рука» + *-ак*.

2. Сăмах тумалли процесс яланах икě картлашкаллă: пултаракан тěп – пулакан тěп; çапах та сăмах тăвас пулăм пěр сăмах çеç тунипе çырлахмасть. Хăш чухне пулăннă сăмахран тата ытти çěнě сăмахсем йěркеленеççě. Сыпăксем тăсăлса пынипе вăрăм ярăм йěркеленет, вăл е туратсăр, е туратлă пулать.

3. Сăмах тăвас пулăмра *пултаракан пая* палăртма тивет, вăл çěнě сăмах тунă чухне кирлě. Пултаракан пай пултаракан тěпěн пайě пулма пултарать:

а) унăн тымарě – хутлă сăмахсем тунă чух *(водовоз, водопровод, паровоз)*; ă) унăн тěпě (хутлă е хутсăр) – суффикс хушса тунă чух (*переход – переходный, гора – горный*); б) кěскелнě тěп (*переходить – переход, провозить – провоз*), е тата пултаракан тěп хăй çумне префикс тата префикспа суффикс хушни (*веду – от-веду, купаюсь – вы-купаюсь, играю – на-играю-сь*), çавăн пекех сăмахсем пěрлешни (лексикăпа синтаксис мелě – *тотчас* тата *тот час, сумасшедший* тата *с ума сшедший*); субстантивациленни (*столовая* япала ячě *столовая* паллă ятěнчен пулнă). Аффикс хушса сăмахсем тунă чух çěнě сăмахăн пултаракан пайне палăртма «пултаракан тěп» ăнлавпа усă кураççě. Ку ăнлавпа усă курма меллě мар, мěншěн тесен сăмах тěпě тата «пултаракан тěп» ăнлавсем пач урăхла чěлхе пулăмěсене палăртаççě. Сăмах тěпне тата вěçлемěше палăртни чěлхене синхрони енчен пăхни пулать, «пултаракан тěпе» палăртма вара чěлхе аталанăвне, историе кěрсе каймалла. Унсăр пуçне сăмах тěпě вěçлемěшпе шайлашуллă, «пултаракан тěп» текен ăнлав вара вěçлемěш ăнлавпа нихăш енчен те шайлашăнаймасть. Хăш чухне çеç сăмах тěпěне «пултаракан сăмах тěпě» пěр килеççě.

Çěнě сăмах тумалли мелсем тěрлěрен. Сăмах пулăвěн мелě вăл – чěлхере çирěпленнě е çирěпленекен сăмахсем тумалли мел. Вырăс чěлхинче ун пек мелсем

çаксем: аффикс (суффикс) мелĕ, парадигма улшăнăвĕ, тĕп çумне тĕп хушни, икĕ сăмах пĕрлешни, пĕр пуплев пайĕнчен тепĕр пуплев пайне куçни, сăмах пĕлтерĕшĕсем хирĕçле пулни. Хушма мел вăл – ылмашу (сасăсен ылмашăвĕ).

Пур схема та çĕнĕ сăмахсем тумалли тĕслĕх шутланмасть. Акă хальхи вырăс чĕлхинче çĕнĕ сăмахсем *петь – петух,* (танл.: чăв. *авăт – авăтан, автан); пасти – пастух* евĕрлĕ модельсемпе пулмаççĕ, çавăн пекех *жить – жилец, кормить – кормилец* тĕслĕхсенче те çавах. Çапла майпа хăш-пĕр структурăпа семантика (семантика тытăмĕн) схемисем сăмах пулăвĕн тухăçлăхĕпе уйрăлса тăраççĕ. Кун пек схемăсене, гухăççăррисемпе танлаштарсан, модельсем тесе калама пулать. Структурăпа семантика схеми тата модель – хирĕçле ăнлавсем, пĕр-пĕринчен синхронипе диахрони енчен уйрăлса тăраççĕ.

Чĕлхе çĕнĕ сăмахсемпе вĕçĕмсĕрех пуянланса пырать.

Акă, тĕслĕхрен, *учитель* сăмах истори тĕлĕшĕнчен *учить* сăмах çумне *-тель* суффикс хушăннипе тата парадигма улшăннипе пулса кайнă. Çак икĕ сăмах хальхи вырăс чĕлхинче те структурăпа семантика енчен çыхăнчăк. Çавăн пекех тĕлме тĕл килменни сăмах пулăвĕн ярăмĕнче компонентсенчен пĕри çухалнипе çыхăннă. Çапла майпа ярăм кĕскелет, пĕр-пĕринпе çыхăнчăк мар хурăнташ сăмахсем икĕ членлă сыпăк йĕркелеççĕ. Акă *путник путь* сăмахпа тӳр килет, истори тĕлĕшĕнчен вăл хальхи чĕлхерен çухалнă *путьный* палл ятĕнчен пулса кайнă. Çакăн евĕрлĕ тĕслĕх, у.к. тĕлме тĕл килменни, вырăс чĕлхинче татах пур: *беличий* сăмах халĕ *белка* сăмаха тӳр килет, истори тĕлĕшĕнчен пăхсан вăл хальхи чĕлхерен çухалнă *белица* сăмахпа çыхăннă пулнă. Хурăнташ сăмахсем хушшинчи структурăпа семантика çыхăнăвĕсем те, çĕнĕ сăмах пулăвĕ те тĕрлĕ пулăмсем шутланаççĕ (пĕр-пĕринпе пĕрешкелтерех пулсан та). Хальхи вырăс чĕлхинчи хурăнташ сăмахсен структурăпа семантика çыхăнăвĕсене шута илсе тулли тишкерӳ тумалла, çавăн пекех çĕнĕ сăмах тăвас пулăма тишкермелле. Структурăпа семантика тишкерĕвĕ тума

пӗтӗм ҫыхӑнура тӑракан хурӑнташ сӑмахсене пӑхмалла. Кунта пулакан тӗпсем те, пултаракан тӗпсем те кӗреҫҫӗ. Пултараканнине пулаканнипе танлаштараҫҫӗ, пӗрпеклӗхне тупма тӑрӑшаҫҫӗ (*рыба – рыб-н-ый*): иккӗмӗш члена пӗрремӗшпе танлаштараҫҫӗ (*рыбный – рыба*). Пулакан тӗпсене икӗ тӗрлӗ тишкермелле: пултаракан тӗп тӗлӗшӗнчен тата пулакан тӗп тӗлӗшӗнчен; тӗсл., *учить – учитель – учительский*. Енчен те, тӗслӗхрен, *где, около, куда, депо, какаду, вспять, опять, под* сӑмахсен структурӑпа семантика ҫыхӑнӑвӗ тӗлӗшӗнчен хурӑнташлӑхӗ палӑрмасть пулсан, вӗсене структурӑпа семантика енчен тишкерме кирлӗ мар. Тепӗр енчен, сӑмахсем структурӑпа семантика ҫыхӑнӑвӗнче пулмасан та ҫӗнӗ сӑмах тӑвас пулӑмӑн тишкерӗвӗ витӗр тухаҫҫӗ. Кунта пулакан тӗпсем пурте кӗреҫҫӗ (тӗсл., *домик, переписка* йышшисем ҫеҫ мар, *пир, дар, около* сӑмахсем те). Ҫӗнӗ сӑмах тӑвас пулӑмӑн тишкерӗвӗ витӗр пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем ҫеҫ тухмаҫҫӗ, ҫавӑн пекех пулӑшу пӗлтерӗшлисене те тишкерме тивет (тӗсл., *чуть, бы, чу, -нибудь* татӑксем, *-либо, -ибо* союзсем), ҫав вӑхӑтрах структурӑпа семантика тӗлӗшӗнчен пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене кӑна тишкермелле.

Пулакан тӗп текен ӑнлав сӑмах тӗпӗпе те ҫыхӑнуллӑ, мӗншӗн тесен сӑмах тӗпне тымарсӑр пуҫне суффикссемпе приставкӑсем кӗреҫҫӗ (*пере-воз-к-а, стол-ик, вы-ход*). Синхрони тӗлӗшӗнчен кун пек тӗпсене хутлӑ теме йышӑннӑ, енчен те сӑмах тӗпӗ пӗр тымартан ҫеҫ пулсан хутсӑр тетпӗр. Истори тӗлӗшӗнчен *перевозка, столик* сӑмахсем те, *высь, ширь, ход, синь* т.ыт. евӗрлисем те пулакан тӗпсем шутланаҫҫӗ. Хальхи вырӑс чӗлхинче *перевозка, столик* сӑмахсен тӗпӗ хутлӑ, *высь, ход, синь* сӑмахсен тӗпӗ хутсӑр.

Литература

1. Лингвистический энциклопедический словарь. М.: Сов. энцикл., 1990.

2. Винокур Г.О. Заметки по русскому словообразованию // Избранные работы по русскому языку. М., 1959.

3. Щерба Л.В. Что такое словообразование // ВЯ, 1962. №2.

4. Кубрякова Е.С. Что такое словообразование // М., 1965.
5. Актуальные проблемы лексикологии: Докл. 2-й лингвист. конф. Новосибирск, 1969. 289 с.
6. Актуальные проблемы лексикологии: Тезисы докл. 3-й лингвист. конф. 3-7 мая 1971 г. Новосибирск, 1971.
7. Улуханов И.С. Словообразовательная семантика в русском языке и принципы ее описания. М., 1977.
8. Земская Е.А., Кубрякова Е.С. Проблемы словообразования на современном этапе // Вопр. ыкозн., 1978. №6.
9. Лопатин В.В. Русская словообразовательная морфемика. Проблемы и принципы описания. М., 1977.
10. Андреев В.В. Отглагольное имяобразование в чувашском языке. Чебоксары, 1990.
11. Семенова Г.Н. Именные композиты в чувашском языке. Чебоксары, 2002.

## 11§. Фразеологи шайӗ

Чӗлхе наукинче фразеологие предмет пек ятарласа тӗпчеме нумаях пулмасть пуҫланӑ. 1956 ҫулта фразеологи теорийӗн пӗтӗмӗшле тата уйрӑм ыйтӑвӗсемпе вырӑс ученӑйӗсем вуншар статья пичетлесе кӑларнӑ пулин те, фразеологи вӗрентекен ӑслӑхри лару-тӑрӑва Б.А. Ларинӑн ҫакӑн пек хаклама сӑлтав пулнӑ: «Фразеология как лингвистическая дисциплина находится в стадии «скрытого развития». Она интересует многих, над нею задумываются, экспериментируют и стар, и млад. В этих опытах она приобретает традицию и характерные черты, но она еще не сложилась, не оформилась как зрелый плод подготовительных трудов».

Вырӑс фразеологине чӗлхе пӗлӗвӗн уйрӑм пайӗ пек тӗпчессине В.В. Виноградов академикӑн иртнӗ ӗмӗрӗн 40-мӗш ҫулӗсен вӗҫӗнче пичетленсе тухнӑ ӗҫӗсемпе ҫыхӑнтараҫҫӗ. Сӑмахсен ҫыхӑнчӑк пӗрлешӗвӗсем ҫинчен калакан вӗрентӗве В.В. Виноградов пуҫарса янӑ. Вӑл фразеологизмсене виҫӗ ушкӑна (фразеологи пӗтӗҫӗвӗсем, фразеологи пӗрлӗхӗсем, фразеологи пӗрлешӗвӗсем) уйӑрса тӗпченӗ. Ҫак концепцие халӗ вырӑс чӗлхеҫисем кӑна мар, Раҫҫейри ытти халӑх чӗлхеҫисем те йышӑнаҫҫӗ.

Юлашки çулсенче фразеологи чылай тĕпчевçе кăсăклантарать. Ку таранччен унпа çыхăннă теори ыйтăвне хускатнă йышлă статьясем кăна мар, монографилле тĕпчевсем те çутă кун курчĕç. Çавăн пекех фразеологи словарĕсем те пĕрин хыççăн тепри пичетленсе тухрĕç. Халĕ фразеологи тĕпчевĕн тĕллевĕсем те паллă, материал та питĕ нумай пухса хатĕрленĕ. Апла пулин те нумай ыйтăва паян кунччен те татса парайман-ха. Çакна шута илсен фразеологи çăлкуçĕсенчен нумайăшне (илемлĕ литературăри тата публицистикăри, çыру палăкĕсенчи, фольклорти, вырăнти калаçусенчи т.ыт. фразеологизмсене) ку тарана çитсе те тарăннăн тĕпчемен темс пулать.

Фразеологи единицисен хăйне евĕрлĕхĕ – вĕсен «çирĕплĕхĕнче», «çĕнелсе тăрас туртăмĕнче», «компоненчĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăннинче», «хăйне евĕрлĕ сăмах çаврăнăшĕ тăвас туртăмĕнче» палăрса тăни. Ученăйсем çирĕплетнĕ тăрăх, çакă шăпах форма пĕрлĕхне тата çак чĕлхе единицин содержанине шута илменнипе çыхăннă. Çакăн пек калани фразеологизма унăн ахаль прототипĕпе танлаштарса пăхсан иккĕленӳ çуратать. Тĕслĕхрен, *доводить металл до белого каления* тата *доводить человека до белого каления.* Пĕрремĕш сăмах майлашăвĕ иккĕмĕшĕнчен мĕнпе уйрăлса тăрать-ха? Çирĕплĕхĕпе-и? Пĕри те, тепри те çирĕп йĕркене пăхăнса йĕркеленнĕ. Çĕнелсе тăрас туртăмĕпе-и? Анчах та çак сăмах çаврăнăшĕсем кирлĕ чухне иккĕшĕ те пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен те, форми енчен те çĕнелме пултараççĕ: *доводить сталь (железо) до красного каления; доводить обстановку до белого каления.* Асăннă проблемăсене фразеологи наукине тĕплĕн пĕлмесĕр татса пама çук.

**Фразеологи предмет тата унăн тĕллевĕсем.** Хальхи чĕлхе пĕлĕвĕнче «фразеологи» термин икĕ пĕлтерĕшлĕ:

1) чĕлхе пĕлĕвĕн фразеологизмсене тĕпчекен пайĕ;
2) пĕр-пĕр чĕлхери фразеологизмсен йышĕ.

Фразеологи çаврăнăшĕсем, е çирĕп сăмах майлашăвĕсем, фразеологин тĕпчев объекчĕ пулса тăраççĕ.

Тĕслĕхрен, *алли кукăр, шыв сыпнă пек тăр, ни вилĕ, ни чĕрĕ, çапса хуç* т.ыт.те.

Чĕлхе кулленхи пурнăçпа, общество историйĕпе, унăн культурипе тачă çыхăнса тăни лексикăра кăна мар, фразеологире те питĕ лайăх палăрать. Сăмахран, тутарсен пусмăрĕ вăхăтĕнче çакăн пек фразеологизмсем çуралнă: *мамаево нашествие* «кĕтмен çĕртен кăмăла кайман çынсем йышлăн килни», *мамаево побоище* «пысăк тавлашу, хирĕçӳ», *как Мамай прошел* «тĕп ту, çука хăвар». Вырăс халăхĕн йăли-йĕркипе çыхăннă фразеологизмсем: *хлеб-соль* «хăнана тарават пулни», *сажать на хлеб и воду* «апат памасăр выçăпа асаплантарни», *бить челом* «кама та пулин пулăшма тархасласа ыйтни, унăн хута кĕни».

Фразеологи науки сăмах çаврăнăшĕсене тытăмĕ, пĕлтерĕшĕ, пулса кайни енчен тĕпчет, пулăвне, улшăнăвне пăхса тухать. Фразеологизмсем тытăмĕпе сăмах пĕрлешĕвĕсенчен е сăмах майлашăвĕсенчен тăраççĕ. Сăмах майлашăвĕсем, чĕлхе единици пулнă май, сăмахпа предложени хушшинче тăраççĕ. Вĕсем икĕ е темиçе сăмахран тăракан синтаксис çыхăнăвне йĕркелеççĕ (тĕслĕхрен, *интереслĕ кĕнеке, тăватă студент* т.ыт.те). Сăмах майлашăвĕсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: ирĕклĕ тата ирĕклĕ мар (çыхăнчăк).

Ирĕклĕ пĕрлĕх калаçу процесĕнче çĕнĕрен те çĕнĕрен çуралать. Çак пĕрлĕхри компонетсенчен пĕри те хăйĕн ирĕклĕ пĕлтерĕшне çухатмасть. Ирĕклĕ мар пĕрлĕхре вара кашни уйрăм компонентăн хăйне ирĕклĕ пĕлтерĕшĕ пĕтĕм пĕрлĕх пĕлтерĕшĕнче çухалать. Тепĕр майлă каласан, фразеологизмсен пĕлтерĕшĕ вĕсен тытăмĕнчи кашни уйрăм сăмахран мар, сăмах майлашăвĕсенчен пĕтĕмĕшле тухать. Тĕслĕхрен, *водить за нос* «ултала».

***Фразеологизмсене вĕсен компоненчĕсем пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринпе тачă çыхăннине кура уйăрасси.*** В.В. Виноградов палăртнă фразеологизмсен виçĕ тĕсĕсĕр пуçне (фразеологи пĕтĕçĕвĕсем, фразеологи пĕрлĕхĕсем тата фразеологи пĕрлешĕвĕсем) вырăс фразеологине ма-

лалла тӗпчени тата тепӗр ушкӑн тупса палӑртма май пачӗ. Ку вӑл фразеологи ҫаврӑнӑшӗсем.

Фразеологи пӗтӗҫӗвӗсем – семантика тӗлӗшӗнчен пайланми ҫирӗп сӑмах майлашӑвӗсем, вӗсен пӗтӗмӗшле пӗлтерӗшӗ кашни уйрӑм компонент пӗлтерӗшӗнчен килмест. В.В. Виноградов фразеологи пӗтӗҫӗвӗсене ҫакӑн пек ӑнлантарса парать: «Фразеологические сращения представляют собой семантическую единицу, однородную со словом, лишенным внутренней формы. Оно не есть ни произведение, ни сумма семантических элементов. Оно химическое соединение ... растворившихся с точки зрения современного русского языка амофорных лексических частей».

Фразеологи пӗтӗҫӗвӗсен паллисем:

1) фразеологизмӑн пӗтӗмӗшле пӗлтерӗшӗ унӑн тытӑмӗнчи кашни уйрӑм компонент пӗлтерӗшӗнчен килменни: *заморить червячка* «кӑшт ҫырткаласа ил», *подложить свинью* «ырӑ мар ӗҫ ту»;

2) фразеологизмсен тытӑмӗнче хальхи вырӑс чӗлхинче усӑ курман сӑмахсем пурри: *попасть впросак* «аван мар лару-тӑрӑва лек», *точить лясы* «пӗр вӗҫӗмсӗр калаҫ, пакӑлтат» т.ыт.те;

3) фразеологизмсен тытӑмӗнче грамматика тӗлӗшӗнчен авалхи формӑсем пурри, *притча во языцех* «кулленхи калаҫӑвӑн яланхи теми», *ничтоже сумняшеся* «пӗр иккӗленӳсӗр, шухӑшламасӑр»;

4) фразеологизмсен тытӑмӗнчи компонентсем хушшинче синтаксис тӗлӗшӗнчен чӗрӗ ҫыхӑнусем ҫукки: *как пить дать* «тем тесен те, тем пулсан та», *шутка сказать* «тӗлӗннине палӑрт» т.ыт.те.

Фразеологи пӗтӗҫӗвӗсене нумай чухне идиома теҫҫӗ, вӗсене пӗр чӗлхерен тепӗр чӗлхене тан пӗлтерӗшпе куҫарма ҫук.

Фразеологи пӗрлӗхӗсем – семантика тӗлӗшӗнчен тачӑ ҫыхӑннӑ сӑмах майлашӑвӗсем, вӗсен пӗтӗмӗшле пӗлтерӗшӗ сӑмах майлашӑвне сӑнарлӑ ӑнланса илсен палӑрать.

Фразеологи пӗтӗҫӗвӗсен пӗлтерӗшӗ компонентсен пӗлтерӗшӗнчен килмест пулсан фразеологи пӗрлӗхӗсен

пĕлтерĕшĕ компонентсен пĕлтерĕшĕнчен килет. Фразеологи пĕрлĕхĕсен паллисем:

1) фразеологизмсен сăнарлăхĕ: *сломя голову* «питĕ хăвăрт»;

2) фразеологизм пĕлтерĕшĕн пĕр пайĕ сăлтавланни: *делать из мухи слона* «пысăклатса кала», *грош цена* «ниме те тăмасть»;

3) фразеологизмăн уйрăм компоненчĕсене куçăмлă пĕлтерĕшпе калани: *на скорую руку* «питĕ хăвăрт, тĕплĕн мар», *скрепя сердцем* «ĕçе тăвас килмесĕр пурнăçлани».

Фразеологи пĕрлĕхĕнче тӳрĕ мар пĕлтерĕш метафора пулăмĕпе çыхăннă (*согнуть в бараний рог* «çынна çапса хуçса хăвна парăнтар», *плясать под чужую дудку* «пур енĕпе те кама та пулин пăхăнса тăр»), метонимипе (*поднять бокал* «тост пĕлтер», *пальцем не шевельнуть* «хăвшăн е камшăн та пулин нимĕн те ан ту»), гипербола пулăмĕпе (*за тридевять земель* «питĕ аякра», *стереть в порошок* «тĕп ту», литотăпа (*капля в море* «питĕ сахал», *воробью по колено* «питĕ ăшăх»), танлаштарупа çыхăннă (*как снег на голову* «кĕтмен çĕртен»).

Фразеологи пĕрлешĕвĕнче ирĕклĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем те пулма пултараççĕ. Çак пĕлтерĕш вара мĕнле те пулин сăмахсемпе çыхăнура тăнă чухне кăна палăрать. Сăмахран, *закадычный друг* фразеологи пĕрлешĕвне пăхса тухар. Вăл икĕ сăмахран тăрать. *Друг* сăмах *закадычный* сăмахпа кăна мар, ытти нумай тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе те çыхăнура тăма пултарать. *Закадычный* сăмах вара *друг* сăмахпа кăна юнашар çӳрет. Фразеологи пĕрлешĕвĕсен паллисем:

1) фразеологизмăн пĕлтерĕшĕ сăлтавланни: *сгореть со стыда* «питĕ вăйлă намăслан», *ждать у моря погоды* «хăвăншăн та уçăмсăр япалана кĕт»;

2) фразеологизмăн пĕр компонентне тӳрĕ мар пĕлтерĕшпе калани: *ноль внимания* «пĕр тимлĕхсĕр», *мозолить глаза* «яланах куç умĕнче пулнипе тарăхтарса çитер»;

3) компонентсенчен пĕрне тӳрĕ пĕлтерĕшпе калани: *мрак неизвестности* «ним чухлĕ те паллă мар», *щекотливый вопрос* «шăрпăклă ыйту»;

4) фразеологизмсен сăнарлăхĕ: *кровная месть* «тăвансенчен пĕрне вĕлернĕ çынна вĕлерессипе çыхăннă йăла-йĕрке», *трескучий мороз* «шартлама сивĕ çанталăк».

Фразеологи çаврăнăшĕсем – тытăмĕпе те, калаçура та çирĕп йĕркеленнĕ фразеологи çаврăнăшĕсем, вĕсем семантика тĕлĕшĕнчен ирĕклĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен тăраççĕ. Фразеологи çаврăнăшĕсем фразеологи пĕлтерĕшлĕ сăмахсем çуккипе уйрăлса тăраççĕ: *Любви все возрасты покорны; Волков бояться – в лес не ходить; оптом и в розницу.* Асăннă фразеологизмсене йĕркелекен сăмахсем вырăнне вĕсен синонимĕсем çӳреме пултараймаççĕ.

Кунсăр пуçне хăш-пĕр тĕпчевçĕсем фразеологизмсем шутне çунатлă сăмахсене, ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене, цитатăсене кĕртеççĕ. Çаксене фразеологие кĕртессипе кĕртес марри пирки ученăйсем тĕрлĕрен шухăшлаççĕ. Пĕрисем (С.И. Ожегов, Н.Н. Амосова, А.В. Калинин т.ыт.те) – вĕсене фразеологи тытăмне кĕртмелле мар теççĕ. Теприсем (В.В. Виноградов, Н.М. Шанский т.ыт.) кĕртмелле тесе шутлаççĕ.

Пирĕн шутпа, фразеологизмсем шутне куçăмлă пĕлтерĕшлĕ хăш-пĕр ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем кăна кĕреççĕ пулмалла, теприсенче вара сăмахсем, чĕлхен уйрăм единицисем пулнă май, хăйсен пахалăхне çухатмаççĕ.

***Фразеологизмсене мĕнле пулса кайнине кура ушкăнласси.*** Мĕнле пулса кайнине кура вырăс чĕлхинчи фразеологизмсем икĕ ушкăна уйрăлаççĕ: сĕм авалтан пыраканнисем тата урăх чĕлхесенчен йышăннисем.

Чи малтанах сĕм авалтан пыракан фразеологизмсен çăлкуçĕсене пăхса тухар. Вырăс фразеологизмĕсенчен чылайăшĕ кулленхи пурнăçпа, йăла-йĕркепе, авалхи славянсен ĕненĕвĕсемпе çыхăннă. Тĕслĕхрен, *вывести на чистую воду* «тăрă шыв çине кăлар, айăпа кĕрекене тупса палăрт»; *как в воду опущенный* «пусăрăнчăк кă-

мăллă, салху çын» *прошел сквозь огонь и медные трубы* «нумай тӳснĕ, хура-шур курнă çын çинчен».

Фольклор – вырăс фразеологийĕн пуян çăлкуçĕ. Халăхра çӳрекен юмахсенчен кĕрсе юлнă фразеологизмсем: *сказка про белого бычка* «вĕçĕмсĕр пĕр япала çинчен калани», *при царе Горохе* «тахçан авал», *Патрикеевна* «питĕ чее çын», *Кащей бессмертный* «ырхан, типшĕм хăрушă çын». Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсенчен çакăн пек фразеологизмсем пулса кайнă: *Бабушка гадала, да надвое сказала «ик телейлĕ, те пулать, те пулмасть»; либо дождик, либо снег, либо будет, либо нет* «уçăмсăр хурав»; *Пожалел волк кобылу, оставил хвост да гриву* «ячĕшĕн хĕрхенни».

Ал ăстисен прфессилле калаçăвĕ те вырăс фразелогийĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ çăлкуçĕ шутланать. Тĕслĕхрен, столярсенчен килекен фразеологизмсем: *без сучка без задоринки* «питĕ яка», «яп-яка», *топорная работа* «кăнттам ĕç»; атăçăсенчен: *два сапога – пара* «пĕр пек», *сделаны на одну колоду* «пĕрешкел, пĕр евĕрлĕ», сунарçăсемпе пулăçăсенчен: *сматывать удочки* «васкаса тухса кайни», *закидывать удочку* «мĕн çинчен те пулин асăрханса ыйтса пĕлни», *заметать следы* «мĕн те пулин пытарни»; музыкантсенчен: *играть первую скрипку* «малта пул, пĕрремĕш вырăнта тăни»; морякссенчен: *бросить якорь* «анса лар, пусăрăн», *на всех парусах* «хăвăрт», *сесть на мель* «çав тери йывăр лару-тăрăва лекни».

Вырăс фразеологийĕнче вырăс халăхĕн кулленхи пурнăçĕнчи ĕç-пуçсем сăнланса юлнă, тĕслĕхрен, *заваривать кашу* «чăрмавлă ĕç пуçласа яр», *несолоно хлебавши* «мĕн ĕмĕтленнине кĕтсе илейменни»; вырăс вăййисенчен çакăн пек фразеологизмсем çуралнă: *играть в прятки* «пытан», *водить хоровод* «туслаш».

Çирĕп çыхăнура таракан сăмах майлашăвĕсем чĕлхене илемлĕ литература произведенийĕсенчен те кĕнĕ. Тĕслĕхрен, *вертеться как белка в колесе* «яланах мĕн те пулин ĕçлени». Ку фразеологизм И.Крыловăн «Белка» юптарăвĕнчен кĕрсе юлнă. *Человек в футляре*

«тĕрлĕ çĕнĕлĕхсенчен хăракан именчĕк çын» – А.П. Чехов калавĕн ячĕ.

Йышăннă фразеологизмсем шутне вырăс чĕлхине урăх чĕлхерен кĕнĕ çирĕп сăмах майлашăвĕсем, çунатлă сăмахсем кĕреççĕ. Вĕсене икĕ ушкăна уйăрма пулать: славян чĕлхисенчен йышăннисем тата ытти чĕлхесенчен кĕнисем. Пĕрремĕш ушкăна вырăс чĕлхине кивĕ славян чĕлхинчен кĕнĕ фразеологизмсем йĕркелеççĕ. Нумай чухне вĕсем – библи-евангели тексчĕсенчен илнĕ сăмах çаврăнăшĕсем: *в поте лица* «питĕ нумай (ĕçле)», *запретный плод* «илĕртекен, ăмсантаракан япала», *земля обетованная* «тулăх та телейлĕ вырăн», *камень преткновения* «чăрмав, йывăрлăх сăлтавĕ», *святая святых* «чи хаклă, ĕмĕтленни», *хлеб насущный* «пурăнма кирлĕ япала».

Вырăс фразеологизмĕсенчен чылайăшĕ йышăннă тата урăх чĕлхесенчен калькăласа куçарнă фразеологизмсем шутланаççĕ. Халĕ вĕсене интернационаллă фразеологизмсем теме йышăннă, пуринчен малтан çаксен шутне авалхи грексен мифологийĕнчен илнĕ сăмах çаврăнăшĕсем кĕреççĕ: *ахиллесова пята* «амантма çăмăл вырăн», *гордиев узел* «темиçе тĕрлĕ ĕç-пуç пăтранса кайса пĕр килсе тухни», *дамоклов меч* «ялан хăратса тăракан хăрушлăх» т.ыт.те.

Çавăн пекех Хĕвеланăç Европа чĕлхисенчен тата литературинчен кĕнĕ фразеологизмсем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем шутне ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем тата вĕсен сыпăкĕсем, çунатлă сăмахсем, цитатăсем, терĕшсем кĕреççĕ: *буря в стакане воды* «кирлĕ-кирлĕ мар япалашăн хумханни», *принцесса на горошине* «ачаш, иртĕнчĕк çын», *потерпеть фиаско* «ăнăçсăрлăха чăтса ирттер», *не в своей тарелке* «япăх кăмăллă», *после нас хоть потоп* «пире кăна лайăх пултăр» т.ыт.те.

Йышăннă фразеологизмсенчен чылайăшĕ вырăс чĕлхинче фразеологи калькисем е урăх чĕлхерен сăмахсерен куçарăннă сăмах çаврăнăшĕсем пулса тăраççĕ, хăшĕ-пĕрисемпе вара чĕлхере куçармасăрах усă кураçĕ: латин чĕлхинчен ( terra icognita, alma mater, nota bene т.ыт.те), француз чĕлхинчен (c´est la vie т.ыт.те). Акăлчан

чӗлхинчен ним улӑштармасӑр куҫарса пулса кайнӑ фразеологизмсем: *время деньги, синий чулок, летающая тарелка;* нимӗҫ чӗлхинчен: *соломенная вдова; так вот где собака зарыта;* француз чӗлхинчен *медовый месяц, черный рынок* т.ыт.те.

***Фразеологизмсен пулӑвӗн мелӗсем.*** Фразеологизмсенчен пӗр пайӗ уйрӑм сӑмах никӗсӗ ҫинче йӗркеленет. Чӑннипе каласан, ҫаксем пӗр-пӗр сӑмахӑн пӗлтерӗшне ылмаштараҫҫӗ. Тытӑмӗпе пӗлтерӗшӗ тӗлӗшӗнчен вӗсем е перифраза (тӗслӗхрен, *корабль пустыни* «верблюд», *черное золото* «нефть», *пятый океан* «тӳпе», *мир безмолвия* «океан»), е эвфемизмсем (тӗслӗхрен, *в костюме Адама* «ҫаппа-ҫарамас», *нечистая сила* «шуйттан», *хозяин леса* «упа», *уходить на заслуженный отдых* «пенсие тухни» т.ыт.те).

Теприсем ирӗклӗ сӑмах майлашӑвӗсенчен метафора мелӗпе йӗркеленсе каяҫҫӗ: *плыть по течению* «хавхаланусӑр пуранакан тата ӗҫлесе пыракан, хӑйӗн тавра пулса иртекен ӗҫсене пӑхӑнакан ҫын пирки», *как сыр в масле кататься* «тулӑх пурнӑҫпа пурӑнни», *как маслом по сердцу* «питӗ кӑмӑллӑ, киленӳ кӳрекен»; е метоними мелӗпе: *алые погоны* «суворовецсем», *встречать хлебом и солью* «хапӑл туса йышӑн».

Вырӑс чӗлхинчи фразеологизмсенчен чылайӑшӗ ваттисен сӑмахӗсемпе тата каларӑшсемпе ҫыхӑннӑ. Кун пек чухне ытларах вӗсен пӗр-пӗр сыпӑкне палӑртни тӗп вырӑнта, тӗслӗхрен, *Старого воробья на мякине не проведешь* ваттисен сӑмахӗнчен *старый воробей* («опытлӑ ҫын») фразеологизм пулса кайнӑ; *Собака на сене лежит, сама не ест и скотине не дает* ваттисен сӑмахӗнчен – *собака не сене* («хӑй те усӑ курман, ыттисене те паман ҫын пирки»). Ҫакӑнтах литература произведенийӗсенчи цитатӑсенчен йӗркеленнӗ фразеологизмсене пӑхмалла. Тӗслӗхрен, *легкость в мыслях необыкновенная* (Н.Гоголь) – «шутламасӑр калаҫни»; *слона-то я и не заметил* (И.Крылов) – «усӑсӑр тупа васкавлӑ ӗҫ», *палата номер шесть* (А.Чехов) – «ухмахсен ҫурчӗ», *человек в футляре* (А.Чехов) – «чӗмсӗр, питӗ вӑтанчӑк ҫын».

Ҫӗнӗ фразеологизмсем чӗлхери фразеологизмсенчен те пулса кайма пултараҫҫӗ. Кун пек чухне фразеологизмӑн е пӗлтерӗшӗ, е лексика тытӑмӗ улшӑнать, е тата пӗр фразеологизмах икӗ пӗлтерӗш туянать. Тӗслӗхрен, *слуга покорный* «мӗн те пулин тума килӗшменни», *повернуться лицом* «тимлесе пӑх», *повернуться спиной* «ан пӑх», *кромешная тьма* «питӗ тӗттӗм», *кромешный ад* «чикӗсӗрлӗх».

Фразеологизмсен пӗр пайне урӑх чӗлхерен йышӑннӑ, тӗслӗхрен, *сизифов труд* «вӗҫӗмсӗр, усӑсӑр ӗҫ», *муки тантала* «чӑтма ҫук асаплану», *ариаднина нить* «йывӑр лару-тӑруран тухма пулӑшни».

***Хальхи вырӑс фразеологи аталанӑвӗн тӗп тапхӑрӗсем.*** Фразеологи аталанӑвӗ, лексика аталанӑвӗ пекех, обществӑпа политика пурнӑҫӗпе тачӑ ҫыхӑннӑ. Вырӑс чӗлхин фразеологи системи пуянланма уйрӑмах Аслӑ Октябрь революцийӗ хыҫҫӑн пуҫлать. Хальхи вырӑс чӗлхинчи фразеологи тытӑмӗ икӗ майпа ҫӗнелсе пырать:

1) кӳлепи тата пӗлтерӗшӗ енчен ҫӗнӗ фразеологизмсем пулса кайни;

2) чӗлхери фразеологизмсем урӑх пӗлтӗрӗш йышӑннипе ҫӗнӗ фразеологизмсем пулса кайни.

Ҫакӑнпа пӗрлех чӗлхере фразеологизмсен пӗр пайӗ, сӑмахсем пекех, кивелет, чӗлхери пассивлӑ фразеологизмсен йышне куҫать.

Ҫӗнӗ ӑнлавсем ҫуралнӑ май Ҫӗнӗ Совет ҫӗр-шывӗн истори аталанӑвӗнчи тапхӑрсене кӑтартса паракан сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем йышлӑн пулса пыраҫҫӗ, тӗслӗхрен: *пионерский салют (звено, сбор, линейка, дружина, костер)* т.ыт.те.

Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫи ҫулӗсенче темиҫе сӑмахран тӑракан фразеологизмсем пулса каяҫҫӗ, тӗслӗхрен, *карманная артиллерия, кочующая артиллерия, летающий танк, рельсовая война, закопаться в землю, идти на таран, взять в кольцо, взять в клещи* т.ыт.те. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн ҫӗнӗ фразеологизмсем калаҫу чӗлхинче ҫуралаҫҫӗ, тӗслӗхрен, *всю дорогу* «ялан», *в упор не видеть* «ятар-

ласа курман пек туни», *получить прописку* «тĕпленсе ларни (ăçта та пулин)» т.ыт.те.

Каярах ирĕклĕ сăмах майлашăвĕсенчен çакăн пек çирĕп сăмах майлашăвĕсем пулса кайнă: *миру мир, борцы за мир, стоять на страже мира, холодная война, набрать высоту, небесные братья, космический долгожитель* т.ыт.те.

Фразеологизмсенчен нумайăшĕ професси сăмахĕсене куçăмлă пĕлтерĕшпе калама тытăннăран пулса кайнă, тĕслĕхрен, *испытать на прочность, заложить фундамент* (строительсен калаçăвĕнчен); *взять на буксир* (моряксен калаçăвĕнчен); *спустить на тормозах* (железнодорожниксен калаçăвĕнчен); *бить тревогу, открыть огонь, стоять на посту* (çар çыннисен калаçăвĕнчен) т.ыт.те.

Ирĕклĕ мар çыхăнура таракан сăмах майлашăвĕсенчен хăшĕ-пĕрисем активлă фразеологизмсен йышĕнчен пассивлă ушкăна куçса пыраççĕ. Мĕнрен килет-ши çакă? Сăмахран, тĕн кĕнекин чĕлхипе çыхăннă фразеологизмсене илер. Тĕслĕхрен, *аки лев рыкающий* «пĕр-пĕр хăратакан çын е япала», *почить в бозе* «вилни», *жить не по глаголу* «йĕркене пăхăнмасăр», *не отличить от ижицы аза* «хутпĕлменлĕх», *стоять фертом* «алла пилĕкрен тытса тăни».

Пассивлă фразеологизмсен йышне хальхи вăхăтра усă курма пăрахнă ăнлавсемпе пулăмсене ят паракан фразеологизмсем кĕреççĕ: *великий немой* «сасăсăр кино вăхăчĕ», *суконное рыло* «ахаль çынсем, хресченсем», *березовая каша* «хулăпа çаптарни» т.ыт.те.

Фразеологизм нумай тĕпчевçĕшĕн яланах кăсăклă ыйту шутланнă, çавăнпа пĕрлех фразеологи науки XX ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенче чĕлхе пĕлĕвĕн уйрăм дисциплини пек йĕркеленсе çитнĕ. Фразеологи теорийĕн тĕп шухăшĕсем А.А. Потебня, И.И. Срезневский, А.А. Шахматов тата Ф.Ф. Фортунатов ĕçĕсенче хывăннă. Фразеологи аталанăвне Ш.Балли идейисем витĕм кӳнĕ. Чĕлхе пĕлĕвĕн уйрăм пайĕнче – фразеологире пăхса тухнă çирĕп сăмах пĕрлешĕвĕсене çутатса паракан ыйтусем 20-40-мĕш çулсенчех вĕрентӳпе меслет литературинче Е.Д. Поливанов, С.И. Абакумов, Л.А. Була-

ховский ӗҫӗсенче тӗл пулаҫҫӗ. В.В. Виноградов хӑйӗн ӗҫӗсенче фразеологин тӗп ӑнлавӗсене тишкерсе пӗтӗмлетнӗ, калӑпӑшне тата тӗллевӗсене тупса палӑртнӑ. 50-мӗш ҫулсенче тӗпчевҫӗсем ытларах фразеологизмпа сӑмах тата сӑмах майлашӑвӗ хушшинчи пӗрпеклӗхсемпе уйрӑмлӑхсене ҫутатса паракан ыйтусемпе ӗҫленӗ. 50-мӗш ҫулсен вӗҫӗнчен пуҫласа фразеологи ыйтӑвӗсемпе тӑтӑшах ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ, фразеологи единицисен тытӑмӗпе, пӗлтерӗшӗпе ҫыхӑннӑ ыйтусемпе кӑсӑкланаҫҫӗ (А.И. Смирницкий, О.С. Ахманова). 60-мӗш ҫулсенче фразеологие тӗпчемелли меслетсене туса хатӗрлесси тӗп вырӑн йышӑнать (В.Л. Архангельский, Н.Н. Амосова, В.П. Жуков, А.В. Кунин, М.Т. Тагиев ӗҫӗсем). Фразеологи тытӑмне тӗплӗн пӑхса тухаҫҫӗ (Ю.Ю. Авалиани, А.Д. Райхштейн, Л.И. Ройзенсон тӗпчевӗсем). А.М. Бабкин, А.И. Молотков фразеологизмсене словарьсенче еплерех сӑнласа парассипе ӗҫлеҫҫӗ, М.М. Копыленко, З.Д. Попова ҫӗнӗ тӗпчев меслечӗсем туса хатӗрлеҫҫӗ.

XX ӗмӗрте тухнӑ справочниксенчен ҫаксене палӑртма пулать:

1. М.И. Михельсонӑн (1902-1903) «Русская мысль и речь. Свое и чужое: Опыт русской фразеологии // Сб. образных слов и иносказаний» кӗнеки. Кунта ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсем те, ҫунатлӑ сӑмахсем те пур.

2. С.Максимовӑн «Крылатые слова» кӗнеки (1890, 1955).

3. С.Г. Займовскин «Крылатое слово» кӗнеки (1930).

4. Н.С. Ашукинпа М.Г. Ашукинан «Крылатые слова» кӗнеки (1955).

5. А.И. Молотков редакциленӗ «Фразеологический словарь русского языка» (1978). Кунта тӑватӑ пин ытла фразеологизм.

6. В.П. Жуков. Школьный фразеологический словарь русского языка.

7. В.П. Жуковӑн «Словарь русских поговорок» (1966). Кунта вырӑс чӗлхинчи пине яхӑн ваттисен сӑмахӗпе каларӑшне ӑнлантарса панӑ.

8. «Мифологический словарь» (М.Н. Ботвинник т.ыт., 1965) кĕнекере – çунатлă сăмахсене ăнлантарса паракан пине яхăн статья.

Юлашки çулсенче çĕнĕрен те çĕнĕ словарьсем, брошюрăсемпе монографисем, статьясем тухма тытăнчĕç. Çакă пире фразеологизмсен тĕнчипе тĕплĕнрех паллашма май парать.


Литература

1. *Бабкин А.М.* Русская фразеология: ее развитие и источники. Л.: Наука, 1970.

2. *Березин Ф.М., Головин Б.Н.* Общее языкознание. М.: Просвещение, 1979.

3. *Жуков В.П.* Русская фразеология. М.: Высш. шк., 1986.

4. *Молотков А.И.* Основы фразеологии русского языка. Л.: Наука, 1977.

5. *Степанов Ю.С.* Основы общего языкознания. М.: Просвещение, 1975.

6. *Федоров А.И.* Развитие русской фразеологии в конце XVIII-XIX в. Новосибирск: Наука, 1973.

7. *Фомина Н.Д., Бакина М.А.* Фразеология современного русского языка. М.: Изд-во УДН, 1985.

8. *Чернов М.Ф.* Фразеология современного чувашского языка. Чебоксары, 1985.

9. Языкознание: Большой энциклопедический словарь / Под ред. В.Н. Ярцевой. М.: Большая рос. энцикл., 1998.

## ТУПМАЛЛИ

Кӳртĕм.............................................................................3
I пай. **ЧĔЛХЕ АТАЛАНĂВĔН ТАПХĂРĔСЕМ ТАТА ПĔТĔМĔШЛЕ ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔ**.........................4
1§. Чĕлхе пулса кайни........................................................4
2§. Нацисем пулса кайичченхи чĕлхесем...........................15
3§. Нацисем йĕркеленнĕ тапхăрти чĕлхесем........................22
4§. Чĕлхе аталанăвĕ тата чĕлхе функцийĕ..........................28
5§. Чĕлхе тата пуплев..........................................................34
6§. Чĕлхе системи тата чĕлхе норми....................................38
7§. Чĕлхе политики тата чĕлхе союзĕ..................................47

II пай. **ЧĔЛХЕ ТАТА УНĂН СИСТЕМИ**..............................51
1§. Чĕлхе системи тата чĕлхе системăлăхĕ..........................51
2§. Чĕлхе структурине ӳкерчĕклени (çырса кăтартни)..........................................................................54
3§. Изоморфизм теорийĕ.......................................................60
4§. Чĕлхе механизмĕн теорийĕ тата чĕлхе шайĕсем ăнлав.............................................................................63
III пай. **ЧĔЛХЕН ТĔП ЯРУСĔСЕМ (ШАЙĔСЕМ)**.71
1§. Чĕлхе шайĕсем...............................................................71
2§. Фонетика. Фонологи шайĕ..............................................78
3§. Морфемăпа морфологи шайĕ.........................................86
4§. Семантика шайĕ.............................................................94
5§. Лексикăпа семантика ушкăнĕсем (ЛСУ)..........................104
6§. Ăнлав е пĕлтерĕш уйланкисем........................................112
7§. Синтаксис шайĕ.............................................................117
8§. Çум тата хушма шайсем..................................................121
9§. Морфонологи шайĕ.........................................................121
10§. Сăмах пулăвĕн шайĕ.....................................................128
11§. Фразеологи шайĕ...........................................................136

*Учебно-теоретическое издание*

**СЕРГЕЕВ ВИТАЛИЙ ИВАНОВИЧ**

ОБЩЕЕ ЯЗЫКОЗНАНИЕ

Учебное пособие

Редактор *О.А. Хлебкова*

Подписано в печать 03.09.2007. Формат 60×84/16. Бумага газетная.
Печать оперативная. Гарнитура Times. Усл. печ. л. 8,60.
Уч.-изд. л. 7,60. Тираж 250 экз. Заказ № 677.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

30 =